39-88

А. С. ОТАЧКИН

# ТАВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

IV-мĕш ПАЙĔ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН
ТĂВАТТĂМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ



ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1939

А. С. ОТАЧКИН

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

IV-МĔШ ПАЙĔ

ПУÇЛĂМĔШ ШКУЛĂН
ТĂВАТТĂМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

*Чăваш АССР Халăх Çутĕç*
*Комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

*ТĂВАТТĂМĔШ ИЗДАНИ*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1939

# ЮМАХСЕМ

„Çил ачи“ тата „Пуппа мужик“—ялти ĕççыннисен юмахĕсем. Çак юмахсене ялти ĕççыннисем тĕп авалтанах каласа пурăннă.

Кивĕ ялта мĕн Октябрь революцийĕ пуличченех шкул сахал пулнă, ĕçхалăхĕ валли пичетлесе кăларнă усăллă кĕнекесем пулман. Патша правительстви ĕçхалăхне вĕрентме тăрăшман, вăл вĕсене тĕттĕмлĕхре усранă. Çакăн пирки те ялти ĕççыннисен илемлĕ творчестви—çырулла творчестви пулман. Ялти ĕççыннисем тĕрлĕ юрăсем, ваттисем каланă сăмахсем туса, вĕсене ăруран ăрăва сăмах вĕççĕн каласа парса пынă. Уйрăм кĕнекесем туса кăларман.

Юмахсенче ялти ĕççыннисем хăйсене пусмăрлакан улпутсене, пупсене курайманнине палăртнă. Вăл юмахсенче ялти ĕççыннисен пусмăрçисене, ялти кулаксене çĕнтерес шанчăк палăрнă.

„Чапаев вилĕмĕ“—хальхи юмах. Ку юмахра граждан вăрçи геройĕ Чапаев пурăнăçĕ çинчен каланă.

Юмахра пурăнăçра чăн-чăнах пулнă япаласемпе, чăн пулса иртнĕ ĕçсемпе пĕрлех, шухăшласа хушса хуни, пулман япаланах е пулма пултарайман ĕçех пур туса хуни те курăнать.

---

## Çил ачи.

Амăшĕпе ывăлĕ пурăннă, тет. Ывăлĕ Иван ятлă пулнă. Вăл çамрăк, пĕр вуннăсенче пулнă.

Пĕрре амăшĕ ыраш типĕтрĕ те: „Ачам, Иван, çак ыраша армана кайса авăртса кил-ха“,—терĕ, тет.

Иван армана михĕ çĕклесе кайрĕ; анчах нумай та каяймарĕ, михĕ ăна йывăр пулнă пирки, миххе çĕре лартасшăн пулчĕ, анчах миххи çурăлса кайрĕ те, ырашĕ юхса тухрĕ. Çил ачи пычĕ те ыраша пĕтĕмпех вĕçтерсе кайрĕ. Иван çурăлнă миххине амăшĕ патне илсе таврăнчĕ те мĕн пулни çинчен амăшне каласа пачĕ. Амăшĕ кăна: „Ачам, эсĕ çил ачисен амăшĕ патне кай“,—тет. Ивана çил ачисен амăшĕ патне епле çулпа каймаллине каласа пачĕ. Иван тухса кайрĕ. Çурма çулта унан аппăшĕ пурăннă. Иван унта кĕрсе апатланчĕ. Унтан çил ачисен амăшĕ патне çитрĕ. Çитрĕ те: „Сан ачусем пирĕн юлашки ыраша вĕçтерсе кайрĕç“,—тет.

— Ну, юрать, ачасем килччĕр-ха,—тет çил амăшĕ.

Аслă ывăлĕ килчĕ. Амăшĕ ыйтать:

— Ачам, эсĕ çакăн ырашне вĕçтерсе кайрăн-и?—тет.

— Эй, эпĕ ун пеккипе выляса çÿретĕп-и?—тет ывăлĕ.—Эпĕ вăрмансенче йывăç тымарĕсене кăларса çÿретĕп,—тет.

Унтан вăталăх ывăлĕ килчĕ.

Вăталах ывăлĕнчен ыйтать!

— Ачам, эсĕ çакăн ырашне вĕçтерсе кайрăн-и?—тет.

— Эй, эпĕ ун пеккисемпе выляса çÿретĕп-и? Эпĕ лупас тăррисене сирсе çÿретĕп, арман çунаттисене хуçса çÿретĕп,—тет вăтам ывалĕ.

Унтан кĕçĕн ывăлĕ çитрĕ.

— Ачам, çакăн ырашне эсе вĕçтерсе кайрăн-и?—тесе ыйтать кĕçĕн ывăлĕнчен.

— Ара, ман ыттисене вĕçтерсе кайма вăй çитмест те, çавăн пеккисене кăна вĕçтерсе çÿретĕп çав,—тет кĕçĕн ывăлĕ.

Кăна амăшĕ калать: „Ну, ырашне эсĕ вĕçтерсе янă. Ăна ыраштан мĕн парса ямалла ĕнтĕ?"—тет.

Ывăлĕсем: „Çак кукăле парса яр,—теççĕ.—Анчах вăл кукăле ан касса пăх",—теççĕ Ивана. Иван: „Юрать",—терĕ те тухса кайрĕ çил ачисем патĕнчен. Каç пулсан, Иван çул çинчи аппăшĕ патне керсе выртрĕ. Аппашне калать: „Аппа, эсĕ çак кукăле касса ан пăх, мана касса пăхма каламарĕç",—тет. Аппăшĕ калать: „Юрĕ, юрĕ, касса пăхмăп, çывăр эсĕ, ывăннă пуль",—тет. Иван выртса çывăрсан, аппăшĕ кукăле илет те касса пăхать. Кукăль ăшĕнче ылттăн та кĕмĕл укçасем. Аппăшĕ хавасланса кайрĕ те, ку кукăле илсе, ун вырăнне урăх кукăль хучĕ. Иван тăчĕ те килне утрĕ. Килне çитсен, кукăльне амăшне пачĕ. Амăшĕ калать: „Ах, ачам, пирĕн ыраш пĕр кукăль анчах пулатчĕ-и, кăна калла кайса пар",—тет.

Иван кукальне илчĕ те каллех тухса кайрĕ. Çил ачисем патне çитрĕ те кукăльне калла пачĕ.

Çил амăшĕ ыйтать: „Ачасем, мĕн парса ярас кăна?"—тет.

— Парса ярас çак качакана,—теççĕ лешсем. Качакана парса ячĕç Ивана. Иван каллех аппăшĕ патне кĕрсе выртрĕ.

— Аппа, эсĕ çак качакана—тула тух, качака, тесе ан кала, калама хушмарĕç,—тет аппăшне.

— Юрĕ, выртса çывар, каламăп,—тет аппăшĕ. Иван çывăрсан, аппăшĕ качака патне тухрĕ те: „Тула тух, качака, тула тух",—терĕ. Качака акă шăнкăртаттара пуçларĕ укçасем: ылттăн та кĕмĕл. Аппăшĕ çак качака вырăнне хăйĕн качакине пырса кăкарчĕ, лешне пытарчĕ. Иван тăчĕ те качакана килне илсе кайрĕ. Амăшĕ калать:

— Эх, ачам, хамăрăн çиме çук, качакана епле тăрантарăпăр,—тет.—Калла илсе кайса пар ăна,—те..

Иван качакана çавăтрĕ те кайрĕ калла. Çил амăшне пачĕ качакине: „Анне вăрçать, качакана мар, хамăра çиме те çăкăр çук",—тет.

— Ну, мĕн парса ярас кăна?—теççĕ лешсем. Аслă ывăлĕ калать: „Парса ярас çав чукмара",—тет. „Киле çитмесĕр—чыш, чукмар, чыш, тесе ан кала",—теççĕ Ивана. Иван: Юрать,—те-

рĕ те кайрĕ, чукмара çĕклесе. Каллех аппăшĕ патне çитрĕ те аппăшне калать: „Аппа, çак чукмара: чыш, чукмар, чыш, тесе ан кала, калама хушмарĕç“,—тет. Аппăшĕ: „Юрать, çывăрах, ачам, çывăрах“,—тет. Иван çывăрсан, аппăшĕ тухрĕ те: „Чыш, чукмар, чыш“,—терĕ. Эх, чукмар кăна хĕне пуçларĕ: ĕнсерен те парать, пуçран та парать!

Аппăше çухăрать кăна: „Иван, тархасшан, чар! Качакуна та парăп, кукльуна та парăп“,—тет. Иван тухрĕ те: „Чарăн, чукмар“,—терĕ. Чукмар хĕнеме чарăнчĕ. Аппăше Ивана качакине те пачĕ, куклине те пачĕ.

Амăшĕ калать: „Ах, ачам, каллех çав качакана илсе килтĕн“,—тет.

— „Анне, ку вăл качака мар. Ку качака ылттан та кĕмĕл парать“,—тет ывăлĕ. Амăшĕ хавасланса кайрĕ. Иван калать: „Анне, эпĕ капла сасартăк пуйсан: варласа пуйнă, тесе калĕç,—тет.— Эпĕ пуп патне тарçа кĕрем“,—тет.

Хайхи Иван чăнах та пуп патне тарçа кĕчĕ. Хăй пуп патĕнче пурăнать, амăшĕ килте. Пĕрре çапла пупăн тепĕр пуп патне сăра ĕçме каймалла пулчĕ. Пуп калать Ивана: „Алăксене лайăх тирпейлесе хур“, - тет. Иван, пуп тухса кайсан, пӳртĕнчи алăксене пурне те каларать те кăмака çине тирпейлесе хурать. Хăй кăмака çинчи алаксем çине хапарса выртать: сыхласа выртать ĕнтĕ алăксене. Пупĕ сăра ĕçсе килчĕ те: „Ара, эс, Иван, мĕн ĕçлетĕн?“—тет.—„Эпĕ алăксене тирпейлесе хутăм, халĕ сыхласа выртатăп“,—тет Иван.

— Ну, Иван, алăксене каялла ларт,—тет пупĕ. Иван сиксе анчĕ те, эх, алаксене каялла ларта пуçларĕ. Алăксене лартса пĕтерсен, пупĕ калать Ивана: „Ĕнтĕ, Иван, сурăх пус-ха, пĕр иккĕшне, какай кирлĕ“,—тет.

Иван тухрĕ те вуник сурăхне те пусса пăрахрĕ. Ку мĕнле час кĕреймерĕ тесе, пупĕ тухса пăхать. Пуп питĕ тĕлĕнсе кайрĕ. „Мĕн турăн эсĕ?“—тет.

— Ара, эсĕ ху каларăн вĕт ун чухлĕ пусма?—тет Иванĕ.

— Ну, юрĕ эппин. Часрах эсĕ кусене тирпейлесе хур,—тет пупĕ. Иван тирпейлесе хурса пĕтерчĕ.

Пуппа арăмĕ шутлаççĕ: „Мĕнле вĕлерес кана?“—теççĕ.

— Ку пире тĕп тăвать вĕт,—тет пупĕ. Арамĕ калать: „Ăна хăйăр илсе килме хушас, ăна унта пурĕпĕрех кашкарсем пĕтереççĕ“, —тет.

Иван пĕр лав хăйăр тиерĕ те лашине çавăрса уттарчĕ килнелле. Çул çинче пынă чухне çывăрса кайрĕ. Тăрса пăхать те: „Лаша мĕнле чарăнна ку?“—тет. Мала пăхать, малта лашине пĕр кашкăр çисе тарать. Чукмара туртса кăларчĕ те, кашкăр çине тĕллесе: „Чыш, чукмар, чыш!“—терĕ. Чукмар çитрĕ те кашкăра ăçтан кирлĕ унтан пара пуçларĕ.

Кашкăр: „Тархасшăн, Иван, чукмара чар; çак лаша вырăнне киле çитиччен хам туртса пырăп“,—тет. Иван килĕшрĕ. Кӳлсе янă кашкăр тĕпĕртеттерсе кăна пырать. Иван пуп патне çитрĕ те: „Уç хапхуна“,—терĕ. Пуп хапха уçма тухрĕ те: „Ара, пирĕн лаша капла марччĕ-çке, ку пĕчĕккĕ те сарăрах“,—тет. Хапхине уçрĕ те кӳртрĕ карташне.

— Ну, ăςта хупас ман ку пĕчĕк ăйăра?—тесе ыйтать Иван.

Пуп калать: „Хуп çав çитерекен ăйăр патне",—тет.

Ку кашкăра витене ăйăр патне хупса хучĕ. Ирхине тĕртеççĕ-тĕртеççĕ алăкне,—уçăлмасть. Аран ломсемпе, пуртăсемпе çĕмĕрсе уçса пăрахрĕç. Пăхаççĕ: витере лаша шăммисем анчах. Кашкăрĕ алăка уçса янă-яманах тухса тарчĕ. Иванĕ: „Чыш, чукмар!" тесе те калаймарĕ.

Ну, пуппа арăмĕ каллех шухăша кайрĕç. Пупĕ калать: „Эпир ку Ивана вĕлерейместпĕр, давай, ку çурта пăрахса, хамăр тарар,—тет.—Эсĕ ыран пĕр кăмака сухари ту та, тарăпăр",—тет.

Иван çак пуппа арамĕ калаçнине йăлтах илтет.

Тепĕр кунне пуп арăмĕ сухари турĕ. Каç пулсан, ку сухарине икĕ миххе тултарчĕç. Хăйсем тумланчĕç, сухарисене алăк патне лартрĕç. Иван çак алăк патĕнчех выртать. Пупĕпе арăмĕ, темĕншĕн ĕнтĕ сухарисене лартса, пÿлĕме кĕрсе кайрĕç. Иван тăчĕ те пĕр михĕ сухарине хăйĕн вырăнĕ айне силлерĕ. Хăй михĕ ăшне кĕрсе ларчĕ. Пуппа арăмĕ пычĕç те, михĕсене часрах çĕклесе, тухса кайрĕç. Тарчĕç пулать ĕнтĕ. Ялтан тухсан, чылай кайсассăн, ку Иван михĕре: „Ан кайăр-ха, сывлăш тухмасть!.."—тесе кăшкăра пуçларĕ. „Ах, Иван килет!"—тесе чупаççĕ пуппа арăмĕ.

Иван татах кăшкăрать.

Кайсан-кайсан, Иван мĕнпур пек вăйĕпе кăшкăрса ячĕ. Хыттăн кăшкăрса ярсан, пупĕсем михĕсене лашт! пăрахрĕç те хăйсем кăшт кăна йăванса каймарĕç. Иван михĕрен сиксе тухрĕ.

Пупĕ калать: „Çапах санран тарса пулмарĕ",—тет.

Çĕрле пулчĕ. Кусем пĕр çыран хĕррине çывăрма выртрĕç. Ивана вырттарчĕç тепĕр çыран хĕррине. Пупĕпе арăмĕ çывăрса кайсан, Иван вĕсене çырана тĕкрĕ ячĕ,—тет. Вара килне таврăнчĕ. Амăшне пуп çуртне илсе пычĕ, халĕ те унта аван пурăнаççĕ.

**ЫЙТУСЕМ.**

1. Иван чухăн çын пулни мĕнрен курăнать?
2. Юмахра калани хăшĕ чăн пулма пултарнине, хăшĕ чăн пулма пултарманнине тавçăрса илĕр.
3. Иван аппăшĕ мĕнле тата мĕншĕн ача хăтланнине ăнланса илĕр.

**ПЛАНПА ĔÇЛЕССИ.**

Юмахăн пайĕсем:

1. Иван ыраш авăртма кайни.
2. Çил ачисем патĕнчен кукăль илсе килни.
3. Качака илсе килни.
4. Чукмар илсе килни.
5. Пуп патĕнче тарçăра ĕçлени.
6. Хăйăр турттарса килни.
7. Пуппа арăмĕ хăнана кайни.
8. Вĕсем килĕнчен тухса тарни.
9. Иван пуппа арăмне çырана тĕксе яни.
10. Пуп çуртне йышăнни.

Ку юмахăн вакă пайĕсене пĕрлештерсе, шултăра пайсем туса çырăр. Мĕнле шултăра пайсем тума пулать?

# Пуппа мужик.

Пуранна, тет, пĕр пуп. Тарçă тытнă та килне илсе пынă, тет.

— Ну, тарçă, лайăх ĕçле, лайăх ĕçлесен—ахаль тумастăп,— тенĕ вăл.

Тарçă пĕр эрне пек пурăнсан, утă çулмалли вăхăт çитрĕ.

— Ачам,—тет пуп тарçине,—турă пулăшнипе чипер выртса çывăрар та ыран ирпе ирех утă çулма каяр,—тет.

— Юрать, юрать, пуп атте,—тет тарçи.

Хай кусем ире кĕтсе илчĕç. Ирех тăчĕç те, пупĕ майрине калать:

— Майрам, пире ирхи апат çитер-ха, эпир улăха утă çулма каятпăр,—тет. Пуп майри сĕтел çине апат илсе пырса лартрĕ. Пупĕпе тарçи кĕрсе ларчĕç те чылайччен çисе ларчĕç. Пупĕ тарçине калать:

— Ларнă-ларнах, кăнтăрлахи апат та çиер, вара канмасăр каçалла сулăначченех çулар,—тет.

— Эсир каланă пек пултăр, пуп атте, çисен те юрать,—тет тарçи.

— Кăнтăр апачĕ çитер, майрам,—терĕ пупĕ майрине.

Майри кăнтăрлахи апата та илсе пырса лартрĕ. Пупĕпе тарçи пĕрер кашăк, тепрер кашăк сыпрĕç те тăранчĕç.

Пупĕ тарçине калать: „Ларнă-ларнах, каçалахи апатне те çиер, вара каçхи апатченех çулăпăр",—тет.

— Эсир каланă пек пултăр, пуп атте, каçалахи апат-тăк, каçалахи апат çиер,—тет тарçи. Пуп майри каçалахи апат та лартса пачĕ. Вĕсем каллех пĕрер кашăк сыпрĕç те тăранчĕç.

— Пурĕпĕр, ларнă-ларнах, тарçăм,—тет пупĕ,—каçхи апата та çиер, улăхра çĕр выртатпăр та ыран ирех çулма тытăнатпăр,—тет.

— Юрать, пуп атте,—тет тарçи.

Пуп майри каçхи апатне те илсе пырса лартрĕ. Вĕсем пĕрерикшер кашăк сыпрĕç те сĕтел хушшинчен тухрĕç.

Тарçи хăй аçамне илчĕ те тухса кайма хатĕрленчĕ.

— Ăçта каятăн эсĕ?—тет пупĕ.

— Мĕнле ăçта? Хăвăрах пĕлетĕр, пуп атте, каçхи апат çисен, кам ĕçлет? Каçхи апат çисен, çывăрма выртаççĕ,—тет.

Лупасайне кайрĕ те тепĕр тул çутăличченех çывăрчĕ.

Çавăнтан кайран вара пупĕ тарçине нихăçан та, пĕрре ларса, ирхи, кăнтăрлахи, каçалахи тата каçхи апат çитерми пулчĕ, тет.

ЫЙТУСЕМ.

1. Пуп „выçă кусĕ" ăçтан, мĕнрен палăрать?
2. Тарçине юмахра мĕнле кăтартнă?
3. Выçă куçлă пупсем çинчен юмахсем камсем шухăшласа кăларнă. Юмахĕ тăрăх ăна тавçăрса калама пулать-и?

# Чапаев вилĕмĕ.

(Вырăс халăх юмахĕ).[1]

Таçти çĕрте, таçти патшалăхра, тĕрĕссипе каласан, шăп та шай эпир пурăнакан çĕршыврах, пурăннă, тет, пĕр хресчен. Ăна Иван тесе чĕннĕ, тет. Унăн виçĕ ывăл пулнă. Аслă ывăлĕ ашшĕ пекех Иван ятлă пулнă, вăталăхĕ Петĕр, кĕçĕнни—Василий.

Пурăннă вĕсем питĕ начар, тискер кайăк тытмалли хатĕрсем те, пулă тытма каймалли кимĕсем те пулман вĕсен.

Çапла вара çак Иван ятлă хресчен пурăннă-пурăннă та чухăнлăхран тухаймасăрах вилсе кайнă.

Кунăн арăмĕ ачисемпе тăлăха тăрса юлчĕ. Ачисем çитĕнсе çитсен, вăрçă сиксе тухрĕ. Аслă ывăлĕсене вăрçа илсе кайрĕç, амăшĕ патне кĕçĕн ывăлĕ Василий кăна тăрса юлчĕ. Пурăнсан-пурăнсан, кăна та вăрçа кайма черет çитрĕ. Ун чухне пурне те йĕркипех илсе пынă. Василий амăшĕпе сывпуллашса уйăралчĕ те вăрçа тухса кайрĕ. Мĕскĕн амăшĕ пĕр пĕччнех тăрса юлчĕ.

Акă пырать Василий пĕр ялпала. Ку ялтан инçетрех мар унăн мăнаккăшĕ пурăннă. Василий шутлать:

— Давай-ха мăнакка патне кĕрсе сывпуллашса тухам, тен вăрçăран таврăнаймăп та,—тет.

Кĕчĕ.

— Сывă-и, мăнакка?

— Сывах-ха, сывах, ывăлăм. Ăçта каятăн?

— Вăрçа каятăп-ха, мăнаккам. Аслă пиччемсем тахçанах çапăçаççĕ ĕнтĕ, ну манăн та кайса çапăçас пулать.

Мăнаккăшĕ кăна хирĕç çапла калать:

— Итле-ха, ывăлăм,—тет.—Эпĕ сана пĕр çĕрĕ парăп. Вăл çĕрĕ ман упăшкамранах юлнăскер. Вăл ăна туркă вăрçинчен илсе килчĕ. Вăл çĕррĕн çав тери пысăк асамлă вăй пур. Ăна тăхăнсан, сана ни пуля тивмест, ни хĕç витмест. Анчах та çĕррĕн вăйĕ типĕ çĕрте чухне анчах хăтарать, шывра вăл самаях чакать, çакна лайăх асту,—тет.

Василий мăнаккăшне çĕрĕ панăшăн тавтурĕ те, унпала уйăрălса, малалла тухса утрĕ. Акă çитрĕ вăл призыва. Унтан çара илсе кайрĕç. Çитрĕ те вăрçа ĕçне вĕренме тытăнчĕ. Çав тери хăвăрт вĕренсе çитрĕ вăл, çав тери вăйлă та ăслă салтак пулса тăчĕ, пĕр самахпа каласан—тӳрех вăрçа тухса кайрĕ. Вăрçăра кăна чăнах таниепле пуля та тивеймест.

Виçĕ çул пурăнчĕ Василий Иванович вăрçăра. Унтан, Совет влаçĕ пулса тăрсан, килне таврăнчĕ. Хăйсĕр пуçне унăн пĕр пиччĕшĕ те таврăнайман иккен, иккĕшĕ те вилсе юлнă. Василий Иванович килĕнче пурăнкаларĕ-пурăнкаларĕ те авланма шут тытрĕ. Хăйсен ялĕнчи пĕр чухăн хĕрне качча илчĕ, туй туса пачĕ. Тытăнчĕ Василий Иванович арăмĕпе пурăнмашкăн. Пурăнсан-пурăнсан, пĕр çултан-и, икĕ çултан-и унта, вĕсен икĕ ача çуралчĕ.

[1] Карели АССР-че, Лоухский районра, „Красный рыбак" колхозри 54 çулхи колхозник Матвей Михайлович Коргуевран çырса илнĕ.

Пĕрре çапла Василий Иванович хыпар илет: генералсем, Совет влаçне пĕтерсе лартса, хăйсен влаçне туса хума шут тытнă тенине. Тарăхсах кăять Василий Иванович генералсем çине, вĕсем пĕтĕм ĕçхалăхне пĕтерсе тăкма шутланăшăн. Шутларĕ-шутларĕ те, çакăн пек шут тытрĕ: „Тата тепĕр хут вăрçа каятăп, хамăн çĕршывăма пĕтерме памастăпах!“

Унтан амăшне каларĕ:

— Ну, хаклă аннем, эпĕ Совет влаçне сыхлама тухса каятăп,—терĕ.

Кăна хирĕç амăшĕ куççуль витĕр çапла тавăрса калать:

— Виçĕ ывăлччĕ манăн, эсĕ кăна тарса юлтăн. Иккĕмĕш хут вăрçа тухса каятăн пулсан, эсĕ те пуçна çухатан,—тет.

— Çук, анне, эпĕ каятăпах, — тет ывăлĕ. — Вилес-тăвас пулсан, ман пĕчĕк ачамсене ан пăрах,—тет.

Амăшĕпе тата арăмĕпе уйăрăлчĕ те хай Василий, утне йĕнерлесе утланса, Хĕрлĕ Çара тухса веçтерчĕ.

Çитрĕ совет çарĕсем патне, хĕрлĕ командирсем патне. Çĕлĕкне хывса, пуçне тайрĕ те çапла каларĕ:

— Сывă-и, совет хĕрлĕ командирĕсем? Эпĕ те Хĕрлĕ Çарта пулас тетĕп, хамăн тăван çĕршывăма пулăшас тетĕп, ĕçхалăхне ирĕке кăлармашкăн Колчакпа Деникина хăваласа ярас тетĕп.

Командирсем кăна калаççе:

— Сывă-ха, паттăр яш! А кам пулатăн-ха эсĕ? Хушамату мĕнле санăн?—тесе ыйтаççĕ унтан.

— Эпĕ çав-çав ял çынни пулатăп, мана Василий Иванович тесе чĕнеççĕ, а хушаматăм—Чапаев.

Чапаева çавăнтах Хĕрлĕ Çар командирĕ туса хучĕç.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, юнлă çапаçу çитсе перĕнчĕ. Чапаев учĕ çине сиксе ларчĕ те пĕрех кăна ыткăнчĕ тăшмансем çине. Çавапа çулна пек тăкма тытăнчĕ вăл тăшмансене. Колчаксене те çулать, деникинсене те ăшалантарать, ултă сехет хушши пĕр канмасăр турарĕ. Хĕçĕпе те касать, çăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕтĕм хир тăшмансен виллисемпе тулчĕ. Колчак ниепле те чăтса тăраймарĕ, хăйĕн юлашки салтакĕсемпе аякалла пăрахса тарчĕ.

Хĕрлĕ Çар салтакĕсем Чапаев çинчен чап сарса ячĕç:

— Вот ку командир! Эпир Чапаевпа ăçта тенĕ унта каятпăр.

Пĕр эрне те иртеймерĕ. Колчак икĕ хут ытларах çар пухрĕ те каллех Хĕрлĕ Çара хирĕç тухрĕ. Сиксе ларчĕ Чапаев каллех учĕ çине; сиксе ларчĕ те тытăнчĕ тăшмансене хаяррăн турамашкăн: хĕçĕпе те касать, çăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕр талăк хушши çапла турарĕ вăл тăшмансене. Колчак çарне çуррине ытла тураса такрĕç, хăшне-пĕрне тыткăна илчĕç. Колчак хăй аран-аран тарса хăталчĕ.

Çапăçу хыççăн кăштах канчĕç, çирĕç, ĕçрĕç. Унтан Чапаев Фрунзе юлташ патне кайрĕ.

Фрунзе калать кăна:

— Ну, Чапаев, çамрăк герой! Колчака тĕппипех çапса салатма сана халь пĕтĕм çара паратăп. Колчак каллех çар пухма тытăннă,—тет.

Акӑ ҫитрӗ Чапаев хӑйӗн ҫарӗпе Белая шыв хӗррине. Вырнаҫтарчӗ хӑйӗн ҫарне пӗр ял ҫывӑхне; анчах колчаковецсем ӑҫта тӑраҫҫӗ, ӑна пӗлмест. Мӗн пулсан, мӗн килсен те, пӗлесех пулать: ӑҫта Колчакӑн штабӗ? Тӑчӗ те хайхи Чапаев ҫапла калать хӑйӗн ҫарне:

— А ну, ачасем, кам пырать манпала пӗрле тӑшман ӑҫта тӑнине йӗрлесе тупма?—тет.

Ну, паллах, унпа пӗрле кайма килӗшекенсем нумай тупӑнчӗҫ. Анчах вӑл пӗр аллӑ ҫын, е ҫӗр ҫын-и унта, суйласа илчӗ те, ҫула тухса кайрӗ. Кунӗ каҫаланах суланнӑ пулнӑ иккен. Ҫул ҫинче кусем пӗр хӗрарӑма хирӗҫ пулаҫҫӗ.

— Эй, инке, ӑҫта каятӑн?

— Эпӗ хам упӑшкама курма Хӗрлӗ Ҫара каятӑп, командир юлташ. Анчах ҫулран аташса кайрӑм-ха акӑ, тата хырӑм та выҫӑ. Иккӗмӗш талӑк утатӑп ӗнтӗ, хам ӑҫта ҫитсе тухассине хам та пӗлместӗп.

— Ну, атя эппин пирӗнпеле, эпир сана ҫитерӗпӗр.

Чапаев ҫав хӗрарӑма хӑйсемпеле пӗрле илсе, тӑраничченех ҫитерме хушрӗ. Илчӗҫ хай хӗрарӑма хӑйсемпе пӗрле. Ҫитерчӗҫ, ӗҫтерчӗҫ. Ку хӗрарӑм поляк ҫынни пулнӑ иккен, ӑна Колчак шпион туса янӑ-мӗн. Анчах та Чапаев ун ҫинчен нимӗн те пӗлмен.

Ҫитрӗҫ кусем пӗр яла. Ялӗ шӑп та шай Белая шыв хӗрринче ларать. Мужиксем пӗтӗмпех каласа пачӗҫ колчаковецсем ӑҫта тӑни ҫинчен: инҫех те мар вӑрман хыҫӗнче, пӗр вунӑ ҫухрӑмра иккен. Василий Иванович хӑйӗн салтакӗсене калать:

— Ҫапла тӑватпӑр, ачсемӗр; раз каҫ пулса ҫитрӗ-тӗк, кунтах ҫывӑрса ҫӗр каҫӑпӑр, а ыран ирхине хамӑр ҫара илсе килме каятпӑр,—тет.

Тӑратса тухрӗ Чапаев постсем, хӑй канма выртрӗ. Пурте ҫывӑрса кайрӗҫ, Василий Иванович хӑй те ҫывӑрса кайрӗ, пӗртен-пӗр хурал кӑна тӑрса юлчӗ.

А поляк хӗрарӑмӗ ҫывӑрмасть, кӗтсе тӑрать. Чапаев ҫывӑрса каясса кӗтсе илчӗ те вӗҫтерчӗ хӑвӑртрах Колчак патне.— Чупса ҫитрӗ те Чапаев ӑҫта тӑни ҫинчен, ун тӗп ҫарӗ хӑйпеле пӗрле марри ҫинчен каласа пачӗ. Колчак, урӑм-сурӑм савӑнса кайса, хӑйӗн генералӗсене ҫавӑнтах приказ пачӗ: „Тытса килӗр Чапаева, чӗррӗн тытма май килмесен, виллине те пулин илсе килӗр!“—тет.

Пухрӗҫ генералсем хӑйсен ҫарӗсене. Пухрӗҫ те виҫӗ енчен ҫавӑрса илчӗҫ Чапаева. Постри салтаксене ҫӗрле пӗтӗмпе вӗлерсе пӗтерчӗҫ, унтан шӑп Чапаев ӑшӑ ыйӑхпа ҫывӑрнӑ вӑхӑтра тӳрех вӗсем ҫине тапӑнчӗҫ.

Сиксе тӑчӗ Чапаев, анчах хӑйне пур енчен те тӑшмансем хупӑрласа илнӗ.

— Тӑрӑр, юлташсем, хӑвӑртрах! Ултав!—тесе кӑшкӑрса ячӗ вӑл.

Ну, мӗн каласси пур ӗнтӗ, вӗсем унта нумай-нумай пӗр ҫӗр ҫын пулнӑ пулӗ те, а колчаковецсем темиҫе пин ҫын вӗт. Хӗрли-

сем пӳртсенчен пăшалсемпе хĕрӳллĕн переççĕ, хăйсем патне ямаççĕ. Ак патрон пачах та сахал тăрса юлчĕ вĕсен. Вара Чапаев çапла приказ пачĕ:

— Чупăр, ачасем, Белая шыв хĕррине, кунта пурĕпĕр шăтарса тухайрас çук эпир. Белая шыв урлă каçсан, унта вара хамăр çар та инçе мар, вĕсемпе пĕрлешĕпĕр те каллех Колчак çине сиксе ларăпăр.

Тытăнчĕç чапаевецсем юхан шыв урлă ишсе каçмашкăн. Курать Колчак—хĕрлисем шыва пыра-пыра сикеççĕ. Курать те кăшкăрать хăйĕн генералĕсене:

— Ан каçарăр вĕсене шыв урлă! Перĕр мĕнпур вăйпала! Чапаева алран вĕçертсен, вăл пире пурне те чĕррĕн хăварас çук!

Колчаковецсем пулемет çавăрса лартрĕç те тытăнчĕç шатăрталтармашкăн. Нумайччен ишрĕ Василий Иванович, анчах та ун аллине пуля тивсе амантрĕ (шывра леш асамлă çĕррин вăйĕ пĕтрĕ ĕнтĕ). Пурĕпĕр Чапаев ишме чарăнмасть. Йĕри-таврах пульăсем шăхăраççĕ, хĕрлисене темĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтерчĕç. Колчак шавах кăшкăрса тăрать:

— Чапаева персе вĕлерĕр, леш енне ишсе каçма ан парăр. Пурте ун çине тĕллесе перĕр.

Акă тата тепĕр пуля пырса тиврĕ Чапаева, пуçĕ шыва путма пуçларĕ унăн. Çапла вара Василий Чапаев пĕтĕмпех путса çухалчĕ. Çыран хĕррине çитесси те нумай юлманччĕ, хĕрлисен пулăшăвĕ те çитсе ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ, анчах пурĕпĕр çăлăнса юлаймарĕ мĕскĕн...

Çитсе çапрĕç хĕрлисем колчаковецсемпе деникинецсем çине, вĕсене пуçĕпелех аркатса тăкрĕç, совет çĕрĕ çинчен хăваласа ячĕç тăшмансене.

Чапа тухрĕ Василий Иванович Чапаевăн ячĕ. Ăна пирĕн çĕр-шывра пур çĕрте те хисеплеççĕ.

# К. В. ИВАНОВ

*(1890—1915)*



Константин Васильевич Иванов—чăвашсен революцичченхи чаплă, паллă поэчĕ. Вăл ĕлĕкхи Ĕпхӳ (Уфа) кĕпернинче, хальхи Башкирия республикинче, Белебей кантонĕнче, Слакпуç ятлă ялта 1890-мĕш çулта май уйăхĕн 21-мĕшĕнче çуралнă.

Иванов хăйсен ялĕнчи шкултан вĕренсе тухсан, Чĕмпĕрти (Ульяновск) чăваш шкулне вĕренме кайса кĕнĕ.

Çав шкулран вăл вĕренсе тухайман. Ăна унтан 1905-мĕш çулта шкулти йĕркесене хирĕç пыракансен забастовкине хутшăннăшăн кăларса янă.

Ивановăн чи паллă произведенийĕ—„Нарспи“ ятлă поэма. „Силпи ялĕнче“ тата „Сарă хĕр“—„Нарспи“ поэмаран илнĕ сыпăксем.

## Силпи ялĕнче.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
юр ирĕлчĕ васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура,
юрĕ кайса пĕтнĕрен,
тухать курăк çăп-çара,
хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ хаяр хĕл иртет,
каять йĕрсе хурланса.
Сивĕ куççульпе йĕрет,
иртнĕ куншăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Хĕл куççулĕ шавласа
юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
чупса çӳрет урамра.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.
Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать,
çеçен хир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
ырă шăрши сарăлать.
Çӳлте, пелĕт айĕнче,
тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
путек сурăх сиккелет.
Хай кĕтĕвĕ патĕнче
ача шăхличĕ калать,
хырăмĕ пит выçнипе
Силпи еннелле пăхать.

# Сарă хĕр.

Ешĕл курăк хушшинче
сап-сарă чечек ÿсет.
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ÿсет.
Пичĕ-куçĕ пит хÿхĕм,
хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
икĕ хура шăрçа пек.
Явăнаççĕ хыçалта
çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Хĕвел анса ларсанах,
питне çăвать, шăлăнать.
Вăйя тухма шĕлкеме
кăкăрĕ çине çакать,
шăнкăр-шăнкăр теветне
хулпуççи урла ярать.
Хĕрлĕ пурçăн тутăрне
хĕрле çаварса çыхать.

Вăйăсенче ун сасси
кайăк сасси еверлĕ.
Ахăлтатса кулнă чух,
çирĕп çын ку темелле;
вăйă саланиччченех
савăнтарать сассипе.
Ирех тарать, тумланать;
е пурçăн çип илет те
юрла-юрла тĕр тăвать,
е çĕлеме ларать те,
çĕвви шăрçа пек пулать.
Сÿс хÿреллĕ хурçă йытă
пĕр кĕрет те пĕр тухать.
Е пир тĕртме ларать те
вылянтарать ăсине;
е хултăрчă тытать те
çипне тиет çĕррине.

**СЛОВАРЬ.**

Тевет—хулпуççи урлă çакакан мăя.

ХĂНĂХТАРУСЕМ.

**1-мĕш ĕç.** Юр ирĕлчĕ васкаса. Сивĕ хаяр хĕл иртет, каять **йĕрсе** хурланса.

Паллă тунă сăмахсем пĕр япаларан (çынтан) тепĕр япалана куçнă **ăнланусем** е чĕрĕ сăнлăха кăтартакан сăмахсем.

Сăвăра ун пек куçнă ăнланусене е чĕрĕ сăнлăхлă вырăнсене **кăтартăр**, çырса илĕр.

**2-мĕш ĕç.** Илемлетекен сăмахсене кăтартса çырса хурăр.

# И. А. КРЫЛОВ

*(1768—1844)*



Иван Андреевич Крылов 1768-мĕш ҫулта пуян мар дворян ҫемьинче ҫуралнă. Ашшĕ унăн офицер службинче пурăннă, унтан пăрахса тухсан, вак чиновник вырăнĕнче ĕҫленĕ. Ашшĕ вилсен, Крыловăн ҫемьи питĕ нушаланса пурăннă. Пулас юптаруҫан, Крыловăн, 10 ҫула ҫитнĕ-ҫитменех, переписчик ĕҫĕпе ĕҫлесе укҫа тупмалла пулнă. 15 ҫула ҫитсенех, вăл Питĕре ĕҫе кĕнĕ. Вăл шкулта вĕренмен. Чи пирвайхи произведенине вăл хăй 15 ҫулта чухне ҫырнă.

Хăй ҫамрăк чухне ҫырнă произведенисенче вăл дворянсен обществине тăрăхланă.

Ытти чылай писательсене хĕсĕрленĕ пекех, полици Крылова та хĕсĕрленĕ. Ҫавăн пирки пĕр вăхăтра вăл ҫырма та чарăннă.

1806-мĕш ҫултанпа Крылов паллă юптаруҫă пулса каять. Хăйĕн юптарса ҫырнă сăввисенче Крылов этемĕн ҫитменлĕхĕсене, лайăх мар енĕсене тăрăхласа ҫырнă. Выҫкуҫсенчен, йăпăлтисенчен, мухтанчăксенчен, суякансенчен, инкекрен хăтаракана тавтума пĕлмен ҫынсенчен тăрăхласа кулнă.

Крылов хăйĕн ĕмĕрĕнче 200 ытла юптаруллă сăвă ҫырнă. Вĕсенчен чылайĕшне пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Ҫак кĕнекере эпир Крылов ҫырнă „Хресченпе тарҫи“, „Квартет“ тата „Улакурапа Тилĕ“ юптарусене пичетлетпĕр.

## Хресченпе тарҫи.

Пĕр ват хресчен хăй тарҫипе
утта кайса, каҫ пулттипе
ялне килнелле утнă.
Вăрманпа иртсе пынă чух
шăп упана тĕл пулнă.
Хресчен кăшкăрса яриччен
упи сиксе те ларнă.
Ҫынна йăвантарса ҫавăркаланă, хуҫнă,
ăҫтан ҫиме пуҫлассине кăна шутласси юлнă.

Старикĕн вилĕм çывхарать.
Хайхи тарçине тархаслать:
— „Тăван Степан, вилме ан пар,
пĕтĕм вăйна хурса хăтар!“ —
Ак çĕнĕ Геркулес[1] пĕтĕм вăйне хурса,
пуртипеле упа пуçне çурмаранах касса,
сенĕкпеле ун хырăмне шăтарчĕ.
Тӳпех ӳкрĕ упа, мĕкĕрсе ячĕ,
вилсе кайса, шăпах лăпланчĕ.
Ак хăрушлăх иртрĕ, хресчен тăчĕ,
вăл тарçине ятласа тăнне ячĕ.
Мĕскĕн Степан аптăраса тăрать.
— „Мĕншĕн вăрçан“,—тесе ыйтать.
— „Мĕншĕн ухмаххупа ахăрса кайрăн!
Тире, шăтăк туса, юрăхсăра кăлартăн“.

ЫЙТУСЕМ.

1. Хуçана мĕнле инкек килсе лекнĕ?
2. Ăна çак инкекрен кам хăтарнă? Мĕнле хăтарнă?
3. Хуçа инкеке кĕрсе ӳксен, тарçăпа мĕнле калаçнă, инкекрен хăтăлсан—мĕнле калаçма тытăннă?
4. Хуçа хăйне инкекрен хăтарнăшăн тарçăна мĕнле „тавтунă“? Вăл тарçăна тавтăвас вырăнне ятласа пăрахни мĕнтен килет?

# Квартет[2].

Качакапа Ашак, пуçтах Мартышка
тата чапрас ураллă Мишка
квартет шутланă ирттерме.
Ик скрипка, нот, бассем, альтсем тупаççĕ,
çăка айне çерем çине лараççĕ
хăйсен искусствипе килентерме.
Тытаççĕ смычоксем, пуçлаççĕ çĕмĕрме.
„Лăпланăр, тăвансем!—çухрать
Мартышка:—Тăхтăр!
Эсир апла ларман. Ун пек ăçтан ĕç тухтăр!
Эс баспа, Мишук, альтпа пĕр хирĕç лар,
Эп, прима, вторăпа пĕр хирĕç;
шăранĕ музыка та урăхла:
Вăрманĕ-сăрчĕ ташлеç пирĕн!“
Вырнаçрĕç, тăсрĕç квартетне,
çапах кĕмест вăл йĕркене.
„Çитет, эп тупрăм секретне!—
çухрать Ашакĕ:—Юнашар ларатпăр—
йĕрке тăватпăр“.
Итлерĕç Ашакне: вырнаçрĕç юнашар,
анчах квартет çапах йĕркеллĕ мар.
Ак хай, татах та хытăрах сӳтсе-яваççĕ,
çуйăхаççĕ:
мĕнле тивет ларма.

---

[1] Геркулес—питĕ вайлă çын. Геркулес—авалхи грек юмахĕнчи герой.
[2] Квартет—тăваттăн тĕрлĕ инструментпа кĕвĕ калани.

Тӳр килнӗ Шăпчăка унта вӗҫсе пыма.
Вӗсем унран ӗҫе татса пама ыйтаҫҫӗ:
„Тархасшăн,—теҫҫӗ,—чăт, пăртаклăха ан хирӗн,
майлаштарасчӗ квартета. Ак кур:



нотсем те пирӗн пур, инструментсем те пур;
кала, мӗнле ларас-ши пирӗн!“—
„Музыканта тухма ăсталăх кирлӗ сирӗн,
тата ҫивӗчрех хăлхи“,—
тет Шăпчăк вӗсене хайхи,—
эсир, тусăмăрсем, темле ларсан та,
музыкантсем пулаймăр нихăҫан та“.

## Улакуракпа Тилӗ.

Ку Курака таҫтан пӗр татăк сыр тур панă;
вăл, чăрăш тăррине ларса,
ирхи апат тума тăрать те, чаранса,
шута каять сырне ҫăварӗнчен ямасăр.
Умӗнченех чупать пӗр Тилӗ васкамасăр;
сыр шăршипе сасартăк чарăнать:
сырне курах каять,—сыр илӗртет ăна.
Патне пырать ултавҫă нимӗн систермесӗр,
тек Улакурак ҫине пăхать куҫне илмесӗр.

Хуллен калать пит çуллă сассипе:
„Епле эс, чунăмçăм, чипер!
Епле сан мăй! Сан куçусем епле!
Чăнах та юмахри пек темелле!
Пăх-халĕ, тĕкĕсем! Пăх-ха, сăмси!
Паллах, ангелăнни пекех пулас сасси!
Юрлаччĕ, чунăм, ан вăтан! Итле, хĕрсемĕм,
çав сăн-пуçпа эс юрлама пĕлес пулсассăн,
патша пулаттăнччĕ кутемĕн!“



Куракăн пуçĕ çаврăнчĕ мухтанăран,
хĕпĕртени пĕсехине хытарчĕ,—
вăл Тилĕ ăшă сăмахсем каланăран
краклатрĕ астумасăр пур вăйран:
сыр ўкрĕ те—ăна ултавçă илсе тарчĕ.

# А. С. ПУШКИН

*(1799—1837)*



Александр Сергеевич Пушкин вырӑссен иртнӗ ӗмӗрте пурӑннӑ питӗ чаплӑ поэчӗ. Вӑл ҫырнӑ произведенисем хӑй вӑхӑтӗнчи лайӑх писательсемшӗн те примерлӑ пулса тӑнӑ. Пирӗн хальхи вӑхӑтри писателсем те Пушкин сӑввисене вуласа вӗренеҫҫӗ.

Пушкин вӑл дворянин (помещик) пулнӑ, унӑн крепосла хресченсем, именисем пулнӑ. Дворянсем хушшинче вӑл чи вӗреннӗ, чи малта тӑракан ҫынсен шутӗнче пулнӑ.

Пушкин хӑйӗн хӑшпӗр произведенийӗсенче патша влаҫне хирӗҫ ҫырнӑ, крепосла права хресченсемшӗн ытла йывӑррине кӑтартнӑ. Хӑйӗн сӑввисенче хӑюллӑ шухӑшсем палӑртнӑшан ӑна патша тӗп хуларан—ӗлӗкхи Питӗр хулинчен кӑларса янӑ. Пушкин ссылкӑра темиҫе ҫул пурӑннӑ.

Пушкина мӗн виличченех полици асӑрхаса (йӗрлесе) пурӑннӑ.

Пушкин 38 ҫул пурӑннӑ. 1837-мӗш ҫулта ӑна Дантес ятлӑ офицер дуэльре[1] вӗлернӗ. Патша правительстви ирӗк шухӑшлӑ, халӑхпа ҫывӑх тӑракан поэтран тасалас тесе, Пушкина юри вӗлерттернӗ.

Пушкин юмахсене те юратнӑ. Юмахсене ӑна хӑйӗн няни—Арина Родионовна каласа кӑтартнӑ. Пушкин вӗсене вара илемлетсе ҫырнӑ. Ҫавӑн пек юмахсен шутне „Пуппа унӑн тарҫи Балда“ ятлӑ юмах та кӗрет.

Пушкинӑн кунта пичетленӗ „Пуппа унӑн тарҫи Балда“ ятлӑ сӑвӑллӑ юмахне калав форми туса ҫырнӑ.

## Пуппа унӑн тарҫи Балда.

I.

Пӗр пуп пурӑннӑ, тет. Пӗрре вӑл пасара кайма тухнӑ. Ӑна Балда тӗл пулать. Вӑл пупа: „Мӗнле ытла ир тӑтӑн? Мӗн шыраса ҫӳретӗн?“—тет. Пуп ӑна калать: „Тарҫӑ кирлӗ, тарҫӑ шыра-

[1] Ӗлӗк иккӗн хире-хирӗҫ тӑрса хӗҫпӑшалпа ҫапӑҫас йӗрке пулнӑ, ҫапла ҫапӑҫнине дуэль тенӗ.

тăп,—тет.—Апат пĕçерме, каскалама, лаша пăхма. Çавăн пек пур ĕçе пĕлекен, йӳне кĕрĕшекен тарçă манăн ăçтан тупас-ши?“ —тет. Балда ăна калать: „Эпĕ кĕрĕшĕп, питĕ хытă тăрăшăп; эсĕ мана пăри пăтти çитер, çулталăкра виçĕ хут çамкунтан шаклаттарма пар“,—тет.

Пуп шухăша каять, ĕнсине хыçкалать. „Шаклатнипе шаклатни пĕр мар; тен, ку мана хытах тивертмĕ, пурăнсан курăпăр“,—тет хăйĕн ăшĕнче. Унтан калать: „Юрĕ эппин, Балда, иксĕмĕре те лайăх пулĕ. Пурăнса пăх-ха ман патăмра, кăтарт-ха хăвăн ĕçченлĕхне“,—тет.

II.

Пурăнать Балда пуп патĕнче. Улăм çинче çывăрать, тăвата çыншăн çиет, çичĕ çыншăн ĕçлет. Пуп майри Балдана пит мухтать. Пĕр пуп анчах Балдана юратмасть, нихăçан та ăна ăшă сăмах каламасть. Унпа епле татăласси çинчен вăл час-часах шухăша каять.

Вăхăт иртет, Балдана шалу тӳлес кун çывхарса килет. Пуп çимест, ĕçмест, çывăрмасть те: çамки унăн малтанах ыратать. Юлашкинчен вăл Балдапа килĕшнĕ хак çинчен майрине каласа кăтартать: „Çапла та капла, мĕн тăвапăр ĕнтĕ?“—тет. Хĕрарăм ăсĕ питĕ сисет, чееленме питĕ пĕлет. Пуп майри калать: „Балдана эсĕ тума пĕлмен ĕç пар, çав ĕçе вăл эсĕ калана пек тутăр. Çапла эсĕ çамкуна та хăтарăн, тӳлессине те тӳлемĕн“,—тет.

Çакна илтсен, пупăн чĕри лăшах пулать. Балда çине вăл хăюллăрах пăхма пуçлать. Акă вăл ăна кăшкăрать: „Кил-ха кунта, Балда тарçăм! Итле-ха ман сăмаха: шуйттансем мана хам виличченех куланай тӳлеме пулчĕç; ку таранччен лайăх тӳлесе пурăнчĕç, анчах халĕ виçĕ çул çитет, вĕсем çумне укçа юлса пырать. Эсĕ пăри пăтти лайăххрах çи те шуйттансем патне куланай пуçтарма кай!“—тет.

III.

Балда пуппа тавлашса тăмарĕ, тухрĕ те кайрĕ. Çитсе ларчĕ тинĕс хĕрне, вĕрен явма тытăнчĕ. Вĕренне чылай явсан, вĕçне шыва пăрахрĕ.

Акă тинĕсрен ватă усал ишсе тухать. Вăл Балдаран ыйтать: „Эсĕ мĕн тума вĕрен яватăн?“—тет. Балда ăна хирĕç калать: „Акă мĕншĕн: вĕренпе эпĕ тинĕсе хумхатас тетĕп, хам алла сире çавăрса илес тетĕп“,—тет. Ватă усал хăраса каять. Балдаран каллех ыйтать: „Кала-ха, Балда, мĕншĕн эсĕ пире юратми пултăн? Мĕншĕн капла курайми пултăн?“—тет.—„Мĕнле мĕншĕн?“—тет Балда.—Эсир куланай тӳлеми пултăр, тӳлесе татас срокне иртерсе ятăр. Акă халĕ эпир тытăнăпăр сире, шуйттансене, авкалантарма“,—тет.

Ватă усал шуралса каять. Балдана йăлăна пуçлать: „Пăртак тăхта, ан хумхантар тинĕсе, хам ывăлăма эпĕ сан пата ярăм, вăра эсĕ унпа калаçса пăхăн“,—тет те чăма парать. Усал çури

ишсе тухать те кушак пек макăрма тапратать: „Сывă-и-ха, Балда, пуп тарçи? Сана мĕнле куланай кирлĕ? Куланай çинчен эпир ку таранччен пĕртте илтмен. Юрĕ эппин, илĕн,—тет,—анчах ĕçĕ çирĕп пулма эпир çапла тăвăпăр,—тет: – пирĕнтен, иксĕмĕртен, хăшĕ чи малтан тинĕс тавра чупса çаврăнать, çавă куланай илет",—тет.

Балда кулса ярать те усал çурине ятласа пăрахать: „Тĕлĕнетĕп эпĕ санран! Эй, ухмах! Санăн манпа ăçтан пултарас! Манпа самăй Балдапа! Манăн шăллăмпа пултарайăн-и, чим-ха, чĕнсе килем ăна", – тет.

Балда çывăхри вăрмана каять те икĕ мулкачă тытать. Вĕсене миххе чикет, тинĕс хĕррине таврăнать. Усал çури шыв хĕрринче кĕтсе тăрать.

Балда ăна çапла калать: „Усал çури, эсĕ çамрăк, манпа тупăшма мар, çак ман шăллăмпа та тупăшма пултараймăн; ну, хăваласа çит!" —тет. Вара: „пĕрре! икĕ! виççĕ!"—тет те мулкачне яра парать.

Усал çурипе мулкачă тытăнаççĕ чупма. Усал çури тинĕс хĕррипе чупать, мулкачă вăрмана, килнелле тарать. Усал çури чĕлхине кăларнă, хашкать, лачкам йĕпе, тарĕсене шăла-шăла илет, аран-аран сывлать. Балдана çĕнтертĕм ĕнтĕ, тесе чупса çитет Балда патне. Пăхать Балда шăлнĕне ачашлать, хăй ăссĕн пуплет: „Ман юратнă шăллăм, ывăнтăн пулĕ, шеремет! Канах ĕнтĕ",—тет.

Çакна курсан-илтсен, усал çури хăраса каять. Хăй хÿрине лăпчăтать те Балда шăлне çине хăяккан пăхать, унтан Балдана калать: „Куланай илсе килĕп",—тет.

Аслашшĕ патне пырать те калать ку: „Пĕтрĕмĕр, мана Балда мар, унăн шăлнĕ хăваласа çĕнтерчĕ",—тет. Шухăша каять ватă усал. Балди ахаль тăмасть, каллех тинĕсе хумхаткалама тапратать. Усал çури тухать те калать: „Çитĕ, мучи, сана куланай пĕтĕмпех тÿлĕпĕр,—тет.—Анчах, итле-ха, тата тупăшса пăхар. Çак туяна куратăн-и? Кам туяна инçетрех ывăтĕ, вăл вара куланай илĕ,—тет.—Ха! Мĕне кĕтсе тăратăн? Аллуна мăкăлтасран хăратăн-и мĕн?"—тет.—„Веç, çав пĕлĕт татăкне кĕтетĕп-ха,—тет Балда.— Пĕлĕт татăкĕ çине сан туюна лектерес тетĕп. Сирĕнпе, усалсемпе, эпĕ выляма юратмастăп",—тет.

Усал çури хăраса каять. Аслашшĕ патне чупать. Балда каллех тинĕсе хумхантара пуçлать. Усалсене вĕренпе юнаса хăратать. Усал çури каллех ишсе тухать. „Эсĕ мĕн хăтланатăн? Кирлĕ пулсан, куланай та парăпар",—тет.—„Тăхта-ха,—тет Балда.— Халĕ мĕнле тумаллине хам калам. Акă сана задача парам, вара санăн вăю мĕнлине пĕлĕпĕр! Çав кăвак кĕсрене куратăн-и? Эсĕ çав кĕсрене тыт та çур çухрăм йăтса кай. Йăтса çитерсен, куланай вара эпĕ тÿлĕп, йăтса çитереймесен, куланай вара эсир тÿлĕр",—тет.

Усал кĕсре айне кĕрсе тăрать те мекĕрлене-мекĕрленех кĕсрене йăтать. Икĕ пусăм турĕ, виççĕмĕшĕнче пултараймарĕ, ывăннипе тăсăлса ÿкрĕ. Балда калать: „Ухмах эсĕ ытла та! Ăçта санăн манпа тупăшмалли! Эсĕ аллусемпе йăтаймарăн, мана пăх-ха, эпĕ урасем хушшине хĕстерсех йăтса çаврăнăп!"—тет. Кĕсре çине утланса ларать те наччасра пĕр çухрăм çаврăнса килет. Усал

çури хăраса пĕтсех каять, аслашшĕ патне чупать. Балда çинчен каласа кăтартать.

Усалсем пурте пуçтарăнаççĕ. Шутлаççĕ-шутлаççĕ, ним тума та çук. Куланай пуçтараççĕ те Балдана пĕр михĕ укçа тыттараççĕ.

IV.

Аран-аран укçине çĕклесе, Балда пуп патне тавăрăнать. Балдана курсанах, пуп сиксе тăрать, кукленсе анать, майри хыçне лăпчăнать.

Балда ăна шыраса тупрĕ, куланайне тыттарчĕ, ĕçленĕ хакне ыйтма тапратрĕ. Шеремет пупĕ куçне хупрĕ те çамкине кăнтарчĕ. Пĕрре шаклаттарчĕ Балда,—пуп маччана çапăнчĕ. Тепре шаклаттарчĕ,—пуп чĕлхесĕр пулчĕ, тата шаклаттарчĕ,—пуп вилсе кайрĕ. Балда вара каларĕ: „Çав кирлĕ сана, нӳхреп куç! Ăсу çитмерĕ санăн, ухмах пуç! Йӳнĕ хыççăн ан çӳре!"—терĕ.

ЫЙТУ.

Çак юмаха çыракан кам майлă: пуп майлă-и, Балда майлă-и?

**ПУПĂН ТĂРАНМИ КУÇĔ ÇИНЧЕН ВАТТИСЕМ КАЛАНĂ СĂМАХСЕМ:**

1. Пуп куçĕ—нӳхреп куç.
2. Пупа кĕлте паратăн-и, çĕмел паратăн-и—пурпĕр сахал.
3. Кĕсъе типĕ, пуп та хăлхасăр.
4. Камшăн вилĕ—пупшăн укçа.
5. Сассипе чĕнет, чĕрипе хăй кукăль кĕтсе тăрать.
6. Çĕр тислĕк тăкнине юрататъ, пуп илсе пынине юрататъ.

Çак ваттисем каланă сăмахсем Пушкинăн юмахĕпе мĕнле çыхăнса тăраççĕ?

# Кĕркунне.

Пĕлĕт ĕнтĕ кĕрле сывланă,
хĕвел ĕнтĕ сайра ялтрана,[1]
кунсем кĕскелнĕ, вăрмансен
пытаркăç сулхăн каррисем
салхулăн кашласа çаралнă.
Уй-хирсене тĕтре пусса,
хуркайăксем какаласа
ăсаннă кăнтăра: çывхарнă
чылай кичемлĕ вăхăтсем;
чӳк уйăх perĕннĕ çитсе.
Сĕм сивĕ шурăмпуç; хир сассăр,
илтеймĕн ĕçĕн кĕрлевне.
Хăй выçă амине выç кашкăр
ертсе тухать çулсем çине.
Кĕтӳç ирхи шуçăмпа
хуса тухмасть ĕнесене тек,
кăнтăр çитсен, шăхличпеле
пухмасть вăл вĕсене пĕрле.
Пӳртре юрла-юрла хĕр ĕнтĕ
арлать, ун умĕнче хăйă—хĕлĕн
çĕрне юлташ—шартлатать.

---

[1] Ялтранă—йăлтăртатнă.

## Хĕлле.

Хĕлле!.. Хресчен ĕнтĕ уявлăн
çунапала çĕн çул хывать;
юр çепĕçне туйса, юлхавлăн,
лаши лăпсăртатса юртать.

Кăпăш юра йĕр хăварса,
вĕçет кибитка вăшлатса...
Тăлăпла, хĕрлĕ пиçиххиллĕ
ларкăçра авă ямшăккийĕ.

Карташĕнче вылять ача,
çуни çине йытă лартса—
хăй кÿлĕнсе вăл лаша пулнă,
пÿрни ыратать, вăл—шăннă.

Çапах та—лайăх туйăнать,
а амĕш кантăкран юнать...

## Хĕллехи çул.

Хумлă-хумлă тĕтре витĕр
çутă уйăх шăвăнать,
ĕшнесем çине салхуллăн
салху çутă вăл тăкать.

Хĕллехи кичем çул тăрăх
тройка çил пек кустарать,
пĕрпек саслă шăнкăравĕ
хăлхана йăлăхтарать.

Çывăх кĕвĕ эс илтетĕн
çакă ямшăк юрринче:
е шав-шавлăн иртĕхнийĕ,
е кичемлĕх—чĕринче.

Хăй çути те, хура пÿрт те,
юр та шăплăх çеç... Сăнан,
çухрăмсенĕн юписем çеç
тĕл пулаççĕ-çке сана.

# Тĕрме çынни.

Ларап решеткеллĕ нӳрĕ тĕрмере
çамрăк ăмăрткайăк, ирĕк курманскер,—
ман тунсăх юлташăм, çапса çунатне,
сăхать кантăк айĕнче юн апатне.

Сăхать те чарнать вăл, пăхать кантăкран,
пĕр шухăш тытайнă пекех манпалан,
Чĕнет кăшкăрса та, чĕнет куçĕпе:
„Давайăр вĕçер те каяр!—теес пек.

—Эпир ирĕк кайăк; халь, тăван, вăхăт!
Ав, шуррăн курнан çӳлĕ ту-сăрт çине,
кăвак тинĕссем хумханан çĕрелле,
шух çилпе... пĕр эпĕ çӳренĕ тĕле!“

# И. А. ГОНЧАРОВ

*(1812—1891)*



Иван Александрович Гончаров Чĕмпĕр хулинче (халь Ульяновск) çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ тырăпа вăйлă сутă тунă. Гончаров ашшĕ-амăшĕн килçурчĕ помещиксен манерлĕ пулнă. Вĕсен икĕ килкарти, тĕрлĕрен çуртйĕр: килçурт таврашĕнчи тарçасем пурăнмалли çуртсем, витесем, сарайсем, амбарсем, кайăк-кĕшĕк витисем, мунча пулнă. Хăйсенех лашасем, ĕнесем, качакасемпе такасем те, чăхсемпе кăвакалсем те пулнă, çак выльăх-чĕрлĕх таврашĕ икĕ килкартинче те туллиех пулнă. Пĕр сăмахпа каласан, вĕсен именийĕ хăех ял пулнă.

„Обломов“ ятлă произведенире Гончаров хатĕр пурлăхпа, пĕтĕмпех хресченсем ĕçлесе тупнă тупăшпа пурăнма хăнăхнă помещиксен ĕçсĕрлĕхне, кахаллăхне кăтартать. „Обломов тĕлĕкĕ“ вăл—çак произведенин пĕр сыпăкĕ пулса тăрать.

Обломовпа пĕрлех Гончаров хуçалăха хăпартассишĕн тăрăшакан, хăйсен укçи-тенкине фабрик-заводсем тăвас ĕçе хывакан помещиксем çинчен те çырнă. Вĕсен пурăнăçĕ çинчен çырнă хушăра, вăл фабрик-завод хуçисем эксплоатацилесе пурăнакан ĕçхалăхĕ çинчен асăнмасть. Вăл çав хăйсен хуçалăхне хăпартассăн тăрăшакан помещиксене кăмăллать.

## Обломов тĕлĕкĕ.

### I.

Ирхине Илья Ильич вăраннă та хăйĕн пĕчĕк вырăнĕ çинче выртать, вăл халь çичĕ çулта анчах. Унăн кăмăлĕ хавас та çăмăл.

Епле таса, хĕрлĕ, мăнтăркка, чипер ача вăл. Çаврака питçăмартисем вĕрсе хăпартнă пек; тепĕр ларма-тăма пĕлмен ача юри вĕрсе хăпартсан та ун пек тăваяс çук.

Няньки вăл вăранасса кĕтет. Вăрансан, чулхине тăхăнтартма тытăнать, ачи тăхăнтарттарасшăн мар, урисемпе тапкаланать, аташать; няньки ăна тытса чарасшăн, иккĕшĕ те чăтаймасăр кулаççĕ.

Кайран çапах та нянькиӑна ура çине тӑратрӗ; вӑл Илья питне-куçне çӑвать, пуçне турать, унтан амӑшӗ патне илсе каять.

Амӑшӗ ӑна ытараймасӑр темиçе хутчен чуптуса илет, хыпӑнчӑк куçӗпе куç туллин ӑна йӗри-тавра пӑхса илет, сывлӑхӗ çинчен ыйтса пӗлет: куçӗсем чиперех-и, унӑн мӗн те пулин ыратмасть-и, çӗрле канлӗ çывӑрчӗ-и, тӗлӗкре аташмарӗ-и е вӗриленсе выртмарӗ-и? Унтан Ильяна, аллинчен тытса, турӑш умне пырса чӗркуççи çине тӑратать те, ӑна хӑрах аллипе ыталаса тытса, кӗлӗ сӑмаххисене каласа парать.

Ачи пӗрре те тӑнламасӑр, амӑшӗ сӑмаххисене пӑт-пат каласа пырать, хӑй çаплах кантӑкран тулти сулхӑн çинелле, сирень шӑрши кӗрсе тӑракан пахча еннелле пӑхать.

— Анне, эпир паян уçӑлса çӳреме каятпӑр-и?—тесе ыйтать вӑл сасартӑк, кӗл тунӑ вахӑтрах.

— Кайӑпӑр, чунӑм,—тет амӑшӗ ӑна хӑвӑрт, хӑй турӑш çинчен куçӗсене илмесӗр кӗлӗ сӑмахӗсене каласа пӗтерме хыпаланать.

Унтан вӗсем ашшӗ патне кайнӑ, унтан вара чай ӗçме ларна.

Чай ӗçнӗ çӗрте Илья хӑйсем патӗнче пурӑнакан мӑн аппӑшне —сакӑрвун çулхи карчӑка курать, вӑл, ватти çитнипе пуçне чӗтретсе, хӑй ларакан пуканӗ хыçӗнче тӑракан хӗрачана пӗрмаях хӑр-хар! чӗнсе илет, хӗрачи ӑна ӗçнӗ-çинӗ чухне пулӑшать, ӑнакӑна илсе парать.

Унтан Ильяна булкӑсем, кулач-сухарисем, хӑйма çитерме пуçланӑ.

Çисе тӑрансан, вара амӑшӗ ӑна татах ачашланӑ та уçӑлса çӳреме сад пахчине, карташне е çаран çине янӑ. Янӑ чух нянькине хытарса: ачана ниçта та пӗччен ан хӑвар, таçта йытӑ-качка е качака таки тӗлне ан пултӑр, лашасем çывӑхне ан яр, килтен ытла инçе ан кайӑр,—тенӗ. Пуринчен ытла ачине çырмана яма хушман, мӗншӗн тесен çырмине таврари çынсем: вӑл тасамар, хӑрушӑ, усал вырӑн,—тенӗ.

## II.

Амӑшӗ хытарса каланине ачи итлесе пӗтерейменн, вӑл тахçанах карташне тухса кайнӑ.

Ильян пӳрт йӗри-тавра тунӑ галлерея çине пит улӑхса каяс килет, унтан юхан шыв курӑнса выртать, ӑна вӑл питӗ курасшӑн, анчах галлерейӗ кивелсе çитнӗ, çакӑннӑ пек, аран-аран тытӑнса тӑрать. Ун тӑрӑх „çынсене“ анчах çӳреме юрать, улпутсене юрамасть.

Амӑшӗ чарни-чарманнине вӑл пӑхасшӑн мар, хӑпарса каяс тесе, пусма картлашки патнелле пыма пуçланӑ, анчах няньки тухнӑ та аран-аран тытса чарнӑ.

Вӑл, утӑ хумалли аслӑк çине чӑнкӑ пусма тӑрӑх улӑхса каяс тесе, нянькинчен вӗçерӗнсе тарнӑ. Няньки утӑ хумалли аслӑк патне пырса тӑма ӗлкӗрейнӗ анчах, Ильяна кӑвакарчӑн йӑвисен кӗлетне улӑхса каяс шухӑш кӗрсе кайнӑ, е выльӑх картине, е çырмана анса курас шухӑш кӗрсе кайнӑ. Нянька астуса çеç çитер.

— Ах, эсӗ мӗнле ача, ларма-тӑма пӗлместӗн! Тӑп ларатӑн-и эсӗ хӑҫан та пулсан, сударь? Намӑса та пӗлместӗн!—тенӗ няньки ун пек чухне.

Кунӗн-ҫӗрӗн нянькиуншӑн хыпӑннӑ, унта-кунта кускаланӑ. Пӗрре уншӑн ӑшне пӗҫертнӗ, тепре хытӑ савӑннӑ, тепӗр чух тата, ӳксе сӑмсине ватса пӑрахать тесе, хӑранӑ; е вӑл ачашланнипе кӑмӑлӗ ҫемҫелнӗ, е унӑн малалли пурӑнӑҫӗ ҫинчен шухӑшланипе ӑшӗ ваннӑ. Уншӑн анчах чӗри тапнӑ, уншӑн анчах хускалнӑ. Ҫапла хускалса тапнипе анчах унӑн чӗри ӑшӑннӑ, унӑн тӗлӗкри пек пурӑнӑҫӗ тытӑнса тӑнӑ. Унсӑрӑн пуҫне унӑн пурӑнӑҫӗ тахҫанах сӳнсе ларнӑ пулӗччӗ.

Анчах ача пур чухне те выляман, хӑш чухне вӑл нянькипе ларнӑ ҫӗртех сасартӑк лӑпланнӑ, вара пурне те тӗллесе пӑхса ларнӑ. Ҫамрӑк ӑсӗпе вӑл куҫ умӗнче мӗн пулнине пурне те асӑрханӑ. Ҫавсем ӗнтӗ унӑн чӗри патне пырса вырнаҫнӑ, хӑй ӳссе сарӑлнӑ майӗпе вӗсем те ӳссе сарӑлнӑ.

Ирхине пит аван, уҫӑ; хӗвел ҫӳлех улӑхайман. Пур япаларан та вӑрӑм ӗмӗлкесем: пӳрт ӗмӗлки, кӑвакарчӑн кӗлечӗ, галлерея, йывӑҫсен ӗмӗлкисем тӑсӑлса кайнӑ. Сад пахчинче, карташӗнче лӑпкӑ сулхӑн вырӑнсем пулса кайнӑ, вӗсем ирӗксӗрех ҫынна шухӑша ярса ыйӑхлаттарса яраҫҫӗ. Инҫетрен ыраш уйӗ анчах вут ҫуннӑ пек йӑл-йӑл-йӑл йӑлкӑшать; тата ҫырма шывӗ хӗвел ҫинче йӑлтӑртатса юхать, пӑхсан—куҫ ыратса каять.

— Няня, мӗншӗн кунта ҫутӑ, авӑ унта тӗттӗм, вара унта та ҫутӑ пулать?—тесе ыйтнӑ ачи.

— Акӑ мӗншӗн, ачам: хӗвел уйӑха хирӗҫ пырать, ӑна тӗл пулаймасть те тӗксӗмленет, каярахпа акӑ катаранах курать те ҫутӑлса каять.

Ача, шухӑша кайса, йӗри-тавра пӑхса ларать. Авӑ Антип лаша кӳлнӗ, пичкепе шыв патне каять, ҫӗр ҫумӗнче унпа пӗрле тепӗр Антип шыв патне каять. Тепӗр Антипӗ ку Антипӗнчен вунӑ хут та пысӑк, пички унӑн пӳрт чухлех, питӗ пысӑк. Лаша ӗмӗлки пӗтӗм ҫарана витсе илчӗ, ӗмӗлкийӗ ҫаран ҫинче икӗ хут анчах ярса пусрӗ, сӑртӑн леш енне кайса та ӳкрӗ, Антипӗ килкартинчен те тухса кайман. Ача та иккӗ ярса пусрӗ, унтан тата тепре,—вӑл та сӑртӑн леш енне кайса ӳкесшӗн. Вӑл сӑрт леш енне лаша ӑҫта ҫухалнине курма каясшӑн. Каяс тесе килкарти хапхи патнелле чупрӗ, анчах чӳречерен амӑшӗн сасси илтӗнчӗ:

— Няня! Ача хӗвелте ҫӳренине курмастӑн-и мӗн?! Сулхӑна яр; хӗвелте унӑн пуҫӗ ыратакан пулать, кайран ӑшӗ ҫаврӑнать, апат ҫими пулать. Вӑл апла ҫырмана та кайӗ!

— Уй, ашкӑнчӑк!—тесе мӑкӑртатса, пӳртумне ҫӗклесе хӑпарать ачана няньки.

## III.

Обломов улпутӑн килӗнче ир пулсан, вӑхӑт ахалех иртнӗ тесе каламалла мар. Котлет валли аш тӳни, купӑста-сухан турани таҫта яла ҫитичченех илтӗннӗ. Халӑх пӳртӗнчен йӗке шӑтӑрр! туни илтӗннӗ, тата хӗрарӑм ҫинҫе сасӑпа те макӑрни, те

юрă кĕввине сăмахсăрах хурланса юрлани илтĕннĕ, кăна уйăрса илмеллех пулман. Пуринчен ытла вĕсем апат-çимĕç пĕçерессин çинчен нумай шухăшланă. Кăнтăрлахи апат-мĕн пĕçерессин çинчен пӳртĕшпех пуçтарăнса канашланă. Канашлама ватă мăн аппăшне те чĕннĕ. Кашниех харпăрхăй юратнă апата пĕçерттерессшĕн пулнă: кам ӳпке-пĕвер ярса шӳрпе пĕçерттерессшĕн, кам— лапша яшки, кам ĕне хырăм ярса яшка пĕçерттерессшĕн...

Пур каланине те вырăна хунă, ун çинчен тĕплĕн каласнă, анчах улпут майри каласан тин мĕн пĕçерессине йышăннă. Апат ăшне мĕн ямалла, мĕн ямалла маррине астутарма, сахăр, пыл, эрехсем леçтерме тата апат пĕçерекенĕ пурне те янине сыхлама—пĕрре Настасья Петровнăна, тепре Степанида Ивановнăна кухньăна ярсах тăнă.

Апат шухăшĕ Обломовкăри пурăнăçра чăн пысăк шухăш пулнă. Праçниксем умĕн мĕнле пăрусем самăртса пусман! Мĕнле хуркăвакал, чăх-чĕп самăртман! Мĕнле пăхсан, мĕнле лайăх пулать, тесе, вĕсемшĕн мĕн чул шухăшласа ларнă. Кăрккисене, чăхчĕпсене менелникре е урăх аслăрах праçниксенче пĕçерме мăйăрпа самăртса пуснă. Çуллăрах пулччăр тесе, хурĕсене праçник умĕн уçăлтарса çӳретмесĕр, мăйăх çине ярса, виç-тăват кун хушши çакса тăрантарса усранă. Мĕнле тĕслĕ варени пĕçермен унта! Мĕн-мĕн тăварласа е йӳçĕтсе лартман унта! Мĕн-мĕн унта пĕçерсе хатĕрлемен! Мĕн тĕслĕ пылсем унта пулман, мĕнле квассем хатĕрлемен, мĕнле кукăльсем Обломовкăра пĕçермен! Иртен пуçласа ăшталаннă, унтан кăнтăрлахи апат çимелли вăхăт çитнĕ.

## IV.

Кăнтăрла питĕ шăрăх, пĕр тачка пĕлĕт те курăнмасть. Хĕвел вырăнтан сикмесĕр тӳперен шăрантарать, курăка ĕнтет. Сывлăш пĕр хускалмасăр тăпах тăрать. Шыв та, йывăç тавраш те пĕртте сиккеленмест, ял хушшинче те, уйра та, пурте вилсе пĕтнĕ пек, шăп. Нимĕн çук уçă çĕрте çын сасси таçта çитех янăраса каять. Çирĕм чалăшра нăра нăрласа вĕçсе иртсе кайни илтĕнет. Такам пĕри çăра курăк ăшне кĕрсе выртнă та тутлă ыйăха харлаттарса çывăрать.

Пӳртре те шăпланнă. Апат çинĕ хыççăн пурте канма выртнă. Ача курать: ашшĕ, амăшĕ, ватă мăн-аппăшĕ, кил-йышри çынсем— пурте харпăрхăй кĕтессине кайса выртнă; харпăрхăй кĕтесси çуккисем утă çине кайса выртнă, хăшĕ—сад пахчинче, хăшĕ сулхăн шыраса çенĕке кĕрсе выртнă; тепри тата шăнасем çыртасран питне тутăрпа витнĕ те, тутлă апат хыççăн ыйăх ăçта пусса антарнă, çавăнтах çывăрса кайнă. Пахчаçă та сад пахчинче, ăçта ĕçленĕ çавăнтах, йывăç тĕмисем çумне тăсăлса выртнă, кучерĕ те витене кĕрсе выртнă.

Илья кил таврашĕнчи çынсем пурăнакан çурта кĕрсе пăхать: унта та пурте, ачисене хăйсем вĕççĕнех хăварса, ăçта килнĕ унта кая-кая ӳкнĕ: хăшĕ сак çине, хăшĕ урайне, хăшĕ çенĕке; ачисем карташĕнче упаленсе çӳреççĕ е хăйăр çинче чакаланаççĕ. Йыттисем те хăйсен йăвисене кĕрсе выртнă, юрать никама вĕрмелли çук.

Ача çаксене асăрхать те асăрхать.

Апат хыççăн вăл нянькăпа пĕрле каллех уçă сывлăша тухнă.

Няньки хăй ăçта та пулин сулхăна ларнă та чулха çыхнă, ачине те асăрханă. Анчах ун пуçĕ часах чĕркуççи патнелле сулăннă, чулхи аллинчен тухса ӳкнĕ; вăл ачине куçран çухатнă, çăварне кăшт уçса, харлаттаркаласа çывăрнă.

Илья няньки çывăрса каяссине тем пекех кĕтсе тăнă, çакăн хыççăн вăл хăй мĕн тăвас тенĕ çавна тунă.

Вăл пĕтĕм тĕнчере пĕччен тăрса юлнă пек пулнă; чĕрне вĕççĕн чупса кайса, вăл нянькинчен тарса çухалнă, кам ăçта çывăрнине йăлтах пăхса çавăрăннă, унтан тапма чарăннă пек пулнă чĕрипе галлерея çине хăпарнă, кăвакарчăн вити çине улăхса кайнă, пахчан чи шалти кĕтессисене кайса çӳренĕ, нăрă нăрлатнине итлесе,. вăл вĕçнине нумайччен пăхса, ăна ăсатса тăнă; курăк ăшĕнче темле кайăксем юрланине итленĕ, вĕсене шыраса тупса тытнă.

Унăн çырмана та кайса килес килет; çырми пахчаран аллă чалăшра кăна; ача çырма хĕрне çитет, куçне хупать, çырми теппелле пăхасшăн, анчах сасартăк çак çырма çинчен мĕн каланисем ăна йăлтах аса килеççĕ: вăл тем пек хăраса ӳкет, вăл ни вилĕ, ни чĕрĕ пек пулса, хăраса ӳкнипе чĕтресе, няньки патне чупса пырать те ăна вăратать.

## V.

Пĕрре кăна вĕсен пĕрпек пыракан пурăнăçĕнче ансăртран пĕр ĕç сиксе тухнă.

Йывăр апат çисе каннă хыççăн пурте чай ĕçме пухăннă вăхăтра, сасартăк, вĕсем патне хуларан таврăннă Обломов мужикĕ пынă та Илья Иванович Обломов ячĕпе килнĕ, хуçланса пĕтнĕ çырăва хĕвĕнчен аран-аран туртса кăларнă.

Пурте тĕлĕнсе хытса кайнă; Илюш амăшĕн сăн-сăпачĕ те кăшт улшăнса кайнă; пурин те куçĕсем çыру еннелле пăхнă, сăмсисем çыру еннелле тăсăлнă.

— Мĕнле тĕлĕнтермĕш япала ку? Камран ку? — аран-аран персе янă улпут майри, ăна кĕрсе.

Обломов çырăва илнĕ те тĕлĕнсе, ним тума пĕлмесĕр ăна аллинче çавăркаласа тăнă.

— Ăçтан илтĕн-ха эсĕ ăна?—тесе ыйтнă вăл мужикрен,— кам пачĕ сана?

— Эпĕ хулара чарăннă килхушшине,—тесе ответленĕ мужик, —Обломов мужикĕсем çук-и тесе, почтăран икĕ хутчен пычĕç, улпут патне çыру пур, теççĕ.

— Ну?..

— Ну, эпĕ малтанах пытанса тăтăм; салтак çырăва каялла илсе кайрĕ. Анчах Верхлевăри тиечук мана курнă та каласа панă. Тепĕр хут пычĕç. Тепĕр хут пырсан, ятлаçма пуçларĕç, çыруне тыттарчĕç те тата çийĕнчен пилĕк пус илчĕç. Эпĕ вĕсенчен ку çырупа мĕн тумаллине, ăна ăçта хумаллине ыйтрăм та, вĕсем сире пама каларĕç.

— Сан çыруне илмелле марччĕ,—çиленсе каларĕ улпут майри.

— Эпĕ халь те илмесĕр тăтăм. Пире çыру мĕне кирлĕ, кирлĕ мар вăл, терĕм. Пире çырусем илме хушман, кайăрах хăвăр çырăвупа ман патăмран, терĕм. Анчах салтакĕ питĕ ятлаçса пăрахрĕ: пуçлăхсене жалоба парасшăн пулчĕ, вара илтĕм эпĕ.

— Ухмах! — терĕ улпут майри.

— Камран-ши ку? — тесе адресне пăхса, шухăша кайса мăкăртатнă Обломов.

— Алли темле паллакан алă пек, чăн-чăнах!

Çыру вара алăран алла куçма пуçланă. Пурте çыру камран килни çинчен, тата унта мĕн çырни çинчен хăйсен шухăшне калама тытăннă. Юлашкинчен пурте ним калама та аптăранă.

Илья Иванович куçлăх шыраса тупма хушнă: ăна пĕр сехет çура шыранă. Вăл куçлăхне тăхăннă та çыруне уçма шухăш тытнă.

— Ан тив, ан уç, Илья Иванович, — хăраса чарнă ăна арăмĕ, — кам пĕлет, темле çыру вăл? Тен, хăрушла çыру пуль, темле инкек çинчен пуль. Пĕлен, халăхĕ халь мĕнле! Ыран е тепĕр кунне те ĕлкĕрĕн, — санран тармасть вăл.

Çырупа куçлăха вара арчана хурса, çăрапа питĕрсе илнĕ. Пурте чай ĕçме пуçланă. Вăл çыру унта темиçе çул та выртнă пулĕччĕ, анчах вăл ытла та халиччен пулман япала пулнă, çавăнпа обломовецсен пуçне хытă шухăшлаттарнă. Чай ĕçнĕ хушăра та, тепĕр кунне те пурин чĕлхи çинче те çыру кăна пулнă.

Юлашкинчен тӳсеймен, тăваттăмĕш кунне пĕтĕм ушкăнĕпе пухăнса, хăракаласах çыруне уçнă. Обломов çыру çине кам алă пуснине пăхнă.

— Радищев, — тесе вуласа илнĕ вăл. — Эх! ку Филипп Матвеичран!

— А! э! камран вăл! — тесе калаçа пуçланă пурте. — Мĕнле вăл халиччененех пурăнать? Ха, вăл вилмен-ха! Ну, вăл çырни аван-ха! Мĕн çырать вăл?

Обломов çырăва сасăпа вулама тытăннă. Филипп Матвеич Обломовкăра сăра лайăх тунине аса илсе, сăра тумалли рецепт ыйтса янă иккен.

— Ярас, ярас ăна! — шакăлтатнă пурте: — çыру çырса ярас пулать.

Çапла пĕр-икĕ эрне иртсе кайнă.

— Çыру çырса ярас пулать, çырас пулать! — тенĕ Илья Иванович арăмне, — рецепчĕ ăçта-ха?

— Таçта-ха вăл! — тесе хирĕç чĕннĕ арăмĕ, — ăна шырамалла-ха. Тăхта, ăçта васкамалла! Акă праçник çитсен, çырса ярăпăр, тармĕ-ха...

— Чăнах та, праçник вăхăтĕнче çырса ярсан авантарах пулĕ, — тенĕ Илья Иванович.

Праçник çитсен, каллех çыру çинчен сăмах тапратнă. Илья Иванович çыру çырма чăнласах тытăннă. Вăл хăйĕн кабинетне кайнă, унта вăл, куçлăх тăхăнса, сĕтел хушшине кĕрсе ларнă.

Пĕтĕм çуртра шăп пулнă, пурне те таплаттарса утса çӳреме, сас кăларма чарнă.—Улпут çырать!—тенĕ пурте, çуртра вилĕ пулчă чухнехи пек шăп.

Улпут анчах ерипен, чалăш-чĕлĕшшĕн, чĕтрекен аллипе, темле хăрушă ĕç тунă чухнехи пек, „Милостивый государь“ тесе çырса хунă пулнă, çав хушăра ун патне арăмĕ пырса кĕнĕ.

— Шырарăм, шырарăм, рецепт çук,—тенĕ вăл.—Тата çывăракан пӳлĕмре шкафра шыраса пăхмалла-ха. Çыруне мĕнле яртăр-ха?

— Почтăпа ярас пулать,—тесе хирĕç чĕннĕ Илья Иванович.

— Унта яма мĕн чухлĕ тăрать-ха?

Обломов кивĕ календарь çине пăхса илнĕ.

— Хĕрĕх пус,—тенĕ вăл.

— Акă тата, кирлĕ мар япалашăн хĕрĕх пус пăрах!—тенĕ арăмĕ:—тăхтаса пăхăпăр, тен унта каякансем пулĕç, çынран парса ярăпăр. Эсĕ мужиксене ыйтса пĕлме хуш!

— Чăнах та çынран парса ярсан авантарах пулĕ,—тенĕ Илья Иванович, унтан перине сĕтел çумне шаккакаласа чернил кĕленчи ăшне чикнĕ те куçлăхне хывса хунă.

— Чăнах та авантарах пулĕ,—тенĕ вăл юлашкинчен:—тармĕ-ха, çырса яма ĕлкĕрĕпĕр.

Филипп Матвеич вĕсенчен рецепт кĕтсе илнипе илменни паллă мар.

## VI.

Унтан Илья Ильич тĕлĕкре сасартăк хăйне вунвиç-вутăват çула çитнĕ ача пек курать.

Вăл ĕнтĕ Верхлево ятлă ялта, Обломовкăран пĕр пилĕк çухрăмра, унти управляющий Штольц нимĕç патĕнче вĕренет.

Нимĕн тума та çук, ашшĕпе амăшĕ выляса ахăрса çӳрекен Ильяна кĕнеке вулама вĕрентме тытăннă. Вĕрентме тытăниччен малтан темĕн чухлĕ куççуль тăкăннă, йĕрсе пĕтнĕ, кутăнланнă. Юлашкинчен Ильяна ăсатса янă.

Нимĕçĕ ĕçчен çын та хытă тытаканскер пулнă. Тен, Обломовка Верхлеворан пĕр пилĕкçĕр çухрăмра пулнă пулсан, вăл Ильяна мĕне те пулин аванах вĕрентсе çитернĕ пулĕччĕ: унсăрăн ăçтан вĕренĕ Илья?

Тунтикун ирхине ыйăхран вăрансанах, Ильян ăшĕ вăркама пуçлать. Вăл пӳртуменче Васька хыттăн кăшкăрнине илтет.

— Антипка! Улпут ывăлне нимĕç патне леçме ула лашана кӳл!—тет лешĕ.

Çакна илтсен, Илюш чĕри шартах сикет. Вăл амăшĕ патне хуйхăллă пырса тăрать. Амăшĕ ачи мĕншĕн хуйхăллине сисет те ăна йăпатма пуçлать.

Çав ирхине ачине вара темĕн тĕрлĕ апат та çитереççĕ. Ун валли булкăсем, клентĕрсем пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Кайнă чух темĕнле апат-çимĕç те парса яраççĕ: тăварланă е типĕтнĕ апат-çимĕç, тĕрлĕ варени, пастила тени тата пĕçерсе çиме тĕрлĕ çимĕç. Çакна пурне те нимĕç патĕнче çуллă çитермеççĕ тесе парса янă.

— Унта хырӑм сарӑлмалӑх апат лартса памаҫҫӗ,—тенӗ Обломов кил-йышӗнче:—кӑнтӑрлахи апата шӳрпе, шаркку, паранкӑ лартса параҫҫӗ, чай ӗҫнӗ чух—ҫу, каҫхи апатра вара чӗлхӳне ҫуласа лар.

Ӑннипе Илья Ильича ҫакӑн пек тунтикунсем пуринчен часрах аса килеҫҫӗ. Ирпе тӑрсан, Васька: „ула лашана кӳл!"—тесе кӑшкӑрать; вӑл чай ӗҫнӗ чух амӑшӗ ӑна кулкаласа урӑх ҫӗнӗ хыпар пӗлтерет:

— Паян каймастӑн: кӗҫнерникун пысӑк праҫник, виҫӗ куншӑн каймасан та юрать,—тет.

Хӑш чух тата сасартӑк ачине ҫапла каласа хурать:

— Паян вӗренес шухӑш мар, ҫатма икерчи пеҫеретпӗр.

Тепӗр чух тата амӑшӗ тунтикун ирпе ачине куҫӗнчен пӑхать те:

— Темскер сан паян куҫсем чӗрӗ мар, сывӑ-и эсӗ?—тет пуҫне сулкаласа.

Ачи те, чеескер, сывӑ пулсан та, нимӗн те шарламасть.

— Ку эрнере эсӗ килтех лар-ха,—тет вара амӑшӗ ӑна.

Вара пӳртре пурте: кӗҫнерникун праҫник, ку эрнере вӗренмелле мар,—тесе шутланӑ. Темле хӑш чухне ҫеҫ улпут ывӑлӗшӗн ята кӗнӗ тарҫӑ е пӳртре ӗҫлекен хӗр ҫиленсе тарӑхнипе:

— Уй, ашкӑнчӑк! Тахҫан нимӗҫ патне кайса пӑчланӑн?—тесе мӑкӑртатса илет.

Хӑш чух тата Антипка эрне хушшинчех нимӗҫ патне Ильяна илме ула лашипе вӗҫтерсе ҫитет:

— Мария Савишна е Наталья Фадеевна, е Кузовков улпучӗ ачисемпе хӑнана килнӗ, киле илсе пыма каларӗҫ,—тет.

Вара Илюш килте ик-виҫ эрнипех пурӑнать; унтан манкун типпин юлашки эрни ҫывхарса пырать, ун хыҫҫӑн мӑнкунӗ персе ҫитет, унтан кил-йышӗнче хӑшӗ те пулсан пӗри: „Фома эрнинче вӗренмеҫҫӗ",—тет. Ҫуллаччен икӗ эрне анчах юлать,—мӗн вӗренмелли пур, ҫулла нимӗҫӗ хӑй те канать, кӗркуннеччен каяс та мар вӗренме.

Пӑхатӑн, Илья Ильич ҫур ҫулӗпех вӗренмесӗр ҫӳрет. Ку хушӑра вӑл ҫав тери ӳссе сарӑлать. Мӗнле вӑл хытӑ ҫывӑрать. Килтисем ун ҫине ытараймасӑр пӑхаҫҫӗ. Хӑйсем: „Шӑматкун нимӗҫ патӗнчен таврӑнсан, мӗнле вӑл шуралса пӗтсе килет!"—теҫҫӗ.

— Усал вӑл куҫа курӑнса килмест,—тенӗ ашшӗ-амӑшӗ.—Вӗренесси тармӗ-ха вӑл, пуҫ сывӑ пултӑр, сывлӑх ӗмӗрте пуринчен те паха. Мӗнле вӑл вӗреннӗ ҫӗртен больницӑран тухнӑ пек шурӑхса таврӑнать, ҫу унӑн пӗтӗмпех тухса ӳкет. Хӑй ашкӑнма питӗ юрататать! Пӗрмаях чупса анчах ҫӳрӗччӗ!—теҫҫӗ.

— Вӗренесси вӑл такамшӑн та ҫӑмӑл ӗҫ мар,—тет ашшӗ,—вӑл пурне те тыткаламаллах тыткалать.

Ҫемҫе чӗреллӗ ашшӗ-амӑшӗ, тӗрлӗ сӑлтавсем тупса, ывӑлне вӗренме ярас вырӑнне киле хӑварнӑ. Сӑлтавсем праҫниксемсӗр пуҫне те нумай тупӑннӑ: хӗлле сивӗ пек туйӑннӑ, ҫулла шӑрахра ҫӳреме аван мар, хӑш чух ҫумӑр чарать, кӗркунне йӗпе-сапа чӑрмантарать... Тепӗр чух Антипкӑна шанма ҫук: те ӳсӗр вӑл, те

урă,—ăна пĕлес те çук, темле тискеррĕн пăхкалать, кăларса яма та хăрамалла,—таçта çул çинче лакса ларĕç-и е кирек-мĕн татăлса кайĕ-и?

## VII.

Илья Ильич килĕнчи пурăнăçа та, Штольц патĕнче вĕреннине те хальхи пекех астăвать. Вăл вăраннă çĕре Захарка вăл



варанасса унăн вырăнĕ патĕнче кĕтсе тăрать. Захар кайран унăн чаплă камердинерĕ Захар Трофимыч пулнă. Ĕлĕкхи няньки пекех, Захар ăна чулхисене, пушмакĕсене тăхăнтарса ярать. Вунтăват çулхи Илюш выртнă çĕртен пĕр урине, тепĕр урине тăсса пăрать, мĕн те пулин майлă пулмасан, пĕррех урипе сăмсаран тăхăнтарса ярать. Аслисене каласан, лешсем Захаркăнах ĕнсе чикки парса кăларса яраççĕ.

Унтан Захар ача пуçне тураса ярать, кĕпине тăхăнтартать, ăçтан та пулсан тивертсе кансĕрлес мар тесе, çаннисене вăл астусах хуллен тăхăнтартать, унтан мĕн-мĕн тумаллине астутарать: ирпе тăрсан, пит çумалла,—тет, тата ыттисене те астутарать.

Кирек-мĕн тумалла пулсан, Илья Ильич куçне мăч анчах тутарать те, виç-тăват тарçă ун патне чупса пыраççĕ: мĕн те пулин вăл ӳкерет-и, пĕр-пĕр алă çитмен япалана çитсе илес пулать-и, пĕр-пĕр япала урăх пӳлĕмрен илсе килмелле пулать-и е ăçта та пулсан кайса илмелле-и; хăш чух унăн çивĕч ача пулса хăйĕнех тăвас килет, вара ашшĕ-амăшĕ, мăн-аппăшĕсем виççĕн-тăваттăн харăс кашкăрса яраççĕ:

— Ăçта? Мĕн патне каятăн? Васька, Ванька, Захарка мĕн ĕçлеççĕ? Эй, Васька! Ванька! Захарка! Мĕн эсир, аскăнчăксем, çаварсене карса тăратăр? Акă эпĕ сире!

Çапла Илья Ильича хăй валли нимĕн тума та ирĕк памаççĕ. Кайран, капла пит канлĕ-çке тесе, хăй те кăшкăрма вĕренсе кайнă.

— Эй, Васька, Ванька! Çавна пар, кăна пар! Ку кирлĕ мар, çавна пар! Унта чупса кай! Кăна илсе кил!—тесе хушса ларма вĕреннĕ.

**СЛОВАРЬ.**

1. Галлерея—пӳрт умне е пӳрт çумне витсе тунă крыльцо евĕрлĕскер.
2. Рецепт—пĕр-пĕр эмел е урăх япалана мĕнле тумаллине кăтартса пани, кунта сăра тумалли рецепт çинчен калană.

ЫЙТУСЕМ.

1. Ильян ашшĕ-амăшĕсем камсем пулнă? Вĕсен кунĕ мĕнле иртнĕ? Обломовсен килĕнче нимрен ытла мĕншĕн тăрăшнă? Çаксем çинчен çырнисене произведенире тупса вулăр.

2. Ильяна мĕнле пăхса çитĕнтернĕ? Вĕренӳ çине ăна мĕнле пăхма вĕрентнĕ? Çамрăк чухне пĕчĕк Илья мĕнле ача пулнă? Обломовла пăхса çитĕнтернĕ пирки унран мĕнле çын пулса çитĕнет?

---

# С. В. ЭЛКЕР

*(1894)*



Семен Васильевич Элкер 1894-мӗш ҫулта Йӗпреҫ районӗнчи Мăн Упакасси ялӗнче ҫуралнă. Вăл хальхи чăваш литераторӗсем хушшинче паллă писательсемпе поэтсенчен пӗри. Ялти шкулта вӗренсе тухсан, Элкер салтака кайиччен килтех хресчен ӗҫӗпе пурăннă. 1915 ҫулăн пуҫламăшӗнче ăна империализм вăрҫине илсе каяҫҫӗ. Вăрҫăра йывăр суранланса, Элкер тыткăна лекет. 1916-мӗш ҫулта Элкер инвалид шучӗпе Российăна таврăнать.

Хăйен произведенийӗсенче Элкер вăрҫă хăрушлăхӗсем ҫинчен, ӗлӗкхи пусмăр айӗнчи хӗсӗк пурăнăҫ ҫинчен, совет ҫӗршывӗн ӳсӗмӗсем ҫинчен ҫырать. Элкерӗн чи паллă произведенийӗ—„Хӗн-хур айӗнче“ ятлă историллӗ поэма. Ҫак поэмăра кăтартса панă ӗҫсем, Пугачев пăлхавӗ иртсен вунă ҫултан, Кӗҫӗн Кушлавăш ятлă чăваш ялӗнче пулса иртеҫҫӗ. Кунта Элкер ӗлӗк ялти чăваш ӗҫҫыннисене куштан-кулаксем, вырăс помещикӗсем, патша чиновникӗсем мӗнле хӗсӗрлесе пурăннине уҫҫăн кăтартса парать.

Ҫак кӗнекере ҫапăннă „Куланайшăн“ ятлă сыпăк „Хӗн-хур айӗнче“ ятлă поэмăн сыпăкӗ пулса тăрать.

## Куланайшăн.

Пӗрре ак хӗлле, сивӗ кунхине,  
вăрман хушшинчи Кушлавăш ялне  
кантур тавраш ҫитет ыткăнса,  
ҫитет те хавăрт пухать халăха.  
Хура хурал пӳрчӗ. Ăшчикӗ кичем:  
тарпа, сӗрӗмпе сăрланнă стена.  
Ик енчен пӗрер пӗчӗк чӳрече  
кăшт ҫутă кӳртсе тăраҫҫӗ ăна.  
Хӗсӗк тӗпелте, тур кӗтессинче,  
ларать тăлăххăн лутака сӗтел.  
Кăвак кантăкран ҫак сӗтел патне  
имшеррӗн пăхса ҫутатать хӗвел.

* * *

Çитнĕ кантуртан пурмиспа тиек,
килнĕ тиесе ял тулли инкек;
иккĕш те вĕсем калăпсăр мăнтăр,
пичĕ-куçĕсем шыçмак та сăнсăр.
Çиллĕн мăшлатса, хаярран пăхса
лараççĕ вĕсем сĕтел хушшине.
Умри мужиксем шикленсе тăрса,
пуçа пĕшкĕртсе пăхаç урайне.
Пӳртри халăх шăп, вилнĕ пек, тăрать.
Паллах, ырра мар, ун чунĕ хăрать.
Сив куçлă пурмис сулать алăпа,
пуçлать сăмахне хулăм сасăпа:
—Эпир çитрĕмĕр,—пĕлĕр хавăрах,
часрах куланай!. Куланай давай!
Пĕрре анчах мар, кашни уйăхрах
сире кун çинчен калатпăр нумай.
Закон хушнине парса татмасан,
питех те йывăр сире паянтан!
Кам наян, памасть—текех каçармасп.
Мăн парăм пулсан, чĕррĕн хăвармасп.
Кам пуссĕр кахал, куланай памасть,
паян ун пеккин пуçĕ те юлмасть!
Ун пек кахала халь ӳкермелле,
хулăпа касса тирне сӳмелле!..
Пурмис сăмахĕ халăх хăлхине
вут-хĕм пек вĕрин керет пĕçертсе.
Шикленнĕ хресчен хыçать ĕнсине,
пит-куçĕ унăн çунать ĕнехсе.
Тиек пикенет ят тăрăх чĕнме,
пурмис—пурне те хăтăрса хĕсме.
Хăравçă мужик, ячĕ тухсанах,
Сикет кăрт, пырать сĕтел патнелле;
тӳлет парăмне, укçи пулсанах,
тăрать пашкаса хăранипеле.

* * *

Тĕрĕслерĕç ят, камăн пур—пачĕç,
кам-кам параймасть—тытса хăварчĕç.
Пурмис ак пухха тула кăларать,
тыткăнрисене çаптарма хушать.

* * *

Сулать алăпа, хĕрӳллĕн калать:
— Çаптар лешсене!
Каçчен пĕтерсе, вĕçес кил енне...
Чĕр юн сирпĕнсе пăрланнă вырăна
Кăларчĕç чĕнсе пĕр çамрăк çынна.

Ку çын—хут çинче Якку ятлăскер,
ялта, чăвашла—*Чакка* тенĕскер.
Çынни ку—тăлпан, çӳллĕ мар—вăтам.
Пит-куçĕ—чĕрĕ, илемлĕ, çуткам.
Сухалĕ кăшт çеç тăрать мăкланса.
Çине кивĕ тум янă тăхăнса.
Чакка вырăсла та пăртакçă чухлать,
çампа пурмиса пуççапса калать:
— Эй, ырă пурмис, хĕрхенĕр мана...
Халех, ыранах каяп хулана.
Виç лав ман курăс кайса сутмалла.
Ăна сутсанах, укçа пулмалла:
Тенкĕ çур пулать—катап парăма...
Тархасшăн ан тив!.. Хăтар пуçăма!..
  Сасартăк тиек пурмиса калать:
— Ку çамрăк чăваш ытла мăшкăлать!
Вăл куланая икĕ çул татман...
Ун пек кутăнсем нумаях юлман,
тăват тенкĕ те çирĕм икĕ пус
унтан илмелле... Ак мĕнле вăл юс!—
  Тиек сăмахне илтнĕ-илтменех,
пурмис мĕкĕрет хĕремесленсех:
— Ăшалăр ăна чĕри çурличчен!
Тĕп пултăр кунтах, эпир кайиччен...
Шăртланнă[1] пурмис, талхăрнă чухнех,
тапать Чаккана пуçран пĕрехçех;
ун йывăр кĕлеллĕ, сулмаклă атти
лекет вирлĕнех Чакка çамкине.
Мĕскĕн сулăнать, чĕтрет ун тути,
каять йăванса таптав юр çине.
Сулмаклă тапкă лекнĕ вырăнта,
лĕпке тĕлĕнчен ӳт-тир вистенет,
вĕри чĕп-чĕр юн сăрхать суранран:
юхать юн, тумлать—пит-куç хĕрелет...
  Çĕкленнĕ Чакка каллех тилмĕрет,
сасси чĕтренсе аран илтĕнет:
      —Тырри-çке пулмасть...
      Укçи тупăнмасть...
      Каçарăр паян!—
      теет вăл аран
Пурмис, мăн сухал, çынна хĕрхенмест—
Чакка кĕллине хăлхана чикмест,
супне-çĕлĕкне хывса тăхăнать,
часрах хĕнесе пăрахма хушать...
  Ак çамрăк пуçа хураççĕ чăсса,
çири тумтирне илеççĕ хывса;
пилеш хуллисем суйласа илсе,
пуçлаççĕ ăна касса ислетме.

[1] **Шăртланнă**—хытă çиленнĕ.



Ак çапнă йĕртен чĕр юн пĕрĕхсе
шур юр çинелле каять сирпĕнсе:
ахлатнă сасă çурать чĕрене.
Ку сас– хаяр сасă—сарлать ял çине...
Ни хурлăхлă сасă, ни куççуль, ни юн—
нимскер хускатмасть шыçмак пуççене.
Упа пек урса, çапла кĕтмен кун
юнлаççĕ весем пĕчĕк ял питне.

* *
*

Хĕрӳсĕр хĕвел ансах ларайман.
Шăхрать сивĕ çил, карлать сĕм вăрман.
Пурмиспа тиек, ĕçне пĕтерсе,
каяççĕ ялтан тăман вĕçтерсе.
Вăрман варринчи уллах пĕчĕк ял
шăнкăрав сассипе юлать çӳçенсе.
Ку вичкĕн янăрав—ырă мар—усал,
тăрать нумайччен ян-ян илтĕнсе.

* *
*

Каç. Тĕттĕм... Пытаннă хĕвел.
Кушлавăш хушши çаплах-ха янрать;
ватти, çамрăкки, ачи-пăчи, шел,
калла та малла чупать урампа.
Унта та кунта хурланчăк йĕрӳ,
йăслав, çуйхашу, тĕрлĕрен сас-чӳ!.
Ак çак хушăрах çуналлă лавсем
пыраççĕ шуса хурал пӳрт умнелле;
вилес пек выртан çынсене вĕсем
тиеççĕ йăтса—часрах килелле!

* *
*

Каçхи кăвак шуçăм тӳпере сӳнсен,
тинех лăпланать йĕни-çуйхашни;

пĕчĕк чӳречеллĕ хура пӳртсенчен
курнать хăй çути сиксе чалкăшни.
Этем сасси çук.
Тепле çеç, хăш чух,
хупса питĕрен хапха-алăксем
шăлт-шалт! тукалаççĕ тăлăххăн, кичем...
Тепле, сайраран, урам варрипе
пĕччен çын мĕлки иртет васкаса;
вăл, тăкăс юра хирсе утнипе,
чĕриклеттерет пушă урамра.
Ура сассипе хаяр йытасем
сиксе хамлатаççĕ хапха умсенчен;
виртлешнĕ пекех—вĕсен сассисем
тапаççĕ калла вăрман хĕрринчен.

**СЛОВАРЬ.**

1. Пурмис—XVIII-мĕш ĕмĕрти вулăс кантурĕн пуçлăхĕ, старшина вырăнĕнче пулнă.
2. Тиек—вулăс кантурĕнчи çыруçă.
3. Куланай (тепĕр çĕрте хырăç теççĕ)—ĕлĕк хресченсем казнана парса тăнă тӳлев, налог.
4. Чакка—чăвашсен авалхи çын ячĕ.
5. Лаппех вистенет—лаппех сĕвĕнет.
6. Салху—кичем, тунсăхлăх.
7. Каçхи шуçăм—каçхи хĕвеланăç çути.

**ЫЙТУСЕМ.**

1. Ĕлĕкхи ĕçхресченсен хĕн-хурлă пурăнăçне ку поэмара мĕнле кăтартнă?
2. Патша чиновникĕсем чăваш ĕçхресченĕсем хушшинче куланая мĕнле пуçтарнă?
3. Çав вăхăтри пурăнăç мĕнле хресченсемшĕн йывăр пулнă?
4. Чакка куççульпе тилмĕрсе йăлăннине сăвăри сăмахсемпе каласа кăтартăр.
5. Куланай тӳлеймен çынсене мĕн таран асап кăтартнă?

Поэмăн сыпăкне, план туса, план тăрăх хăвăр сăмахпа каласа парăр.

# Л. Н. АНДРЕЕВ

*(1871—1919)*

## Петька дачăра.

### I.

Осип Абрамович, парикмахер, çӳç кастарма, сухал хыртарма пынă çыннăн кăкăрĕ çинчи хуралса кайнă простынкăна тӳрлетрĕ, ăна пĕр вĕçĕнчен пӳрнисемпе кĕпе çухи ăшне чикре те, сăмаххисене татса, çухăрса кăшкăрчĕ:

— Ача, шыв!

Парикмахер патне пынă çын, хăйĕн сăн-сăпатне куçкĕски çине пăхса сăнаканскер, куçкĕски айне таçтан айккинчен тăсăлса пырса вĕри шыв тултарнă шуç савăта лартса паракан ырхан алла курнă, çав ала çинчен куçĕсене, кăмăлсар пулса, илнĕ. Çав çын куçĕсене çӳлерех çĕкленĕ хушăра куçкĕски витĕр парикмахерĕн темĕнле тĕлĕнмелле, чалăшса кайнă еврĕлĕ сăн-сăпатне курнă, парикмахер аялалла такамăн пуçĕ çине час-часах хаяррăн пăхса илнине, тата вăл, çын илтмелле мар, анчах систерӳллĕ пăшăлтатса тăнипе унăн тутисем хускалса тăнине асăрханă. Парикмахер патне пынă çынна Осип Абрамович хăй мар, подмастерьесенчен пĕри, Прокопий е Михайло хырнă чухне, çак пăшăлтатни хыттăн илтĕннĕ, парикмахер хаяр сунса калаçнă:

— Акă, тăхта сана!

Ку вара, ача шыва хăвăртах пырса парайманнине, уншăн ăна лекессине пĕлтернĕ.

Нимрен ытла Петька ятлă ачана кăшкăрса хăтăрнă, вăл парикмахерскинче ĕçлекенсенчен чи пĕчĕкки пулнă. Петька вунă çулта пулнă. Тепĕр ачи, Николка, унтан виçĕ çул аслăрах пулнă, вăл часах подмастерье ĕçне куçмалла пулнă. Халĕ те, парикмахерскине ытла чаплах мар çын пырса кĕрсен, хуçи çук вăхăтра подмастерьесем ĕçлеме ӳркенсе, çӳç касма Николкăна хушнă, хăйсем вара тĕреклĕ дворникăн ĕнсине курмашкăн Николкăн чĕрне вĕççĕн тăмалла пулнинчен кулнă. Хăш чухне çӳç кастарма пынă çын, çӳçне пăснăшăн çиленсе, кăшкăрашма тытăннă, вара подмастерьесем те Николкăна кăшкăрса ятланă, анчах çиленсе мар, çӳçне пăсса янă çынна лăплантармашкăн кăна.

Çынсем çук чухне, Петькăпа Николка калаçса ларнă. Иккĕш кăна юлсан, Николка Петькăпа кăмăллăрах пулнă, вăл „ачана“ çӳçе мĕнле кассан подполька пулнине, бобрик пек е çӳç çӳлĕллĕ пулнине ăнлантарнă.

Петькăн кунĕсем тĕлĕнмелле пĕрпек: ĕнерхи—паянхи пек, паянхи ыранхи пек тăсăлса иртнĕ, икĕ пĕр тăван пек. Хĕлле те,

çулла та вăл çав куçкĕскисенех курнă, вĕсенчен пĕри çурăк, тепри чалăш кăтартакан, тĕлĕнмеллескер пулнă. Ир те, каç та кунĕ-кунĕпех: „Ача, шыв!"—тенĕ саса Петькăна йĕрĕнтернĕ, вăл пĕр вĕçĕмсĕр шыв леçсе тăнă. Петькăн праçниксем пулман. Вырсарникунсенче, магазинсемпе лавкасенче çутă сӳнсе урама çутатма пăрахсан, парикмахерски çути чул сарнă урама чылай çĕрлеччен çутатса тăнă. Иртсе çӳрекене чӳречерен кĕтесре, хăй пуканĕ çинче, пĕчĕкçĕ хыткан кĕлетке курпунне кăларса ларни курăннă; вăл те шухăша кайнă, те йывăр ыйхă пуснипе аптăраса ларнă. Петька нумай çывăрнă, çапах та унăн пĕрмаях çывăрас килнĕ, час-часах ăна хăй пурăнăçĕ чăн пек туйăнман, вăрăм йывăр тĕлĕк пек туйăннă. Вăл час-часах шывне тăка-тăка янă, е: „Ача, шыв!"—тесе хыттăн кăшкăрнине илтмен, хăй начарланнăçемĕн начарланса пынă, унăн шакла пуçĕ çине темĕнле усал кĕсенçăпансем тухнă. Унăн куçĕсемпе сăмси айĕнче çивчĕ йĕппе чĕрсе тухнă пек йĕрсем пулса тăнă, ăна çав йĕрсем ватăлнă карлик евĕрлĕ туса хунă.

Петька хăй пурăнăçĕ салхуллипе савăнăçлине те пĕлмен, анчах унăн кунтан урăх çĕре каясси килнĕ, ăçта каяссине, мĕнле вырăна каяссине вăл хăй те пĕлмен. Амăшĕ унăн, Надежда, кухаркăра пурăннă; амăшĕ курма пырсан, вăл амăшĕ илсе пынă тутлă апат-çимĕçсене ӳркенкелесе çинĕ, хăй пурăнăçне хурласа калаçман, анчах хăйне кунтан илсе кайма ыйтнă.

Çапла нумай пурăннă-и, сахал пурăннă-и, Петька хăй те пĕлмен. Анчах пĕрре кăнтăрлапа унăн амăшĕ килнĕ те, Осип Абрамовичпа чылай калаçкаласан, Петькăна хăй улпучĕсем пурăнакан Царицына ятлă дачăна илсе каясси çинчен пĕлтернĕ. Петька малтанах мĕн иккенне ăнланса та илеймен, унтан питне-куçне пĕркелесе шăппăн кулса янă, вара Надеждăна васкатма пуçланă. Вăл хăй дача мĕн иккенне те пĕлмен, анчах хăйĕн тахçанах каяс килнĕ вырăнĕ шăп çавă пулĕ, тесе шутланă. Вăл, мăнкăмăллă çын пек, Николка çинчен манса кайнă, лешĕ, аллисене кăсъине чиксе, çавăнтах тăнă.

Николкăн куçĕсенче йывăр хуйхă ларнă: унăн амăшĕ пулман, вăл халĕ çак Надежда пек мăнтăркка амăшĕ пулсан та савăнĕччĕ. Нимрен ытла, дачăра вăл нихăçан та пулман.

## II.

Петька вокзалта тĕрлĕ саса илтрĕ: поездсем кĕмсĕртеттерсе килеççĕ, паровозсем темиçе тĕрлĕ сасăпа çухăраççĕ, хăшĕ Осип Абрамович сасси пек хулăн сасăпа çиленсе кăшкăрать, хăшĕ тата унăн чирлĕ арăмĕ пек çинçе сасăпа чăрăлтатать. Васкакан пассажирсем вĕçĕмсĕр утаççĕ, вĕсен вĕçĕ-хĕрри çук пек туйăнать. Петька çавсене пурне те пăхса та ĕлкĕреймест, вăл хăй çăмăлланса, çĕкленсе çитрĕ, унăн кĕтсе тăрасси килмест. Поезд тапранса каясси тата çур сехет ытлашшипех пулсан та, вĕсем амăшĕпе иккĕшĕ ларса ĕлкĕреймесрен хăраççĕ. Поезд тапранса кайсан, Петька чӳрече çумĕнчен хăпмарĕ, унăн çинçе мăйĕ çинчи шакла пуçĕ тимĕр патак çинчи пек çавăрăнкаласа çеç тăрать.



Амӑшӗ ывӑлӗ патне курма пынӑ.

*В. Маковский худ. картинӗ.*

Вăл хулара çуралса ӳснĕ, хире хăй ĕмĕрĕнче пирвайхи хут тухнă; хирте пурте тĕлĕнтернĕ ăна, пурте уншăн çĕнĕ пулнă: таçти инçетри курăнса тăни те, вăрманĕ курăк пек çеç туйăнни те, кунта пĕлĕчĕ те, пӳрт тăрринчен пăхнă пек, çап-çутă саралса тăни те. Петька пĕлĕте хăй енчен курнă, амăшĕ еннелле çавăрăнса пăхсан, çав пĕлĕтех хирĕç чӳречерен шенкеррĕн курăнса тăнă, унта татăк-татăк шур пĕлĕтсем саванăçлăн шунă.

Петька е хăй чӳречи умĕнче çавăрăнкаласа тăнă е вагонăн тепĕр енне чупса каçнă, хăйĕн çунă-çуман аллине палламан пассажирсен хулпуççи çине е чĕркуççи çине именмесĕрех хунă, лешсем ун çине пăхса йăл кулнă. Анчах пĕр хаçат вуласа пыракан господин, те питĕ ывăнса çитнипе, те ларса пырса кичемленнипе, вĕçĕмсĕр анасласа, ача çине пĕр-икĕ хут та сиввĕн пăхса илнĕ; Надежда çавăнтах:

— Халиччен поезд çине ларса курман вăл, пурне те курасшăн,—тесе сăмах хушрĕ.

— Уху...—терĕ те лешĕ, каллех пуçне хаçачĕ çине чикрĕ.

— Петька парикмахер патĕнче виçĕ çул пурăнать ĕнтĕ, вал ăна, ĕçе вĕрентсе, çын тăвăп, тет... Çапла пулсан пит те лайăх пулĕччĕ, мĕншĕн тесен, хам пĕччен хĕрарăм, сывлăхăм та çемçерех, е чирлес тăвас пулсан, е ватăлмалă кунăмра... Манăн шанчăкăм та çавăн çинче анчах...—тесе тем пек çак çынпа сӳтсе-явса калаçас кăмăлĕ пур Надеждăн, анчах çынни питĕ сивĕ те салху ларнипе Надежда калаçма хăяймарĕ, хăй ăшĕнче çеç шухăшласа илчĕ.

Çулăн сылтăм енче муклашкаллă, тĕмескеллĕ, шавах йĕпе пулнипе, ешерекен пĕр лапă курăнать, унăн йĕри-тавра, вылямалли çуртсем пек, пĕчĕкçеççĕ хăмăр çуртсем курăнаççĕ. Çӳллĕ симĕс сăрт çинчи шап-шурă чиркĕвĕ те вылямалли пекех туйăнать, сăрт айĕнче, кĕмĕл пиçиххи пек, шыв йăлтăртатса выртать.

III.

Дачăра малтанхи кунсенче Петька халиччен курман тĕрлĕ япаласем курса тĕлĕнсе кайнă, унăн пĕчĕкçĕ хăравçă чĕри пĕтĕмпе хытса ларнă, вăл ăнтан кайнипе нимĕн тума та пĕлмен.

Çӳлте, унăн пуç тăрринче майĕпе шавласа ларакан вĕçĕ-хĕрри çук хура сĕм вăрман та Петькăшăн питĕ хăрушă пек туйăнать. Çап-çутă, сип-симĕс, тĕрлĕ чечекпе илемленсе, юрласа ларакан вăрман уçланкисене ытарайманнипе ачашлас килет. Тĕттĕм кăвак пĕлĕт ăна хăй патне чĕнет, амăшĕ пек, ун çине пăхса хирĕç кулса тăрать.

Петька темле хăранă пек пулса шартах сикет, шурса каять, çавăнтах йăл кулса ярать, вăрманпа пĕве хĕрринче ватă çын пек майĕпе уткаласа çӳрет. Унта вăл халтан кайса, çăра чĕрĕ курăк ăшне путса, йăваланса выртать, унăн пĕчĕкçĕ хуратутлă сăмси кăна симĕс курăк ăшĕнчен курăнса выртать. Малтанхи кунсенче Петька тăтăшах амăшĕ патне таврăнса, ун çумĕнче сĕркеленсе тăнă; улпут унран: дачăра аван-и?—тесе ыйтсан:

— Аван-çке,—тенĕ вăтанса.

Пурана-киле дачари пуранаç Петькана килти пекех туйӑка пуçларӗ. Тӗнчере Осип Абрамовичпа парикмахерски пуррине те йалтах манчӗ. Надежда Петька çине пӑхса тӑранаймасть. Вӑл хӑй те, хулӑнскер, кухняра вут умӗнче тӑрса, пӑхӑр самовар теслӗ пулнӑ.

— Пӑх-ха! Чӑн-чӑн хуçа пекех тасалса кайрӗ!—тет вӑл ывӑлӗ çине пӑхса. Вӑл, унӑн ачи нумай çинӗрен çапла самӑрланса кайрӗ пулӗ, тесе шухӑшлать. Çиессе Петька питӗ сахал çинӗ, çиес килменнипе мар çимен вӑл, унӑн çисе чӑрманса ларма вӑхӑчӗ пулман: чӑмламасӑрах çӑтмалла пулсан, çапла та тӑвӗччӗ ку, анчах чӑмласа тӑмалла, çав вӑхӑтрах урисене те сулламалла. Надежда хӑй вӑраххӑн кӑна мӗшӗлтетсе çиет, шӑмӑсене кӑшлать, саппунӗпе тавӑрса шӑлать, кирлӗ—кирлӗ мар çинчен калаçса ларать. Петькӑн ӗç пит нумай: кунне пилӗк хут шыва кӗмелле, шешкӗлӗхрен вӑлта аврилӗх касмалла, пулӑ тытма ӑман шырамалла... Çакна пурне те вӑхӑт кирлӗ. Халӗ Петька çаруранах чупать, йывӑр атӑ сӗтӗриччен çаруран пин хут çӑмӑлтарах; пӗрчӗллӗ тӑпра Петька урине е ачашшӑн хӗртет, е шӑнтать. Петька хӑйӗн кивӗ пиджакне тӑхӑнсан, чӑн-чӑн парикмахер пекех пулса каять, пиджакне хывсан, паллама çук, çамраккланса каять. Пиджакне Петька каçхи сулхӑнпа улпутсем пӗве çине кимӗпе ишсе çӳренине курма кайнӑ чух анчах тӑханкалать. Таса тумланнӑ савӑнаçлӑ улпутсем чӳхенсе тӑракан кимӗ çине кулакула лараççӗ. Кимми вара тӑрна куçӗ пек тӑрӑ шыва ерипе касса пырать, шыва ӳкнӗ йывӑç мӗлкисем, çил хускатса янӑ пек, сулланаççӗ.

## IV.

Эрне пӗтеспе улпут хуларан Надеждӑна çыру илсе килсе панӑ. Çыруне улпучӗ вуласа парсан, Надежда йӗрсе янӑ, хӑрӑмлӑ саппунӗпе куçӗсене шӑлкаласа, пӗтӗм питне хӑрӑмласа пӗтернӗ. Такмакласа йӗнинчен çырура Петька çинчен çырни палӑрчӗ. Ку ӗç каç енне кайсан пулнӑ. Петька хыçалти карташӗнче хӑй пӗчченех выляна, çӑвара сывлӑш тултарса, хӑрах ура çинче пӗр картинчен тепӗр картине сиксе куçнӑ; çӑвара сывлӑш тултарсан, сикме çӑмӑлтарах пулнӑ.

Улпут Петька патне пынӑ та, аллине ун хулпуççи çине хурса:

— Епле, ачам, каймалла пулать-и?—тенӗ. Петька вӑтаннипе йал кулнӑ та нимӗн те чӗнмен. „Акӑ тӗлӗнтермӗш", —тенӗ улпучӗ ӑшӗнче.—Каймалла пулать, ачам!—тенӗ вӑл каллех.

Петька каллех кулса янӑ.

Унтан Надежда та пырса: каймалла пулать, ывӑлӑм!—тенӗ куççуль витӗр.

— Ӑçта каймалла?—тенӗ Петька тӗлӗнсе. Хула çинчен вӑл йалтах манса кайнӑ, хӑйӗн каяс килнӗ вырӑнне тупнӑ халӗ вӑл.

— Хӑвӑн хуçу—Осип Абрамович патне.

Ӑçта каймалли пилӗк пӳрне пек палӑрса тӑрсан та, Петька часах çавӑрса илеймерӗ. Анчах çӑварӗ унӑн типсе кайрӗ, чӗлхи çавӑрӑнми пулчӗ.

— Епле апла? Ыран пулӑ тытмалла-çке. Вӑлти те акӑ хатӗр!..

— Мĕн тăвас тетĕн, ачам! Пулăшакан çук, тет, Прокопине чирленипе больницăна леçнĕ, тет. Ан йĕр, ачам, Осип Абрамович лайăх çын вăл, татах та ярĕ-ха сана.

Петька йĕме мар, мĕн каланине те ăнланса-çавăрса илеймест-ха. Ери-ерипе мĕн çинчен каланине Петька ăнланса илчĕ, пысăк çынтан та хытă кăшкăрса, уласа йĕрсе, çĕр çинче йăвалана пуçларĕ. Хыткан чăмăрне чăмăртаса, амăшĕн аллине те, çĕре те, мĕн килчĕ çавна çапать, çивĕч чулсене, хăйăра çапса аллисене ыраттарать, çапах та тата хытăрах ыраттарасшăн хатланнă пек çапкаланать.

## V.

Тепĕр кунне ирхине çичĕ сехетре каякан поездпа Петька Мускава ларса кайнă Каллех ун умĕнчен каçхи сывлăмпа шуралнă ешĕл хирсем ирте-ирте кайнă, анчах халь вĕсем перкуннехи еннелле мар, тепĕр еннелле юлса пынă. Кивĕрех пиджаке ун ырхан кĕлеткине витсе тăнă, ун çухи айĕнчен шурă кĕпе çухин хĕрри курăнса тăнă. Петька вăрт-варт çавăрăнкаламан, чӳречерен те пăхманпа пĕрех, лăпкăн, йăвашшăн ларнă, пĕчĕк çеç аллисене чĕркуççи çине хунă. Куçĕсем унăн ыйăхлă, чĕрĕ мар пулнă, куç айĕнче тата сăмси çумĕнче ват çыннăнни пек йĕрсем палăрса тăнă. Акă вагон чӳречинчен юпасем, платформа стропилисем вĕлт-вĕлт туса иртни курăннă, поезд чарăннă.

Петькăпа амăшĕ, васкакан пассажирсем хушшинче тĕрткеленсе, çĕмĕрлекен урама тухрĕç; ĕмĕтсĕр пысăк хула нимĕн шухăшламасăрах хăйĕн пĕчĕкçĕ парнине çăтса ячĕ.

Эсĕ, анне, вăлтана пуçтарса хур!—терĕ Петька амăшне, парикмахер алăкĕ патне çитсен.

— Пуçтарăп, ачам! Пуçтарсах хурăп! Тен, тата пырăн-ха,— терĕ амăшĕ.

## VI.

Каллех пăчă та тасамар парикмахерскинче: „Ача, шыв!“—тенĕ сасă илтĕне пуçланă, каллех сухал хырма пынă çын аялтан куçкĕски умне пĕчĕкçĕ хура алă тăсăлнине курать, каллех: „Акă тăхта-ха сана!“—тенине илтет. Çапла юнаса калани– çав ыйăхлă ача е шывне тăкса янине, е япалине йăнăш панине пĕлтерет. Çĕрле Николкăпа Петька çывăракан кĕтесре Петькăн çинçе сасси илтĕнет; Петька дачăри пурăнăç çинчен нихăçан пулманнине, никам курманнине, никам илтменнине Николкăна каласа парать.

**СЛОВАРЬ.**

Карлик—питĕ пĕчĕк пӳллĕ çын.

ЫЙТУСЕМ.

1. Петькăн сăн-сăпачĕ вăл парикмахер патĕнче пурăннă чухне мĕнле пулнă? Петькăн парихмахер патĕнчи пурăнăçне кăтартакан татăксене кăтартса парăр.
2. Петька дачăра пурăннă чухне унăн сăн-сăпачĕпе пурăнăçĕ епле улшăннă?
3. Мĕншĕн Петькăпа Николка ачаранпах ĕçлеме пуçланă?
4. Петькăн малашнехи пурăнăçĕ мĕнле пуласси паллă-и? Андреев çак калавра Петька çак йывăр пурăнăçран хăтăлас çулне-йĕрне кăтартса парать-и?
5. Петькăсемпе Николкăсен пурăнăçне чăннипе мĕн улăштарчĕ?

# А. П. ЧЕХОВ

*(1860—1904)*



Антон Павлович Чехов 1860-мӗш ҫулта Таганрогра ҫуралнӑ. Ашшӗ унӑн вак-тӗвек лавкаҫ пулнӑ.

„Ача чухне манӑн ачалӑх кунӗсем пулман",—тесе асӑнать кайран Чехов. Ашшӗ киленче пурӑнма хӗн пулнӑ; унӑн хӑйӗн те час-часах лавкара сутса лармалла пулнӑ.

Вӑл гимназире вӗреннӗ чухнех хӑйӗн ҫырас ӑсталӑхне палӑртнӑ. Университетра вӗреннӗ чух калавсем ҫырнипе тӑранса вӗренсе пурӑннӑ. Хӑй калавӗсенче Чехов тӗрлӗ ушкӑн ҫыннисене: взятка илме юратакан чиновниксене, чин умӗнче чураланса пуҫ таякан ҫынсене, чухӑн хресченсене, кулаксене, помещиксене сӑнласа кӑтартнӑ. Чеховӑн ачасем валли ачасем ҫинчен ҫырнӑ калавсем те пур.

„Ванька" ятлӑ калавра Чехов крепосла саманапа ҫыхӑннӑ чухӑн хресчен ҫемьинчен тухнӑ ачан пурӑнӑҫӗпе паллаштарать. Килте чухӑн пурӑннӑ пирки Ванька пӗчӗклех Мускава атӑ ӑсти патне вӗренме лекет те ҫав тери хӗн-хур, асап тӳсет.

Хӑй произведенийӗсенче Чехов тӗттӗмлӗхпе, пусмӑрлӑхпа кӗрешет.

Чехов 1904-мӗш ҫулта чахотка чирӗпе вилнӗ.

## Ванька.

Тӑхӑр ҫулхи Ванька Жуков Аляхин атӑҫӑ патӗнче виҫӗ уйӑх вӗренсе пурӑнать. Сурхури каҫ вӑл ҫывӑрма выртмарӗ. Хуҫисемпе аслӑ тарҫисем чиркӗве тухса кайсан, вӑл хуҫа шкапӗнчен чернил кӗленчи, ручка тата тутӑхса кайнӑ перо илчӗ те умне лутӑрканнӑ хут листи сарса хучӗ, ҫырма тапратрӗ. Ҫырма пуҫличчен вӑл алӑкпа чӳречесем ҫинелле темиҫе хут та шиклесерех ҫаврӑнса пӑхрӗ, унтан хуралса кайнӑ турӑшсем ҫине чалӑшшӑн пӑхса илчӗ. Турӑшсен ик айӑккипе калӑп лартса тухнӑ ҫӳлӗксем. Унтан Ванька ассӑн сывласа ячӗ. Хутне тенкел ҫине хучӗ, хӑй тенкел умне чӗркуҫланса тӑчӗ.

„Савнӑ асатте, Константин Макарч!—тесе ҫырчӗ вӑл.—Сана ҫыру ҫыратӑп. Сурхури ячӗпе сана салам яратӑп. Турӑ мучи-

рен сана пур ырлăх та пултăрччĕ. Ман аттем те, аннем те çук, пĕр эсĕ анчах юлтăн", — тесе малалла çырчĕ Ванька. Унтан çутнă çурта çути курăнакан тĕттĕм чÿрече çинелле пăхрĕ те хăйĕн аслашшĕне астуса илчĕ.

Унăн аслашшĕ Живарев улпутсем патĕнче çĕрлехи хуралçăра пурăнать. Вăл 65 çулхи старик, лутра, ырхан, анчах тĕлĕнмелле çивчĕ, çăмăл шăмшаклă старик. Унăн мухмăрла куçĕсем ялан кулса тăраççĕ. Кăнтăрла вăл тарçăсен кухнинче çывăрать е апат пĕçерекен хĕрарăмсемпе мыскара туса ларать. Каç пулсан, саплăклă лĕпсĕрkке тăлăп тăхăнса, килçурт йĕри-тавра хурал шакка-шакка çÿрет. Ун хыççăн, пуçне усса, ватă Каштанкăпа Вьюн пыраççĕ.

Халĕ аслашшĕ лăпах кил алăкĕ умĕнче кил тарçисемпе мыскара туса тăрать пулĕ. Вăл хурал шаккине пиçиххи çине çакнă, аллисемпе çупкалать, сивĕрен хутланать, çинçе ватă сассипе хихиклетсе кулать.

— Табак туртапăр-и мĕн?—тет те хĕрарăмсене табак хутаççи сĕнет.

Лешсем шăршлаççĕ те ачху тăваççĕ. Аслашшĕ калама çук савăнать, хĕпĕртесе, ахăлтатса кулса ярать.

— Шăлса пăрахăр, шăнса ларчĕ!—тет. Йыттисене те табак шăршлаттарать. Каштанка шăршлать те пуçне силлекелет, кăмăлсăр пулса, аяккалла пăрăнать. Вьюнĕ, хисепе хурса, сăмсаран та ĕсĕрмест, хÿрине анчах пăтратать.

Çанталăкĕ тата питĕ лайăх, сывлăш лăпкă, уяр, уçă. Çĕрĕ тĕттĕм пулин те, ял пĕтĕмпех курăнать. Шурă çурт çийĕсем, нÿрт трубисенчен тĕтĕм мăкăрланни, пасла кĕмĕлленсе ларнă йывăççем, кĕртсем курăнаççĕ. Пĕлет çинчи çăлтăрсем пытанмалла выляççĕ. Хуркайăк çулĕ те, праçнике хирĕç юрпа çуса тасатнă пек, лайăх палăрать.

Ванька ассăн сывласа илчĕ те, перине чернил ăшне пуçса, каллех çырма тапратрĕ.

„Ĕнер мана пĕрре хытă çакланчĕ. Хуçа ачине сиктернĕ чух сисмесĕр çывăрса кайнăшăн хуçа мана çÿçрен тытса тула сĕтĕрсе тухрĕ те хуçкалантарчĕ анчах. Иртнĕ эрнере хуçа майри мана пулă тасатма хушрĕ. Эпĕ тасатма хÿринчен пуçларăм та, çавăншăн мана хуçа майри йăлтах питрен пулă пуçĕпе тĕксе пĕтерчĕ. Аслă тарçăсем манран кулаççĕ, хупаха эрех илме яраççĕ, хуçа хăярне вăрлама хушаççĕ. Хуçи, мĕн алла кĕрет, çавăнпа çапать.

Çимелли ним те çук. Ирпе çăкăр, кăнтăрла кăшт пăтă, каçпа каллех çăкăр. Чайне, аш шÿрпи таврашне хуçисем хăйсем кÿпеççĕ. Мана пÿртумĕнче çывратаççĕ. Вĕсен ачи макăрма тапратсан, эпĕ кăшт та çывраймастăп, çаплах сăпка сиктеретĕп.

Юратнă асатте, турă пул, мана кунтан яла илсе кай, кунта чăтса ниепле пурăнма халăм та çук. Сана ÿксе пуççапатăп, ĕмĕр саншăн турра кĕлтăвăп, илсе кай мана кунтан, ахалĕн вилетĕп".

Ванька шăлĕсене йĕрсе пăрахрĕ, лапăрчăклă аллисемпе куçĕсене сĕркелесе йĕме тытăнчĕ.

„Эпĕ сана табак вĕтетсе парăп,—терĕ вăл, каллех çырма тапратса:—саншăн турра кĕлтăвăп; итлемесен, хĕнесе йытă вилли ту. Мана, ĕç тупаймасть, тетĕн пулсан, приказчик патне тархасласа атă тасатма кĕрĕп е Хĕветĕр вырăнне сысна кĕтӳ пăхма кĕрĕп. Савнă асаттем, кунта мана пурăнма нимĕнле май та çук, пĕр вилĕм анчах. Пĕрре çуранах яла пырас терĕм те, атă çук пулчĕ, сивĕрен хăрарăм. Ӳссен, эпĕ сана никама та хĕсĕрлеме памăп, вилсен те саншăн турра кĕлтăвăп.

Мускав пысăк хула. Пӳрчĕсем пурте улпутсен пек, утсем те нумай, сурăхсем çук, тата йыттисем те хаяр мар. Тата пĕрре эпĕ пĕр лавкара куртăм: чӳрече умĕнче вăлтасем сутаççĕ, çиппи-мĕнĕпех, тĕрлĕ пулă валли те пур, питĕ хаклăскерсем пулмалла, пĕр вăлти пĕр пăт туртакан çуйана та чăтĕ. Тата пăшал лавкисем пур, унта улпут пăшалĕ пеккисем пур, хăшĕсем, тен, çĕр тенкĕ тăраççĕ пулĕ. Аш лавкисенче тĕрлĕ кайăк ашĕ сутаççĕ: пăчăр, чĕпĕ, ăсан, мулкачă ашĕсем, вĕсене ăçта тытнине лавка хуçисем каламаççĕ тата. Савнă асатте, улпутсен ĕлка пулсан, мана валли ылттăн мăйăр ил те симĕс арчана хур. Ольга Игнатьевнăран ыйтса пăх, Ивана валли, те".

Ванька ассăн сывласа ячĕ те каллех чӳрече çинелле пăхма тапратрĕ. Вăл улпутсем патĕнче чух аслашшĕпе пĕрле ĕлка валли чăрăш касма кайнине астуса илчĕ. Пасланса ларнă çамрăк чăрăшсем пĕр тапранмасăр лараççĕ, хăшĕн малтан вилмеллине кĕтеççĕ. Унччен те пулмасть, таçтан сасартăк сиксе тухса, кĕрт тăрăх мулкачă вĕçтерсе пырать. Аслашшĕ кăшкăрмасăр чăтаймасть:

— Тыт, тыт, тыт! Э-э-э, хӳресĕр явăл!—тет. Каснă чăрăшне аслашшĕ улпутсем патне йăтса каять, унта вара ăна капăрлатаççĕ. Пуринчен ытла унпа Ванькăна юратакан улпут хĕрĕ Ольга Игнатьевна тăрăшать. Ванька амăшĕ, Пелагея, ĕлĕк улпутсен çуртĕнче пурăннă. Çавăн чух Ольга Игнатьевна ăна тутлă премĕксем паркаланă; ĕççĕр аптранăран, Ванькăна çырма та, вулама та, çĕр таран шута та вĕрентнĕ, тата ташлама та вĕрентнĕ. Амăшĕ вилсен, Ванькăна тарçăсен кухнине аслашшĕ патне куçарнă, кухнăран Мускава Аляхин атăçă патне вĕренме панă...

„Савнă асатте, кил,—тесе çырма тапратрĕ вăл каллех.—Тархаслатăп сана, илсе кай мана кунтан. Хĕрхен мана, телейсĕр тăлăха. Мана кунта питĕ хĕнеççĕ, çиес килет, калама çук кичем, çаплах макăратăп. Ĕнер мана хуçа калăппа çапрĕ те,—кайсах ӳкрĕм, аран тăна кĕтĕм. Сывă пул! Ман пурăнăç йытă пурăнăçĕнчен те усал... Тата Еленăна салам кала, суккăр Егора, ямшăка та салам кала. Ман хуткупăса никама та ан пар. Сан мăнуку Жуков Ванька. Савнă асаттем, илме кил".

Çырнă хутне Ванька тăваткалласа хуçлатрĕ те ĕнер пĕр пуса илнĕ конверт ăшне чикрĕ. Кăшт шухăшласан, перине чернил ăшне пуçса илчĕ те конверчĕ çине адресне çырчĕ:

„Асатте ялне".

Унтан хыçкаланчĕ, пăртак шухăшларĕ те: „Константин Макарча" тесе хушса çырса лартрĕ. Çыру çырма никам та кансĕрлеменшĕн

хĕпĕртенипе, çĕлĕк тăхăнчĕ те, кĕрĕкне уртмасăрах, кĕпе вĕççĕнех урамалла тухса чупрĕ.

Ĕнер ăна аш лавки хуçисем: çырусене урамри почта арчине яраççĕ, вара унтан вĕсене ямшăксем виçшер лаша кӳлсе шăнкăравсемпе çутçанталăк тăрăх салатса çӳреççĕ,—тесе каланă.

Ванька çывăхри почта ящикĕ тĕлне çитсе тăрсанах, хăйĕн хаклă çыруне хушăк витĕр ярса хăварчĕ...

Вăл чунне тутлă ĕмĕтсемпе пусарса, тепĕр сехетренех хытă çывăрса кайрĕ. Тĕлĕкре кăмака çинче аслашшĕ ларать пек, çара урисене çĕрелле уснă. Унăн çырӳне апат пĕçерекен арăмсене вуласа кăтартать пек. Вьюнĕ кăмака патĕнче хӳрине пăтратса çӳрет пек.

## ЫЙТУСЕМ

1. Ку калав камăн пурăнăçĕпе паллаштарать? Ванька ăçта, мĕнле ĕçре пурăнать?

2. Ванька аслашшĕ ăна каялла хăй патне илме пултарать-и?

3. Ял ун куçĕ умĕнче мĕнле курăнать? Ял пурăнăçĕн картинĕсенчен ăна мĕнлисем аса килеççĕ?

4. Мĕншĕн ăна ял пурăнăçĕн лайăх енĕсем анчах аса килеççĕ? Ялта уншăн хĕн-хур, асап пулман-щи?

5. Ванькăн пурăнăçне калавра мĕнле кăтартнă? Хăй пурăнăçĕ çинчен вăл мĕнле сăмахсемпе калать?

6. Пысăк хула Ванькăна мĕнпе тĕлĕнтерет?

7. Чехов Ванькăпа ун пеккисене йывăр пурăнăçран хăтăлас çула кăтартса парать-и?

## САНАМАЛЛИ ĔÇ.

1. а) Ĕнер мана питĕ хытă çакланчĕ
   у) Хуçи мана çӳçрен тытса тула сĕтĕрсе тухрĕ те хуçкалантарчĕ анчах.
   ы) Чайне, аш шӳрпи таврашне хуçисем хăйсем кӳпеççĕ.
   ă) Ванька ассăн сывласа илчĕ.
2. а) Ĕнер мана питĕ хытă хĕнерĕç.
   у) Хуçи мана çӳçрен тытса тула чăсса тухрĕ те çаптарчĕ анчах.
   ы) Чайне, аш шӳрпи таврашне хуçисем хăйсем çиеççĕ.
   ă) Ванька сывласа илчĕ.

Çак 1-мĕшпе 2-мĕш ĕç пайĕсенчи сăмахсене танлаштарса пăхăр.

Вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур?

Пĕр евĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсене кăтартăр.

3. Тĕрлĕ тĕслĕ предложенисем туса, çак пĕр евĕр ăнланакан сăмахсен пĕлтерĕшĕсен уйрăмлăхне кăтартăр:
   а) Хăлтăр-халтăр, кăш-каш, лăш-лаш, кăли-кали, çиелтен.
   у) Тархаслать, йăлăнать, тилмĕрет.
   ы) Илĕртет, йăпатать.

# ВИКТОР ГЮГО.

(1802—1885)

Виктор Гюго—французсен писателĕ.

Виктор Гюго хăйĕн произведенисенче чухăнсем ҫинчен, ашшĕ-амăшĕ ҫуккипе тĕрлĕ ҫĕрте ҫӳресе тăранкаласа пурăнакансем ҫинчен ăшă кăмăлпа, вĕсен хутне кĕрсе ҫырнă. Вăл „Гаврош" ятлă калавра Париж урамĕ тăрăх ҫапкаланса ҫӳрекен пĕр ача пурнăҫĕпе паллаштарать. Ҫак кĕнекере „Гаврош" ятлă калавăн вĕҫне кăна, Гаврош баррикадăра ҫапăҫни ҫинчен ҫырнине кĕртнĕ. Кунта Францири революци вăхăтĕнчи урамри ҫапăҫусене ҫутатса ҫырнă. Гаврош вирлĕн ҫапăҫнă, хăй пуҫне революцишĕн хунă.

## Гаврош.

I.

Париж хулинче тата ун таврашĕнче тек-текех пĕр вунпĕр-вуникĕ ҫулхи ача ҫапкаланса ҫӳренĕ. Юлташĕсем ăна Гаврош тесе чĕннĕ. Гаврош ним шухăшсăр ахăлтатса кулнă, анчах пурăнăҫ уншăн пушă та тĕксĕммĕн курăннă. Ҫине вăл яланах питех те кулăшла: арҫын йĕммипе майра кофти тăхăнса ҫӳренĕ. Йĕмне ăна тăван ашшĕ мар парнеленĕ, кĕпине амăшĕ мар панă. Унăн ашшĕпе амăшĕ те пулнă, анчах вĕсем уншăн тăрăшман.

Гаврошăн пурнăҫ нимрен ытла урамра лайăх пулнă.

Ашшĕпе амăшĕ ăна пурнăҫ тутине пĕлме чĕркуҫҫипе тапса урама кăларса янă.

Гаврош килĕнчен тухса тарнă.

Ачи вăл шавлă, шуранка, ҫăмăл, тăрăхлама юратакан ҫивчĕ ача пулнă. Вăл урам тăрăх сулланса ҫӳренĕ, юрăсем юрланă, выляна, тĕрлĕрен таса мар ҫӳпĕ-ҫапă куписем ҫинче чаваланнă. Тепĕр чухне тата кушаксемпе салакайăксем пек хаваслăн пĕр-пĕр никама кирлĕ мар япалана ҫаклатнă. Урам ачи тесе чĕнсен—кулнă, ҫапкаланчăк, ыйткалакан тесен—ҫиленнĕ. Унăн килĕ те, ҫăкăр та, нимĕн те пулман, никам та ăна юратман; ҫапах та вăл хăй хаваслă, ирĕклĕ пулнă.

Анчах вăл ҫав тери пĕччен, манăҫа юлнă ача пулсан та, ҫапах ик-виҫ уйăхра пĕрер хут: „Аннене кайса курма вăхăт ҫитрĕ пуль",—тесе шухăшласа илнĕ. Вăл вара пысăк бульварсемпе Сен Мартен хапхинчен уйăрăлса шыв хĕрринчи урамсене аннă та кĕперсем урлă каҫнă; чухăн вырăнта ларакан пĕр лапчăк лаҫ пек лутра пӳрт умне пырса тăнă.

Гаврош киле таврăнсан та чухăн пурнăҫа ҫеҫ курнă. Вăл нимрен ытла хăйĕн ҫине никам та ăшă кăмăлпа пăхманшăн

хуйхӑрнӑ, пурте хӑйсен сивӗ, пушӑ килӗ пекех сиввӗн пӑхнӑ. Алӑк янаххи урлӑ каҫсанах, унран ҫапла ыйтнӑ:

— Ӑҫтан сиксе тухрӑн эсӗ?

— Урамран,—тенӗ вӑл.

Килтен кайнӑ чухне тата:

— Ӑҫта каятӑн?—тесе ыйтсан:

— Урама,—тенӗ вӑл каллех.

Нӳхрепре ӳсекен шуранка курӑк хӗвел ҫутине курман пекех, ҫак ача та ӑшӑ кӑмӑлпа юратӑва пӗрре те курман.

II.

Ҫав вӑхӑтра Парижра мӗн пулса иртнӗ-ха?

Францире атмосфера каллех хӑрушӑланнӑ. Ӗҫхалӑхӗн пурӑнӑҫӗ япӑхланнӑ, рабочисем ҫӑкӑрсӑр ларнӑ. Парижра пӑтраннӑ, Лионра пролетариат кӗрешнӗ.

Чухӑнлӑха пӗтермелле, пуянсем чухӑнсене тертлентерессине тӗп тумалла, ӗҫукҫине мӗн чухлӗ ӗҫленине кура тӳлемелле, ачасене пурне те укҫасӑрах вӗрентмелле, халӑха ҫутта кӑлармалла, ҫав вӑхӑтрах тата никамӑн та алӑсене пушӑ ҫӳретмелле мар, кашни валлиех ӗҫ пулмалла,—ҫапла каланӑ социализм.

Хупахсенче усҫӑнах: ҫапӑҫмалла-и, е тӑхтамалла?—тесе сӳтсе-явнӑ. Рабочисенчен, паллӑ парсанах урама пӗр харӑс тухмалла, тесе сӑмах илнӗ. Нӳхрепсенче, подвалсенче прокламацисем вуланӑ. Полици пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав прокламацисенче „правительствӑна вӑрҫни“ курӑннӑ.

Пӗр рабочи: „Эпир виҫҫӗр ҫын кашнинчен вуншар су пуҫтарсан та, ҫӗр аллӑ франк пулать. Вӗсене пульӑсемпе тар илнӗ ҫӗре ямалла“,—тенӗ.

Тепри: „Тепӗр икӗ эрнерен пирӗн йыш ҫирӗм пилӗк пин ҫынна ҫитет, эпир ун чухне хамӑр вӑйсене чӑнласах патша правительстви вӑйӗпе танлаштарса пӑхӑпӑр“,—тенӗ.

Виҫҫӗмӗшӗ тата: „Эпӗ нихҫан та каҫ-каҫ ҫывӑрмастӑп, мӗншӗн тесен каҫсенче патронсем хатӗрлетӗп“,—тенӗ.

Урамсенче прокламацисем ҫыпӑҫтарса ҫӳренӗ.

Пысӑк Париж аварласа лартнӑ тупӑ еверлӗ пулнӑ, пӗр хӗм тивсенех, тупӑ тапса сикме хатӗр тӑнӑ.

1832-мӗш ҫулхи июнӗн 5-мӗшӗнче Ламарк генерал виллине пытарнӑ. Париж тӑрӑх чаплӑ пытару процессийӗ иртсе пынӑ. Ламарк генерал тупӑкне икӗ батальон хура пусмапа витнӗ барабансемпе, ҫӑварӗсене аялалла туса тытнӑ пӑшалсемпе, вунӑ пин наци гвардейцисем хӗҫсене ҫакса ярса, наци гвардийӗн артиллери батарейӗсем конвойласа пынӑ. Тупӑк хыҫӗнчен шутласа пӗтерейми хусканса кайнӑ халӑх ушкӑнӗ утнӑ.

Унтан тата рабочисем—грузчиксем, каменщиксем, плотниксем, малярсем, кантӑк лартакансем, наборщиксем хӑрушӑ ушкӑнӑн утса пынӑ. Балконсем ҫинчен, чӳречесем витӗр вӗсем ҫине буржуйсем хӑраса пӑха-пӑха илнӗ.

Правительство асӑрханса тӑнӑ, ҫарне хатӗр тӑратнӑ. Унӑн ҫирӗм тӑватӑ пин салтак хулара, тата хула тулашӗнчи вырӑнсенче вӑтӑр пин салтак пулнӑ.

Бастилия площадĕнче процесси çумне çĕнĕрен халăх ушкăнĕсем хутшăнна. Сасартăк халăх ушкăнĕнче кăшкăрнă сасă илтĕннĕ:

— Драгунсем килеççĕ!

Утса пыракан халах ушкăнĕ çарпа хирĕç пулнă та, пысăк тăвăл ахăрса кайнă. Чулсем вăркăнма пуçланă, пăшалсенчен пеме тытăннă, утлă çар хĕçпе пырса кĕнĕ. Халăх ушкăнĕ ăçта кирлĕ унталла тарма пуçланă. Çав вăхăтрах Париж хĕрринчи урамсенче: „Хĕçпăшал тытăр!" тесе чĕнекен паттăрла сас çĕкленнĕ. Студентсемпе рабочисем баррикадăсем тума тытăннă. Пичкесем кустарнă, çул çине сарнă чулсене кăларса, кирпĕчсем, сĕтелсем, хăмасем купаласа, баррикадăсем тунă.

Пĕр сехет те иртмен, баррикадăсем çĕр айĕнчен шăтса тухнă пек нумайланса ӳссе ларнă. Каçалапа Парижăн виççĕмĕш пайĕ пăлхавçăсен аллинче пулнă.

Буржуази хăраса ӳкнĕ. Пур çĕрте те алăксене, чӳречесене, чӳрече хупписене хупса лартнă.

## III.

Хĕпĕртенипе çиççе çутăлакан Гаврош савăнса калла та малла чупса çӳренĕ: баррикада çине кармакланса улахнă, унтан каялла аннă, шавлана, вăл пур çере те çитсе курнă. Вăл, каснă-лартнă, çавраçил пекех пулнă. Вăл çитмен кĕтес те юлман. Унăн уçă сасси пĕр минутлăха та чарăнман. Пысăк баррикада ăна хăйĕн хулпуççийĕсем çинче пек туйăнса тăнă. Вăл еçлемесĕр ларакансенчен кулнă, кахаллисене ĕçлеттернĕ, ывăнса çитнисене хавхалантарнă, теприсене çилентернĕ, виççĕмĕшсене йăлăхтарса çитернĕ, пĕр самахпа каласан, вăл пурне те пырса тăрмашланă. Пĕрисем патĕнчен теприсем патне чупса пынă. Шăна пек унта та кунта та шавлăн хыпаланса çӳренĕ.

— Хăюллăнрах! Йăвантарăр чулсене! Тата! Пичкесене ытларах хурăр! Сирен баррикада пĕчĕк! Вăл ниме те юрăхлă мар! Мĕн тĕл пулнине йăлтах кунталла сĕтĕрĕр! Çав çурта ватăр! Пăхăр-ха! Кунта, ав, кантăк алăк пур!

Вăл кашни çумнех пыра-пыра çулăхнă:

— Пар-ха мана пăшал! Мана пăшал кирлĕ! Мĕншĕн ха мана пăшал памаççĕ?

Каç пулнă. Урамра никам та курăнман. Уççăн мар шавлани, тапхăрăн-тапхăран пăшал пени илтеннĕ. Анчах вăл та сайра хутра тата аякран çех килсе çапăнна. Вăхăта çакăн пек вăраха тăсса тăни правительство хăйĕн вăйне хатĕрленине кăтартнă. Аллă революционер утмăл пинлĕ çар килессине кĕтсе тăнă.

Революционер Анжольра кĕтмелле пулнипе тарăхса çитнĕ. Хăрушлăхсем çитсе перенес умĕн хастар çынсемпе çапла пулать. Вăл Гавроша шырама кайнă.

Гаврош пĕчĕк хупахра тенкел çинче тĕксĕммĕн çунса ларакан икĕ çурта умĕнче патронсем хатĕрлесе ларнă. Шалти çутă урамран курăнман. Çӳлти хутлăхсенче тата çутă пачах та пулман.

— Итле-ха, эсĕ пĕчĕккĕ. Сана асăрхаймаççĕ. Баррикадăсем хыçне тух та çуртсем хĕррипе шăвăнса кай, урамсем тăрăх çӳре-



келе. Таврӑнсан вара унта мӗн курни ҫинчен пире каласа парӑн, – тенӗ Анжольра.

— Пӗчӗккисем вӗсем юрӑхлӑ пулма пултараҫҫӗ,—тесе ответленӗ Гаврош шӑрпӑклансарах.—Мӗнех вара? Эпӗ кайӑп.

Ача аллине ҫар ҫынни пек ҫӗклесе честь панӑ та хаваслӑн чупса тухса кайнӑ.

## IV.

Башня ҫинче сехет вуннӑ ҫапнӑ. Анжольрапа унӑн юлташӗ Комбефер, пӑшалӗсене аллисене тытса, пӳртсемпе баррикада хушшинче ларнӑ. Вӗсем пӗр чӗнмесӗр аякра сасӑсар утнисене итленӗ. Сасартӑк тӗксӗм шӑплӑхра Сен-Дени урамӗ енчен янравлӑ сасӑ илтӗнсе кайнӑ. Такам автан кӑшкӑрнӑ пек пӗтекен юрра тӑснӑ унта.

— Ку Гаврош вӗт,—тенӗ Анжольра.

— Вӑл пире систерет,—тенӗ Комбефер.

Хӑвӑрттӑн утса пыни ҫынсӑр урамӑн шӑплӑхне хускатнӑ. Унччен те пулман, урапа тӑрӑх Гаврош упӑте пек ҫӑмӑллӑн чакаланса хӑпарнӑ. Вӑл баррикада ӑшне сиксе аннӑ. Сывлӑшне аран-аран ҫавӑрса янӑ хыҫҫӑн ача ҫапла каланӑ:

— Манӑн пӑшалӑм ӑҫта? Вӗсем килеҫҫӗ!

— Манӑн карабина илме кӑмӑл пур-и?—тесе ыйтнӑ унтан Анжольра.

— Ҫук, мана пысӑк пӑшал кирлӗ,—тесе ответленӗ Гаврош.

Икĕ часовой баррикадăна Гаврошпа пĕр вăхăтра пекех таврăннă. Кĕперсемпе базар енче тăракан часовой çех поста пăрахса кайман. Çарсем вăл енчен килмен пулас.

Баррикадăна хÿтĕлекенсем, çапăçăва хатĕрленсе, хăйсен вырăнĕсене тăнă.

Темиçе минут иртнĕ хыççăн, нумайăн, сулăмлăн, харăс утни илтĕнсе кайнă. Сасă пĕр чарăнмасăр лăпкăн та хăрушшăн çывхарса пынă. Унччен те пулман, сасартăк вăл илтĕнми пулнă. Урам вĕçĕнче çынсем нумайăн пĕр харăс хашлатса сывласа илнĕ пек туйăннă. Анчах никам та курăнман; чи шалта, çăра тĕттĕмлĕх ăшĕнче çех хисепсĕр тимĕр çипсем курăннине уйăрса илме май пулнă. Вĕсем факел ялкăшнипе катаран çуталакан штыксемпе пăшал кĕпçисем пулнă.

Сасартăк çав тĕттĕмлĕхрен хăрушă сасă илтĕнсе кайнă:

— Кам килет?

Çав вăхăтрах пăшалсем чанкăртатни илтĕнсе кайнă. Анжольра уççăн та мăнкăмăллăн ответленĕ:

— Францири революци!..

— Перĕр!—илтĕннĕ команда пани.

Вут çути ялтăртатса кайса пÿрт пуçĕсене çутатнă, хĕрсе çитнĕ кăмака алăкĕ пĕр самантлăх уçăлса хупăннă пек туйăннă.

Баррикада çийĕнче харăссăн пăшалсенчен пени хăрушла илтĕнсе кайнă. Хĕрлĕ ялав çĕре ÿкнĕ. Пени çав тери вăйлă та çăра пулнă, вăл ялав аврине çĕçĕпе каснă пекех татса кайнă. Пÿрт карнизĕсем çине пырса çапăннă пульăсем аяккалла сиксе ÿксе, баррикада ăшне сирпĕннĕ те темиçе çынна амантнă.

— Юлташсем,—тенĕ Анжольра,—тара тирпейлĕ тыткалăр! Вĕсем урамра курăнмасăр ан перĕр. Чи малтан ялава тăратса лартăпăр!

Вăл хăйĕн ури патне персе аннă ялава аллине пуçтарса тытнă.

## V.

Нумаях кĕтмелле пулман.

Малтанхи тупă курăннă.

Баррикада çинчен пăшалсенчен пĕр шутлăн та харăссăн пени илтĕнсе кайнă. Тĕтĕм тупăпа çынсене хура явлăк пек хупласа илнĕ те куç умĕнчен çухатнă. Темиçе минут иртнĕ хыççăн тĕтĕм пĕлĕчĕ сирĕлсе кайнă. Тупăпа çынсем каллех умма тухса тăнă.

Туппа баррикада çумнелле майĕпе, хумханмасăр, пĕр васкамасăр шутарса пынă. Никама та амантман. Унтан команда паракан офицер тупăпа тĕллеме пуçланă.

Тепĕр минутран туппа урам варрине майлаштарса лартнă. Унăн карăлнă çăварне баррикада çинелле тĕлленĕ.

— Пăшалăрсене авăрлăр!—тесе команда панă Анжольра.

Баррикада ядро пырса çапнине тÿсĕ-ши? Вăл баррикадăра шăтăк тумĕ-ши? Çак ыйтусем тухса тăнă. Революционерсем пăшалĕсене çĕнĕрен авăрланă вăхăтра артиллеристсем хăйсен туппине авăрланă.

Тупа кӗреслетсе илнӗ те, ядро ывтӑнса тухса кайнӑ.

— Кунта!—тесе илтӗннӗ пӗр ҫивӗч сасӑ.

Ядро баррикада ҫине пырса ӳкнӗ, вӑл ҫӗмрӗк япаласен купи ӑшне чикӗнсе ларнӑ. Вӑл нумаях сиен тӑвайман: урапа кусатранне ватса пӑрахнӑ тата тепӗр кивӗ урапана тӗп тунӑ. Ҫавӑнпа та баррикада ҫинчисем кулса янӑ.

— Ӗҫе малалла ярӑр!—тесе кӑшкӑрнӑ баррикада ҫинчен тахӑшӗ артиллеристсене.

Ҫав вӑхӑтра Анжольра хӑй ҫапӑҫакан вырӑнтан тӑшмансене тимлӗн сӑнаса тӑнӑ.

— Пуҫӑрсене стена ҫумнерех пӗшкӗртӗр!—тесе кӑшкӑрнӑ Анжольра.—Баррикада тӑрӑх чӗркуҫҫисем ҫине тӑрса тухӑр!..

Анчах канонирсем пӗр хӑрӑссӑн персе яни приказа пурӑнӑҫа кӗртиччен маларах илтӗннӗ. Икӗ ҫынна вӗлернӗ, виҫӗ ҫынна амантнӑ.

Ҫав тери персе тӑнине хирӗҫ баррикада чӑтса тӑма пултарайман. Картечь шалах кӗме пуҫланӑ.

Ҫапӑҫу чарӑнман. Пӑшал пенисемпе картечь умлӑ-хыҫлӑ черетленсе тӑрса, баррикадӑна ерипенех ишӗлтерсе пынӑ.

— Чармалла ку тупӑсене!—тенӗ Анжольра.—Артиллеристсене теллесе перӗр!—тесе кӑшкӑрса янӑ вӑл.

Пурте малтанах хатӗрленсе тӑнӑ, ҫавӑнпа та баррикада хавассӑн, ҫине тӑрсах пеме пуҫланӑ. Улта-ҫичӗ хут хӑрӑссӑн персе янӑ хыҫҫӑн урам хушши куҫ курми тӗттӗмленсе килнӗ. Темиҫе минут иртнӗ хыҫҫӑн, ҫулӑмпа каскаласа пӗтернӗ тӗтре витӗр тупӑ кусатранесем айӗнче йӑраланса выртакан артиллеристсене уйӑрса илме май килнӗ. Чӗррӗн юлнисем тупӑсем патӗнчен тӑтӑлма пӗлмесӗр кускаласа ҫӳренӗ пулсан та, пересси кӑштах лапланнӑ.

— Епле шай килчӗ!—тенӗ баррикада ҫинчи революционерсенчен пӗри Анжольра еннелле пӑхса.—Ку пирӗн пысӑк ҫитӗнӳ!

Анжольра пуҫӗпе сулкаласа илнӗ те:

— Тепӗр чӗрек сехет хушши ҫакӑн пек ҫитӗнӳ пырсан, баррикада ҫинче вунӑ патронтан ытла та юлмӗ,—тенӗ.

Гаврош ҫак сӑмахсене илтнӗ.

## VI.

Баррикада ҫинчисем такам, урама анса, пӑшал пенӗ ҫӗртех тӑнине асӑрхаса илнӗ. Гаврош хупаха кӗрсе кӗленчесем тултармалли корзинка туяннӑ. Вара ушкӑнран вӑрттӑн шӑвӑнса тухнӑ та, вӗлернӗ наци гвардеецӗсен патронташӗсене ним шикленмесӗрех хӑйӗн корзинки ӑшне пушатма тытӑннӑ.

— Мӗн тӑватӑн эсӗ?—тесе кӑшкӑрнӑ ӑна баррикада ҫинчен.

Гаврош пуҫне ҫӗклене те:

— Эпӗ корзинка тултаратӑп,—тенӗ.

— Курмастӑн-им картечьсене?

— Ҫӑмӑр ҫӑвать, мӗнех пур вара унта?—тесе ответленӗ вӑл.

— Каялла таврӑн!—тесе кӑшкӑрнӑ Анжольра.

— Халех,—тенӗ те Гаврош, хӑй урам тӑрӑх чупса кайнӑ.

Чул сарнӑ урам хушшинче çирӗм вилӗне яхӑн йӑваланса выртнӑ. Пӗр-ик десяткӑна яхӑн патронташ—баррикада валли хатӗрленӗ тар пулнӑ.

Урамра тӗтре хупӑрласа илнӗ пек тӗтӗм тӑнӑ. Вӑл пӗрре хуллен çӳлелле хӑпарнӑ, тепре каллех аялалла шуса аннӑ. Çавӑнпа та урамра тӑр кӑнтӑрлах çӗрлехи пек тӗттӗм пулнӑ. Çак кӗске урамӑн икӗ енӗпе çапӑçакансем пӗр-пӗрне аран-аран уйӑрса илме пултарнӑ. Ку тӗттӗм чухах пулнӑ Гавроша.

Пӗчӗк пӳллӗскер, вӑл тӗтӗм ӑшӗнче салтаксем асӑрхайман çӗрте чылай аякка кайма пултарнӑ. Малтанхи ултӑ-çичӗ патронташне те ним шикленмесӗрех пушатма ӗлкӗрнӗ.



Вӑл хырӑмӗ çине выртса шунӑ, корзинкине шӑлӗпе çыртса, упаленсе малалла пынӑ. Упӑте мӑйӑра шӗкӗлченӗ пек, пӗр вилӗ патӗнчен тепри патне куçса, патронташсене пушатнӑ вӑхӑтрах пӳне-сине хутлаткаланӑ, явкалантарнӑ, каялла шунӑ.

Малтанлӑха Гаврош баррикада патӗнчен аякрах пулман, çавӑнпа та ӑна каялла чӗнсе илесшӗнех те пулман, мӗншӗн тесен тӑшмансем асӑрхасран хӑранӑ. Вӑл хӑйне хӑй туймасӑрах малалла та малалла пынӑ, пӑшал пенипе тухакан тӗтӗм ытлашшиех çӑра мар вырана çитсе тухнӑ.

Кӑвак чултан тунӑ стена тӑрӑх выртса тухнӑ стрелоксем те, урам кӗтессинче хупӑрланса тӑракан салтаксем те тӗтӗм ӑшӗнче темскер шуни çине пӗр-пӗрне тӗллесе кӑтартнӑ. Çав самантрах патронташсене пушатса ларакан Гаврош умӗнчи сержант вилли ашне пӗр пуля пырса лекнӗ.

— Ак, тамаша! — тесе кӑшкӑрса янӑ Гаврош. — Ха, манӑн вилӗсене тепӗр хут вӗлереççӗ!

Иккӗмӗш пульли унтан инçех те мар чул сарнӑ çул çине пырса çапӑннӑ. Виççӗмӗшӗ унӑн корзинкине йӑвантарса янӑ.

Гаврош каялла çаврӑнса пӑхнӑ та урам кӗтессинчен тӗллесе тенине курнӑ.

Вӑл урисем çине тӑнӑ. Пӳне тӳрӗ тытнӑ: Çил унӑн вӑрӑм çӳçӗсене арпаштарса янӑ. Гаврош, ним тума пӗлмесӗр, хӑйӗн

çине пăшалсемпе тĕллесе перекен наци гвардеецĕсене хирĕç пăхса юрласа янă.

Унтан вăл корзинкине çĕкленĕ, тухса ўкнĕ патронĕсене каялла илсе хунă та, стрелоксен çывăхнерех пырса, тепĕр патронташа пушатма пуçланă. Тăваттăмĕш пульли ăна тивеймесĕр аякран шăхăрса иртсе кайнă. Гаврош çаплах юрланă.

Пиллĕкмĕш пульлине хирĕç вăл тата тепĕр сыпăк юрласа илнĕ.

Çак картина çине пăхса тăма та хăрушă пулнă. Ачана пăшалпа тĕллесе пенĕ, вăл пур хăйне перекенсене вăрçтарнă. Гаврош чăннипех те пĕтĕм чĕрипелен савăнать, тесе калама пулать, тата çав вăхăтрах кашни пульли çинех юрласа ответленĕ. Ун çине темле тĕллесе пенĕ пулсан та, ниепле те тĕл тивретеймен. Наци гвардеецĕсем ун çине пере-пере кулнă. Çав тери вăр-вар ача пулнă Гаврош: вăл, хăй çине пенине курсан, выртнă, унтан сасартăк сиксе тăнă, алăк айне кĕрсе кайса пытаннă, вăхăтлăха çухалнă, унтан каллех сиксе тухнă, аяккалла тарса хăталнă, каллех малтанхи вырăна чупса пынă, хăй çине сирпĕнекен картечсене хирĕç чышкипе юнанă. Çав вăхăтрах тата тĕл пулакан патронташсене те пушата-пушата илнĕ, корзинкине тултарнă. Баррикада çинчен хăраса, ăна вичкĕн куçсемпе сăнаса тăнă. Хушăран пульăсем ăна хăваласах çитнĕ, анчах вăл вĕсенчен те çăмăлрах пулнă. Вăл вилĕмпе куç хупмалла вылянă, темелле. Вилĕм хăрушлăхĕ çывхарса пырсан, ача кашнинчех ăна çупа-çупа янă.

Анчах тискер пуля юлашкинчен ачана хăваласа çитнĕ-çитнех. Гаврош сулăнса кайнă та çере персе аннă. Баррикада çинчен хăранипе кăшкăрса янă сасăсем илтĕнсе кайнă. Гаврош сасартăк сиксе тăнă. Унăн пичĕ тăрăх юн хĕрлĕ йĕр туса юхнă. Вăл аллисене малалла тăснă та, пăшал сассисем илтĕнекен еннелле пăхса, çĕнĕрен юрлас янă.

Анчах вăл хăйĕн юррине вĕçне çитереймен. Иккĕмĕш пуля унăн çăварне хупласа лартнă. Вăл чул урам çине тăрăнса аннă та урăх тапранайман.

Пĕчĕк паттăра вĕлернĕ.

**СЛОВАРЬ.**

С у—французсен вакă укçи.

Б а р р и к а д а—тăшмана малалла кайма чарасшăн урама тĕрлĕ япаласемпе пўлсе хуни.

Я в л ă к—тутăр.

А р т и л л е р и—çарсен тупăсемпе перекен пайĕ.

К а р т е ч ь—варрине çавракa пульăсем кĕртсе лартнă артиллери снарячĕ.

П а т р о н т а ш—патрон хумалли сумка.

П ы т а р у п р о ц е с с и й ĕ—тупăк хыççăн ушкăнпа пыни.

Д р а г у н с е м—утлă салтаксем.

ЫЙТУСЕМ.

1. Гаврош кам пулнă? Вăл килĕнчен мĕн пирки тухса кайса урамра çапкаланса çўренĕ?
2. Гаврош камсем майлă пулса çапăçнă?
3. Вăл баррикада çинче мĕн туни çинчен каласа парăр.
4. Гаврошăн хастарлăхне, çивĕчлĕхне сăнлакан вырăнсене произведенирен илсе кăтартăр.
5. Ачасем революцие мĕнле-мĕнле хутшăнса çапăçни (пулăшни) çинчен эсир илтнĕ-и? Каласа парăр.

# МАКСИМ ГОРЬКИЙ.

(1868—1936)



Максим Горький—вăл пролетари писателĕн Алексей Максимович Пешковăн литературăри ячĕ.

Хăйĕн пурăнăçĕ çинчен М. А. Горький çапла каласа парать: „8 çултах мана атă пушмак магазинне суту-илӳ тунă çĕре пачĕç, анчах икĕ уйăхран вĕрекен купăста шӳрпипе алла пĕçертсе ятăм та, каялла асатте патне тавăрăнмалла пулчĕ. Сывалса çитсен, мана вĕренме чертежник патне пачĕç. Пĕр çултан, пурăнăç питĕ йывăр пирки, эпĕ ун патĕнчен тартăм, повар ĕçне вĕренме пĕр повар патне пароход çине кĕтĕм.

Унтан кайранхи пурăнăç питĕ ула-чăла, хартавлă: повар патĕнчен каллех чертежник патне таврăнтăм, унтан турăшсемпе суту-илӳ турăм, Грязе-Царицын чугун çулĕ çинче сторож та пулса пăхрăм; кĕлентĕр, булка пĕçерекен те пулса пăхрăм, таçта темĕнле чăтлăхра та пурăнса куркаларăм",—тет.

Анчах Горький çак йывăр условисенче те питĕ вĕренесшĕн, пĕлесшĕн çуннă. Вăл нумай вуланă, хăй произведенисене çырнă чух тăрăшса, хĕрсе кайса ĕçленĕ. Унăн малтанхи калавĕ хăй вăл Тбилиси (Тифлис) чугун çулĕн мастерскойĕнче ĕçленĕ чухне пичетленнĕ.

Вăл нумай çырнă, нумай каласа панă. Ĕçхалăхне хĕсĕрленипе хирĕçсе, вăл рабочисемпе пĕр çулпа пынă. Владимир Ильич ăна, аслă писателе, питĕ паха вырăна хунă. Вăл ун патне çыру çыркаласах тăнă. Вăл Горький патне: „Эсир хăвăр çырас ĕçĕн ăсталăхĕпе Российăри рабочи юхăмне—пĕр Российăрине анчах та мар—çав тери усă кӳтĕр",—тенĕ.

Унăн 1902-мĕш çулта Сормово заводĕнче пулса иртнĕ рабочисен демонстраципе çыхăннă „Амăшĕ" ятлă произведенийĕ тухсан, патша цензури Горькие суда пама хушнă. Горький хăй калавĕнче рабочисем мĕн пирки пусмăр тӳснине ăнлантарса çутатса парать, вĕсене хăйсене хĕстерекенсемпе кĕрешме чĕнет тесе, патша влаçĕ хăраса ӳкнĕ.

Патша правительстви Горькие темиçе хут та арестленĕ. Горький Петропавловск крепоçĕнче те ларнă. Çав крепоçре патша правительствишĕн чи хăрушă революционерсем çеç ларнă.

Алексей Максимович мĕн виличченех пысăк произведенисем çырнă, пирĕн социализм строительстви çинчен элеклекен тăшмансене пичет урлă тăрă шыв çине кăларса пынă, вĕсен суйине çапса çĕмĕрнĕ. Рабочи класшăн тата ĕçхалăх массишĕн тăнăшăн Совет Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ Горькие Ленин орденĕпе парнеленĕ.

Ют патшалăхсенчи фашистсене сутăннă бандитсем, Совет Союзĕнчи ĕççыннисене капиталистсен пусмăрĕ айне тăвасшăн тарăшнăскерсем, ĕçхалăхĕн тискер тăшманĕсем, Горькие, вăл чирлесен, тискеррĕн вĕлернĕ.

Горький ячĕ пĕтĕм тĕнчипе паллă ят. Кашни ĕççынни Горькие хисеплесе асăнать.

---

# Архип асаттепе Лёнька.

I.

Шыв урлă каçаракан кимме кĕтсе, вĕсем иккĕшĕ те çÿллĕ çыранран ÿкекен сулхăнра выртса, хăйсен урисем патне çитех пырса çапăнакан Кубань шывĕн çăра пăтранчăк хумĕсем çине чылайччен пăхса выртнă. Хăйсем пĕр-пĕрне нимĕн те чĕнмен. Лёнька тĕлĕрнĕ пек пулнă, анчах Архип асатте, кăкăр шăмми хĕссе хыттăн ыратнипе, ниепле те çывăрайман. Вĕсен çÿçенсе хутланнă, çĕтĕк-çатăкпа витĕннĕ кĕлеткисем тĕттĕмрех хĕрлĕ çĕр çинче, икĕ мĕскĕн чăмакка пек, аран палăрнă: пĕри—пысăкрах, тепри—пĕчĕкрех курăннă.

Архип асаттен шăммисем палăракан пулнă тем вăрăмĕш хăрăк кĕлетки ансăран тăсăлса выртакан хăйăр купи çийĕнче урлăн тăсăлса выртнă. Сĕнк пулнă Ленька аслашшĕ çумне чĕрĕп пек хутланса выртнă, пĕчĕккĕ те ырхан пулнă. Çĕтĕк-çурăк тумлăскер, вăл вата типшĕм аслашшĕ çумĕнче хăйăр çине шыв хумĕсем килсе кăларса пăрахнă йывăç турачĕ евĕрлĕн курăннă.

Аслашшĕ, пуçне чавси çине хурса, кăшт çĕклесе, çыранăн тепĕр еннелле пăхса выртнă.

Паянхи кун, ытти кунсемпе танлаштарсан, уншăн ытла та япăххăн курăннă, тата темме час вилессĕн туйăннă. Вилесси çине вăл кăмăлпа нимĕн шикленмесĕр, пурпĕрех пулас ĕç çине пăхнă пек пăхнă, анчах, апла пулсан та, унăн кунта мар, инçетри, хăй çуралнă çĕршывра вилес килнĕ. Тата унăн шухăшĕ ниепле те ывăлĕн ывăле (мăнукĕ) çинчен каяйман, вăл ăна пĕрмай пăшăрхантарнă... Ăçта кайса кĕрĕ Ленька?..—тенĕ вăл аптăраса.

Шывланнă куçĕсемпе мăнукĕ çине пăхса, аслашшĕ хăйĕн хытнă тирлĕ аллипе ăна пуçĕнчен ачашласа шăлса илнĕ.

Мăнукĕ, йăшаланса, аслашшĕ çине тем шухăша кайнă пысăк кавак куçĕсемпе пăхса илнĕ. Унăн тарăн куçĕсем чеччепе шат-

раланнă типшĕм пичĕ çинче татах пысăккăн куранна. Çӳхе тутисем—нимĕн юнсăр, сăмси шĕвĕр пулнă.

— Килет-и?—тесе ыйтнă та вăл, куçĕсене аллипе хĕвелтен хӳтĕлесе, хĕвел çуттипе йăлтăртататакан шыв çине пăхса илнĕ.

— Çук, килмест-ха. Тарать вăл...—тенĕ ерипен Архип. Унтан мăнукне пуçĕнчен ачашласа шăлнă та: „Телерне пек пултăн-им эсĕ, ачам?"—тесе ыйтнă.

Ленькăн пĕртте калаçас килмен, вăл аслашшĕне хирĕç нимĕн те шарламан. Аллипе типĕ тăм чăмăртакĕ илнĕ те, пӳрнисемпе ватса, тусан кăларма тытăннă.

Аслашшĕ Ленька çине куçĕсене хĕсерех пăхнă, пуçĕнче ун тем шухăшсем капланса çӳренĕ.

— Ака эпĕ те часах вилĕп... Ăçта кайăн вара эсĕ мансăр пуçне?—тенĕ тата аслашшĕ.

Ленька аслашшĕнчен кунашкал сăмахсене час-часах илткеленĕ; вилĕм çинчен калаçни ăна йăлăхтарнă та. Çавăнпа вăл нимĕнмесĕр аяккалла çавăраннă та, çерçи кĕпçи евĕрлĕ курăка татса илсе, çăварне хыпса, вăраххăн чăмла пуçланă.

Анчах вилĕм çинчен шухăшласси аслашшĕн пуçĕнчен кайман.

— Мĕн тата эсĕ чĕнмесĕр тăратăн? Епле эсĕ мансăр пуçне пурăнăн?—тенĕ вăл ӳсĕре-ӳсĕре, мăнукĕ еннелле тайăлса.

— Çитĕ ĕнтĕ ун çинчен,—тенĕ кăмăлсăр пек пулнă Ленька, хăй чалăшшăн аслашшĕ çине пăхнă.

— Мĕн каларăн? Айван вĕт халĕ эсĕ, хăвăн пурăнăçна та ăнланма пултараймастăн? Миçе çулта эсĕ? Вунпĕр çулта кăна мар-и? Эсĕ тĕрексĕр, ĕçе те юрăхсăр. Ăçта кайăн эсĕ? Ыра çынсем пулăшĕç, тесе шухăшлатăн-им? Санăн хăвăн укçу пулсан, сана вĕсем çав укçана пĕтерме пулăшĕччĕç. Вăл çаплах, ыйткаласа çӳресси мана та, старике, пит тутлах мар. Кашни çыннах тайăл, кашнинченех ыйт. Ятлаççĕ те сана, хăвалаççĕ те тепĕр чух... Ху шутупа, ыйткалакана çын выранне хураççĕ, тетĕн-им эсĕ? Никам та шутламасть. Вуна çул тĕнче тăрăх çӳретĕп ĕнтĕ, аван пĕлетĕп. Пĕр татăк çăкăра пин тенкĕ выранне хураççĕ.

Эсĕ мĕншĕн параççĕ пуль тетĕн? Хăйсен кăмăлне лăплантарма; ака мĕншĕн, тусăм; хĕрхеннĕрен мар! Сана пĕр татăк парать те, вара хăйне те ăна çăкăр çиме намăс мар пек туйăнать. Тута çын—тискер кайăкпа пĕрех. Вăл нихăçан та выçă çынна хĕрхенмест. Тутă çынпа выçă çын пĕриншĕн тепри—тăшман, ĕмĕр-ĕмĕрех вĕсем пĕр-пĕрин куçĕнче тăшманăн куранаççĕ. Çавăнпа та вĕсем пĕр-пĕрне хĕрхенме те ăнланма та пултараймаççĕ...

Архип асатте çиленсе, чĕри вĕчĕрхеннипе, тата çĕкленерех калаçма тытăннă; унăн тутисем чĕтренĕ, ватăпа тĕксĕмленнĕ куçĕсем хĕрелнĕ куçхаршисем хушшинче текех мăчлатна, тĕксĕм пичĕ çинчи пĕркеленчĕксем сайраланнăн куранна.

## II.

Аслашшĕпе мăнукĕ сулăпа шыв урлă каçсан, уртăшпа йăмра тĕмисем çумнех анса тăнă. Çав йывăççен вуллисем хыçĕнче пӳрт тăррисем, хӳмесем куранна.

Ыйткалакансем умӗнче, икӗ ҫатан хушшипе, ансӑр тӳрӗ урам тӑсӑлса выртнӑ. Вӗсем нумай ҫӳренӗрен ыврнна ҫынсен уттипе ҫав урам тӑрӑх аран тайкаланса пынӑ.

Аслашшӗ, переулокпа пӑрӑнса, сулахаялла кайнӑ. Ленька малалла утнӑ. Пӗр вунӑ пусӑм малалла кайсанах, Ленька чӗтресе янӑракан саса илтнӗ. Саса: „Ырӑ ҫынсем, тӑрантаракансем!..“ тенӗ. Ҫак саса ӗнермен кӗсле хӗлӗхӗсен сасси пек илтӗннӗ.

Аслашшӗн ял ҫинчи вӗри сывлӑшра ҫӗтсе ҫӳрекен мӗскӗн, чӗтревлӗ сасси унӑн хӑлхине пырса кӗнӗ. Йӗри-тавра ҫӗрлехи пек тӳлек пулнӑ. Ленька ҫатан ҫумне пынӑ та ҫатан урлӑ ӳкекен вишня йывӑҫҫин сулхӑнне ларнӑ. Ҫаҫта аякра пыл хурчӗ нӑйлатни илтӗннӗ...

Ленька ҫурам хыҫӗнчи кутамкине хывса ҫӗре хунӑ. Унтан, пуҫне ҫав кутамка ҫине хурса, вишня ҫулҫисем витӗр курӑнакан пӗлӗт ҫинелле пӑхса, хытӑ ҫывӑрса кайнӑ.

III.

Вӑранасса вӑл каҫа хирӗҫ тин, каҫалахи сулхӑнпа тасалнӑ сывлӑшра темле тӗлӗнмелле сасӑсем илтӗннипе вӑраннӑ. Такам унран инҫетре те мар йӗнӗ. Йӗрекенӗ ача пек ӗсӗклесе йӗнӗ. Хурланса йӗнӗ сасӑсем пӗрре пӗтсех ларнӑ, унтан сасартӑк ҫӗнӗ вӑйпа илтӗннӗ. Ленька патне ҫывхарса пынӑ. Вӑл пуҫне ҫӗкленӗ те анра кӑшман тунисем витӗр ҫул ҫинелле пӑхса илнӗ.

Ҫулпа пӗр ҫичӗ ҫулалла ҫитнӗ хӗрача пынӑ. Унӑн тумӗ таса пулнӑ; пичӗ-куҫӗ йӗнипе тӑртаннӑ, куҫне вӑл шурӑ кӗпе аркипе час-часах шӑлнӑ. Утасса хуллен утнӑ, ҫара уранскер, ҫула сӑтӑрса, ҫӑра тусан каларса пынӑ. Анчах вӑл ӑҫталла, мӗншӗн кайнине те пӗлмен. Унӑн пысӑк, хӑюллӑ хура куҫӗсем халӗ кӳренӳллӗ тата шывлӑ пулнӑ.

— Эсӗ мӗн йӗретӗн?—тесе ыйтнӑ Ленька, ура ҫине тӑрса, хӗр унпа тӗлме-тӗл пулсан.

Хӗрача, Ленька сӑмахӗсене илтсен, утма чарӑннӑ, ҫавӑнтах йӗме те чарӑннӑ, анчах партак нӑшӑклатнӑ. Ленька ҫине тем самант хушши пӑхса тӑнӑ хыҫҫӑн, унӑн тутисем ҫӗнерен чӗтренӗ пек пулнӑ, пичӗ макӑрас умӗнхи пек пӗркеленсе выляма пуҫланӑ, кӑкри хумханнӑ. Пӑртакран вӑл каллех хыттӑн йӗрсе янӑ та малалла утнӑ.

Ленькӑн та ӑшӗнче темскер хӗснӗ пек туйӑннӑ. Вӑл та ун хыҫҫӑн утнӑ.

— Эсӗ ан йӗр. Пысӑкланнӑ вӗт,—намӑс!—тенӗ вӑл, ун хыҫӗнчен пырса. Хӗрачана хуса ҫитсен, унӑн пичӗ ҫине пӑхнӑ та, каллех:—Ну, мӗн эсӗ ӳлетӗн?—тенӗ.

— Ҫапла-а!.. Саначчӗ ҫавӑн пек,—тенӗ те вӑл сассине тӑсарах, сасартӑк ҫул ҫинчи тусан ҫине тӗшерӗлсе анса, питне аллисемпе картласа, хыттӑн кӑшкӑрса йӗме пуҫланӑ.

— Итле-ха!- тенӗ Ленька, пӑртак чӗнмесӗр тӑнӑ хыҫҫӑн.— Мӗн эсӗ? Мӗн пулнӑ сана, хӗнерӗҫ-им? Иртсе кайӗ-ха! Урӑх мӗн те пулин пулнӑ-и тен сана? Эсӗ каласа пар! Хӗрӗм .. э?

Юлашкинчен хӗрача сӑмах хушнӑ. Вӑл, аллисене пичӗ ҫинчен илмесӗрех, пуҫне хуйхӑллӑн суллантӑ та, макӑра-макӑрах:

— Тутăрăма... çухатрăм... Атте анчахрах базартан илсе килнĕччĕ... Кăвак тĕслĕччĕ, чечеклĕччĕ; эпĕ малтанхи хут çыхнăччĕ, çухатрăм,—тенĕ те тата хытăрах ĕсĕклесе йĕре пуçланă.

Ленька, ăна пулăшма пултараяс çуккине сиссе, хăранипе ун патĕнчен аяккарах пăрăннă та тĕттĕмленекен пĕлĕт çине тем шухăша кайнă пек пулса пăхса илнĕ. Ăна хăйне те çăмăл пулман, хĕрачана вăл питĕ хĕрхеннĕ.

— Ан йĕр!.. Тен тупăнĕ...—тенĕ вăл пăшăлтатарах. Ăшĕнче Ленька: ку хĕрачана тутăр çухатнăшăн ашшĕнчен лекет пулĕ, тесе шухăшлана. Сасартăк ун куçне—ашшĕ, пысăк хура казак, хĕрне хĕненĕ пек, хĕрача çăварне юхса кĕрекен куççулĕсемпе антăхнă пек, ыратнипе тата хăранипе çӳçенсе илсе, ашшĕн ури вĕçĕнче йăваланса выртнăн курăннă.

— Çул çинчен кайсамччĕ эсĕ, хĕрĕм! Ан йĕр! Киле кай та епле çухатнине тĕппипе каласа пар. Çухатрăм, те... Мĕн ытлашши пăшăрханмалли пур?—тенĕ Ленька.

Çак сăмахсене вăл йăвашшăн, хĕрхенӳллĕ сасăпа каланă. Хĕрача çĕртен ура çине çĕкленнине курса, вăл питĕ хĕпĕртесе кайнă.

— Ака ку юрать ентĕ!—тенĕ вăл куларах.—Каях килне. Кăмăлу пур и, эпĕ те санпа пырам, пĕтĕмпех каласа парăп. Юрĕ-и? Сан хута кĕрĕп, ан хăра!

Çакăн хыççăн Ленька, хулпуççисене мăнкăмăллăн сиктерсе, йĕри-тавралла пăхкаласа илнĕ.

— Кирлĕ мар, ан пыр,—тенĕ хĕрача, кĕпи çинчи тусана ерипен силлесе тата çав хушăрах нĕшке-нĕшке илсе.

— Атту пырам?—тенĕ çинерех тăрса Ленька. Унтан картузне хăлха çинерех пусса лартнă.

Хĕрача ун çине куç айĕн пăхса илнĕ, унтан питçăмартисенчен куççульне шăлса илсе, çĕнĕрен хуйхăллăн сывласа, çапла каланă:

— Кирлĕ мар, ан пыр... Анне ыйткалакансене юратмасть,—тенĕ те Ленька патĕнчен аяккалла кайнă, анчах икĕ хутчен каялла çаврăнса пăхнă.

Ленькăна питĕ кичеммĕн туйăнса кайнă. Унăн вăхăтлăха ӳснĕ пек пулнă кĕлетки каллех пĕчĕкленсе имшерленнĕ, çĕнĕрен курпунне кăларнă. Вара вăл унччен хулĕ çинче çакăнса тăракан кутамкине çурăм хыçне çавăрса хунă та переулок кукринелле çухалнă хĕр хыççăн çапла кăшкăрса илнĕ:

— Сывă пул,—тенĕ.

Хĕрача утнă çĕртех Ленька çине çаврăнса пăхнă та çавăнтах куçран çухалнă.

## IV.

Каç çывхарса килнĕ. Сывлăшра аслатиллĕ çăмăр умĕнхи пек пăчă пулнă. Хĕвел анса ларма патне çитнĕ. Унăн çутипе тирĕк йывăçĕсен тăррисем кăна çăмăллăн хĕрелсе çуталнă. Пĕлĕт тĕттĕмленнĕ; вăл бархат тĕслĕн курăннă тата çĕр çумне çитех аялалла аннăн туйăннă.

Çакă Ленькăн пурăнăçне татах кичемлетнĕ, çитменнине тата вăл темрен хăранă. Вăл аслашшĕ патне кайма шухăш тытнă; йĕри-тавра çаврăнса пăхнă та малалла переулок тăрăх васкаса

утма тытăннă. Унăн пĕртте кĕлесе çӳрес килмен. Вăхăтăн Ленькăн утас та, шухăшлас та килмен... Анчах хĕрача унăн пуçĕнчен ниепле те хăпман: мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ ăна?—тенĕ вал хăйне хăй.—Пуян çемьерен пулсан, ăна хĕн пулĕ: пур пуян та çаткăн, хытă; чухăн çемьерен пулсан, тен, хĕнемĕç те... Чухăн çемьесенче ача-пăчана ытларах юратаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенчен пулăшу кĕтеççĕ.

Ленькăна хирĕç уйран таврăнакан кĕтĕвĕн сасси илтĕннĕ.

Акă аслашшĕ те çывхарать. Аслашшĕ хыççăн йывăр, тайкаланчăк утăпа, пуçне çĕлĕк тăхăннă казак пырать. Вал çĕлĕкне çамки çине антарарах лартнă, аллинче унăн туя.

— Сывă-и-ха, ырă çыннăм?..

— Эсир те сывă-и...—тенĕ казак васкамасăртарах, кусем патне çитсен.

Унтан вăл урисене урлă пусса тăнă та, ыйткалакансем çине ним сисĕве пĕлтермен куçĕсемпе пăхса, пĕр чĕнмесĕр пуçне хыçса илнĕ

Ленька ун çине, теме кĕтсе, шăтарас пек пăхнă. Аслашшĕн вата куçĕсем, ыйтуллăн пăхса, пĕрмай мăчлатнă. Казак нимĕн те чĕнмен. Самайран тин чĕлхине пĕр çуррине яхăн кăларса, усси вĕçне çăварса илнĕ те чăмлама тытăннă. Юлашкинчен, çăварĕнчи уссине чĕлхипе тĕртсе кăларнă та çăварне кахаллăн уçса каланă:

— Ну, кайăпăр хурал пӳртне!—тенĕ.

— Мĕн тума?—тенĕ, темрен хăранă пек пулса, аслашшĕ.

Çакна илтсенех, чĕри темĕн усала сиснĕ пек сăрхăлтатса кайнă.

— Каймалла... хушнă. Ну!—тенĕ те, вĕсем еннелле çурăмĕпе çаврăнса, малалла утма тытăннă. Анчах хыçалалла çаврăнса пăхнă та, кусем иккĕшĕ те тапранманнине курсан, çĕнĕрен:

— Мĕн тăратăр тата!—тесе хаярран кăшкарнă.

Вара аслашшĕпе Ленька ун хыççăн васкаса утнă.

Ленька аслашшĕ çине тинкерсе пăхнă. Аслашшĕн тутисемпе пуçĕ чĕтренине тата вăл, аслашшĕ, йĕри-тавра хăраса пăхса, хевĕнче темскер хыпаланине курсан, асатте каллех Тамань хулинчи пек тунă ĕнтĕ, тесе шухăшласа илнĕ Ленька. Таманьре пулса иртнĕ ĕçе аса илсен, вăл тăруках хăраса кайнă. Унта аслашшĕ карташĕнче çакăнса тăракан кепе-йĕмсене вăрланă та, Ленькăна та унпа пĕрле тытнă. Унта вĕсенчен кулнă, ятланă тата хĕненĕ те, юлашкинчен çĕрле ялтан хăваласа кăларса янă.

Шухăша кайнă Ленька аяккинчен тĕртнипе çӳçенсе илнĕ, унтан аслашшĕ çине пăхнă. Аслашшĕн пичĕ-куçĕ типшĕрсе тăрхаланнăн курăннă, кăвакарса кайнă, пĕрмай чĕтренĕ.

— Ме, акă ил!.. пăрах хытхура тĕми ăшне... ăçта пăрахнине асăрха!.. кайран тупса илме май пултăр...—тенĕ хуллен, аран илтĕнмелле мăкăртатнă сассипе аслашшĕ. Унтан утса пынă çĕртех мăнукĕ çумне тачăрах çыпçаннă та ун аллине темĕн çĕтĕкçатăкпа чĕркенĕ япала тыттарнă.

Ленька хăранипе шартах сикнĕ те аяккалла пăраннă. Унăн пĕтĕм ӳтпевĕ çӳçенсе кайнă. Унтан вăл карта çумнерех асăрхамалла мар çывхарнă. Карта çумĕнче хытхура курăк тĕмисем кашласа ларнă. Ленька хăйсене ертсе пыракан казакăн сар-

лака çурăмĕ çинчен куçĕсене илмесĕр аллине аяккалла тăснă. Çĕтĕк чăмăртак çине юлашки хут пăхнă та ăна хытхура тĕми ăшне пăрахнă.

Чăмăртакĕ ўкнĕ чух саланса кайнă та, Ленька куçне чечеклĕ кăвак тутăр курăннă. Çав вăхăтра Ленька питне аллисемпе хупăрласа йĕрекен пĕчĕк хĕрачана аса илнĕ. Хĕрача Ленька куçĕсем умне чĕрĕ пекех тухса тăнă. Хĕрачанăн мĕлки карса илнипе умра пыракан казак та, аслашшĕ те курăнман... Хĕрачанăн ĕсĕклесе йĕнĕ сасси Ленькăн хăлхинче пaçăрхинчен те уçăрах янăраса кайнăн тата йăлтăрка куççуль тумламĕсем çĕре тумланнăн туйăннă.

Çапла шухăшсемпе вăл аслашшĕ хыççăн хурал пўрчĕ патнелле утнă. Хурал пўртĕнче темскер янăрани илтĕннĕ. Ленька пĕр енчен—мĕн янăранине чухласа илме пултараймаи, тепĕр енчен—чухласшăн та пулман. Аслашшĕ кутамкинчен сĕтел çине кăларса силленĕ çăкăрăн пысăк татăкĕсем Ленька куçне тĕтре витĕр пек кăна курăннă. Кутамкаран тухса ўкнĕ татăксем сĕтел çине кисрентернĕ...

Çав татăксем çине çўллĕ çĕлĕклĕ пуçсем тайăлни курăннă, пуçĕсемпе тепле шăмарнăн туйăннă. Пичĕ-куçĕсенче такама юнани палăрнă... Пăртакран, ăшĕнче темскер мăкăртатакан аслашшĕ сасартăк икĕ йĕкĕт аллинче кăлтăрмаç пек çавăрăнса илнĕ...

— Ах, кăлахах тиветĕр, ырă çынсем!.. Айăплă мар,—тенĕ аслашшĕ, чуна ыраттаракан сасăпа кăшкăрса.

Ленька йĕрсе янă та урайне тĕшĕрĕлсе аннă.

Ун патне те çынсем пынă. Çĕклесе тăратнă та, сак çине лартса, унăн çамрăк ўтне витĕнтерсе тăракан çĕтĕк çатăка хыпаланă.

— Ахалех лăпăртататăть Данилăн ăнман арăмĕ!—тесе илнĕ тахăшĕ ушкăнран хытă сасăпа. Ку хулăн тата кăрсакаллă сасă Ленькăн питçăмартинчен алăпа çиçкĕнтернĕ пекех туйăнса кайнă.

— Тен вĕсем ăçта та пулин пытарнă?—тенĕ ăна хирĕç тепри тата хытăрах кăшкăрса.

Ленькăшăн çак хулăн, вирлĕ сасăсем пуçран чышнă пекех туйăннă. Вăл ытлашши хăранипе тăн-пуçне çухатнă: ăна таçталла тĕттĕм шăтăка пуçхĕрлĕ чăмнăн туйăннă.

## V.

Ленька тăна кĕнĕ чух унăн пуçĕ аслашшĕн чĕркуççийĕ çийĕнче выртнă.

— Тăна кĕтĕн-и, тăванăм?!. Тухса каяр-ха кунтан. Каяр, ячĕç путсĕрсем!—тенĕ аслашшĕ кĕвĕнсе çитнĕ сассипе.

Ленька тăрса ларнă. Вăл хăйĕн пуçĕ ăшне темĕн йывăр япала тултарнă пек, пуçĕ акă халех хулпуççисем çинчен татăлса ўкес пек туйăннă... Вăл ăна аллисемпе тытнă та, йăвашшăн йăнăшса, пĕр енчен тепĕр еннелле сулăннă.

— Пуçу ыратать-им, тăванăм?.. Асаплантарчĕç вĕсем пире, иксĕмĕре... Тискер кайăксем! Пĕрин кинжалĕ çухалнă мĕн, тата тепĕр хĕрача тутрине çухатнă. Ну, тăрăнчĕç вĕсем пирĕн çине.

Аслашшӗн хӑйӑлтатса тухакан сасси Ленькӑн чӗрине ыраттарнӑ. Ленька хӑйӗн ӑшӗнче вут хӗлхемӗ йӑлкӑшма тапӑннине сиснӗ; ҫав вут хӗлхеме ӑна аслашшӗнчен аяккарах сикме чӗннӗ. Аяккарах сиксе ларсанах, Ленька йӗри-тавра пӑхса илнӗ...

Вӗсем ҫав вӑхӑтра ялӑн уйхапхи патӗнче ӳсекен лӑпсака ҫулҫӑллӑ тата пӑрӑнӑҫ вулӑллӑ уртӑш йывӑҫӗ айӗнче ларнӑ. Каҫ пулса ҫитнӗ, тем ҫӳлӗш улӑхнӑ уйӑхӑн сетпе кӗмӗл тӗслӗ ҫутти ҫеҫен хирӗн шыв пек тикӗс лаптӑкне ҫутатнӑ.

— Ну, ларӑпӑр, ларӑпӑр!..—тесе мӑкӑртатнӑ аслашшӗ, айван кулкаласа тата хӗвӗнче темскер хыпаласа.

Ленька ҫаврӑннӑ та тепӗр хут аяккалла пӑхма тытӑннӑ.

— Ленька!.. Пӑх-ха!..—тенӗ сасартӑк хытӑрах хавас сасӑпа аслашшӗ. Хӑй, антӑхтарса яракан ӳслӗкпе хутланса кӗрсе, мӑнукӗ еннелле темскер йӑлтӑртатакан вӑрӑм япала тӑснӑ.

— Кӗмӗллене! Кӗмӗл вет!.. Аллӑ тенкӗ тӑрать!..

Аллисемпе тытисем унӑн—те ыратнипе, те ҫаткӑнланнипе—чӗтренӗ, пӗтӗм пичӗ-куҫӗ туртӑнкаланӑ.

Ленька тӑрр! чӗтресе илнӗ те унӑн аллине тӗртсе янӑ.

— Пытар часрах!.. Ах, асатте, пытар!..—тенӗ пӑшӑлтатса йӑлӑнна сасӑпа. Хӑйваскаса йӗри-тавра пӑхкаланӑ.

— Ну, мӗн эсӗ, айван, хӑратӑн?.. Чӳречерен пӑхрӑм та, вӑл ҫакӑнса тӑрать... Эпӗ пӗр самантра кап! тутартӑм та сӑхман арки айне... кайран тӗмсем хушшине пытартӑм. Ялтан кунталла килнӗ чух ҫӗлӗке ӳкернӗ пек туса пӗшкӗнтӗм те илтӗм... Ухмахсем вӗсем!.. Тутӑрне те илтӗм, акӑ вӑл аҫта!..

Вӑл хӑйӗн чӗтрекен аллисемпе хӑй ҫинчи ҫӗтӗк-ҫурӑк ӑшӗнчен тутӑра туртса кӑларнӑ та Ленька пичӗ умне тытса силленӗ.

Ленькӑн куҫӗсем умӗнчи ку таринччен тӗтрелентерсе тӑнӑ чаршав сасартӑк уҫӑлса кайнӑ та, унӑн умне ҫакӑн пек картина тухса тӑнӑ: вӑл аслашшӗпе, мӗн вӑй ҫитнӗ таран хӑвӑрт утса, казаксен ялӗн урамӗ тӑрӑх пынӑ пек, вӗсем хирӗҫ пулакан ҫынсем ҫине пӑхма вӑтанаҫҫӗ, хӑраса пыраҫҫӗ пек. Кашни ҫынах, кӑмӑлӗ пулсан, кусене иккӗшне те хӗнеме, ятлама, вӗсем ҫине сурма тивӗҫлӗ пек... Таврари япаласем—хӳмесем, пӳртсем, йывӑҫсем темле тӗлӗнмелле тӗтре ӑшӗнче, ҫил ҫинчи пек, хумханаҫҫӗ... тата такамсен сивӗ хаяр сассисем янӑраҫҫӗ... Ҫак йывӑр ҫулйӗр вӗҫӗ-хӗррисӗр вӑрӑм, ялран уя тухасси чӳхенсе ларакан пӳртсен хыҫӗпе нимӗн те курӑнмасть. Утсем, пӗрре кусем патнех ҫывхарса, халех таптаса каяссӑн е таҫта ҫитех аякка кайнӑн туйӑннӑ. Тата пӳртсем те кусенчен кулнӑн туйӑннӑ... Сасартӑк пӗр чӳречерен ҫапла сӑмахсем янӑранӑ пек: „Варӑсем! Вӑрӑсем! Вӑрӑ, вӑрӑ чӗппи!..“ Ленька вӑтанса вӑрттӑн аяккалла пӑхать те чӳречерен паҫӑр йӗрекен тата вӑл хӳтӗлеме тӑрӑшнӑ хӗрачана курать пек... Хӗрача, Ленькӑна курсанах, чӗлхине кӑларса витленӗн туйӑннӑ; унӑн йӑлтӑртатакан куҫӗсенче усал сунни палӑрнӑ. Хӗрача ҫапла усаллӑн пӑхни Ленькӑна вичкӗн йӗппе тӑрӑнтарнӑн туйӑннӑ пек.

Ҫак картина Ленькӑна аса килнӗ те сасартӑк ҫухалнӑ, хӑй хыҫҫӑн унӑн пичӗ-куҫӗ ҫинче хаяр кулӑ хӑварнӑ, ҫав хаяр кулӑпа Ленька аслашшӗ ҫине пӑхса илнӗ.

Аслашшӗ пӗрмаях темскер мӑкӑртатнӑ, ӑна хутран-ситрен килнӗ ӳслӗк чӑрмантарнӑ; вӑл аллисемпе хӑлаҫланнӑ, пуҫне чӗтретнӗ, хӑйӗн пӗркеленсе пӗтнӗ пичӗ ҫине пысӑк тумламӑн тухакан тара сӑхман ҫанни вӗҫӗпе шӑлнӑ.

Аслашшӗ ҫапах мӑкӑртатнӑ:—Епле ҫӗр тенке ҫитиччен пухас!.. Вара канӑҫлӑн вилме пулать...—тенӗ вӑл.

— Ну!.. чӗвмӗсӗнччӗ эсӗ! Вилмелле сан, вилмелле. Вилместӗн ху. Тек вӑрлатӑн!—тенӗ те йӑнӑшнӑ сасӑпа Ленька сасартӑк, пӗтӗм ӳтпӗвӗпе чӗтресе, ура ҫине сиксе тӑнӑ.—Вата вӑрӑ эсӗ!.. У-у!—тенӗ. Унтан хӑйӗн пӗчӗк, типшӗм чӑмӑрне чӑмӑртаса, сасартӑк чӗнми пулнӑ аслашшӗн сӑмси айӗнче чӗтретсе илнӗ. Унтан каллех ҫӗр ҫине йывӑррӑн тӗшӗрӗлсе аннӑ. Анчах хӑй вӑл шӑл витӗр ҫапла калама чарӑнман:

— Пӗчӗк ачанне вӑрлана... Лайах-и?.. Хӑй вата, ҫапах унталлах... Леш тӗнчере те сана куншӑн каҫару пулас ҫук,—тенӗ.

Сасартӑк мӗнпур ҫеҫен хир хускалнӑ: вӑл куҫ ҫуттине йӑмӑхтаракан чакӑр ҫутӑпа витӗнсе сарӑлса кайнӑ, ҫеҫен хире хупӑрласа тӑракан тӗттӗмлӗх кисренсе илнӗ, пӗр самантлӑха ҫухалнӑ... Сасартӑк аҫа ҫапни илтӗннӗ. Хыҫҫӑн аслати сасси пӗтӗм ҫеҫен хир тӑрӑх янӑраса кайнӑ. Ҫеҫен хирпе уйӑха витекен хура пӗлӗтсен ушкӑнӗ тӳпере таҫталла васкаса шунӑ. Хӑйсемпе пӗрле уйӑха та илсе кайнӑн туйӑннӑ.

Пӗр вӑхӑта ҫеҫен хир пӑч тӗттӗм пулса тӑнӑ.

— Асатте!.. Каяр яла! - тенӗ чылайран, пӑшӑлтатса, Ленька. Хӑй темрен хӑранӑ, аслати ҫӗнӗрен авӑтасса кӗтнӗ.

Пӗлӗт ҫӗнӗрен кисренсе кайнӑ, ҫӗнӗрен кӑвакӑн-симӗсӗн ҫиҫӗм йӑлтлатса илнӗ. Ҫӗр ҫине ҫӳлтен такам пӑрахнӑ пин листа тимӗр пӗр-пӗрин ҫумне пырса ҫапӑнса янӑрать теме май пулнӑ.

— Асатте!—тенӗ кӑшкӑрса Ленька.

Унӑн кӑшкӑрнӑ сасси, аслати сассипе пӗтсе ларнӑскер, пӗчӗк ҫурӑк чан сасси пек кӑна илтӗннӗ.

— Мӗн эсӗ?.. Харатӑн-им?—тенӗ хӑйӑлтатакан сассипе аслашшӗ, хӑй ним те хускалман.

Шултӑра тумламлӑ ҫумӑр ҫума пуҫланӑ, вӑл шавлани темскере систернӗнех туйӑннӑ.

Аслати авӑтнӑ сасӑ ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарса пынӑ, пӗлӗт те ҫиҫӗм ҫуттипе час-часах йӑлтлатса уҫӑлнӑ.

— Эпӗ яла каймастӑп! Мана, вата йытта, вӑрра... ҫакӑнтах хуть ҫумӑр юхтарса кайтӑр... аҫа ҫаптӑр... Каймастӑп!.. Каях пӗччен... Ака вӑл, казак ялӗ... Каях!.. Эсӗ кунта ларни мана пӗртте кирлӗ мар... каях!.. Кай, кай!.. Кай!—тенӗ аслашшӗ.

Аслашшӗ кӑкӑрӗнчен хӑйалтатса тухакан кӑшкӑрнӑ сасӑ ҫӑварӗнчен инҫех кайман.

— Асатте!.. Каҫар!..—тенӗ йӑлӑннӑ сасӑпа Ленька, аслашшӗ ҫумнерех пӑчӑртанса.

— Каймастӑп... Каҫармастӑп... Ҫичӗ ҫул хушши эпӗ сана ачашласа пӑхрӑм... Яланах саншӑн... пурӑнасса та саншӑн кӑна пурӑнтӑм... Хама мана мӗн те пулсан кирлӗ-им?.. Вилетӗп вӗт эпӗ... Вилетӗп... Эсӗ мана вӑрӑ тетӗн. Мӗншӗн вӑрӑ? Саншӑн...

нурте вăл саншăн... Акă ил... тыт... Санăн пурăнăçушăн... пĕтĕм пурăнăçушăн... пуçтартăм... çавăнпа вăрланă та...

Çакна каланă чух аслашшĕн сасси, малтан лăпкăскер, кăшкăрнă пек пулса кайнă. Сасă Ленькăна хăратмаллах хăратнă.

Аслашшĕ кăшкăрнинчен сехри хăпнă тата сивĕпе те антăранă Ленька халĕ хăйне аслашшĕ умĕнче пăртак айăплăн та шутланă.

Ленькăн аслашшĕ нимĕн сиккеленмесĕр ларнă. Анчах Ленькăна аслашшĕ пĕтессĕн, таçта кайса, ăна пĕр пĕччене пăрахса хăварассăн туйăннă.

Ленька хăй те сисмен, аслашшĕ çумнерех сикнĕ. Аслашшĕне хăй чавсипе сĕртĕнсен, темĕне кĕтнĕ пек хăраса ӳкнĕ...

Çиçĕм каллех хура пĕлĕте çурмаран çурса, çанталăка çутатса янă. Аслашшĕпе мăнукĕ йывăç кутĕнче, ун турачĕсем çийĕнчен тумлакан çумăртан хăтăлса, пĕр-пĕринпе юнашар пăчăртанса ларнă.

Аслашшĕ аллипе сывлăш çинче суллана, темĕн мăкăртатна, ывăннипе хăй пĕрмай чыхăннă.

Аслашшĕн пичĕ çине тинкерсе пăхсан, Ленька, хăранипе, кăшкăрса янă... Çиçĕм çутатнă вăхăтра аслашшĕн пичĕ вилнĕ çыннăн пек курăнса кайнă, унăн пичĕ çинчи тĕксĕм куçĕсем ăссăр туйăннă.

— Асатте!.. Каяр!..— тенĕ йăнăшнă сасăпа Ленька, хăйĕн пуçне аслашшĕн чĕркуççийĕ çине хурса.

Аслашшĕ мăнукĕ патнелле пĕшкĕннĕ, хăйĕн çинçе тата шăмăллă аллисемпе ăна ыталаса питĕ хытă чăмăртанă та, капкăна çакланнă кашкăр пек, сасартăк хыттăн, хăлхана çурас пек, йăнăшса янă.

Аслашшĕ çапла хăтланнипе ухмаха ерес патне çитнĕ Ленька унран вĕçерĕнсе ура çине тăнă та таçта малалла çĕмрен пек вĕçтернĕ. Çиçĕм çутти йăмăхтарнă куçĕсем нимĕн те курман. Малалла тарнă чух пĕрре ӳкнĕ, тепре ура çине тăнă, хăй пĕрмаях тĕттĕм еннелле кайнă. Тĕттĕм вăхăчĕ-вăхăчĕпе çиçĕм çиçнĕ хушăра е пĕтсех ларнă, е хăраса ăнран тухнă ачапа çĕнĕрен хупăрланă.

## VI.

Тепĕр кун ирхине уя вылями тухнă казак ялĕнчи ачасем, часах каялла таврăнса, ялти пĕтĕм халăха ура çине тăратнă: ĕнерхи ыйткалаканĕ уртăш йывăç айĕнче выртнине пĕлтернĕ. Ăна, ахăр, касса пăрахнă пулмалла, тенĕ, мĕншĕн тесен унăн çывăхĕнчех кинжал выртнă пулнă.

Казаксем, ĕç чăнах çапла иккенне пĕлме тухсан, ĕç пачах апла марриве курнă. Старик чĕрĕ пулнă. Ун патне çывхарсан, вăл çĕртен ура çине тăма тапаçланнă, анчах тăма пултарайман. Унăн чĕлхи çĕтнĕ пулнă. Вăл шывланнă куçĕсемпе пуринчен те темскер çинчен ыйтнă, халăх ушкăнĕ хушшинче такама шыранă, анчах никама та тупайман тата çынсенчен те нимĕн те пĕлеймен.



*Тăрнасем каяççĕ.* *(А. Степанов худ. картинĕ).*

Каçпа Архип асатте вилнĕ. Ăна хăй вилсе выртнă вырăнти уртăш йывăç айнех чавса пытарнă. Казаксем: масар çине пытарма май килмест, мĕншĕн тесен, пĕр енчен—вăл ют çын, тепĕр енчен—вăрă, виççĕмĕш енчен-кĕлтумасăр вилнĕ çын,—тенĕ. Архип асатте çывăхĕнче, пылчăк ăшĕнче, кинжалпа тутăр тупнă.

Тата икĕ-виçĕ кунтан Ленька та тупăннă.

Казак ялĕнчен аякрах та мар çеçен хирĕн пĕр васанĕ тĕлĕнче çўлте çăхан-кураксем явăннă. Мĕншĕн пĕр тĕлте анчах кайăксем явăннине пĕлме кайсан, унта вилнĕ ачана тĕл пулнă. Вăл çумăр хыççăн юлнă васан тĕпĕнче çемçе лапра ăшĕнче аллисене сарса, питне аялалла туса выртнă.

Малтан ăна масар çине пытарма шут тунă, мĕншĕн тесен вăл—çамрăк ача, тенĕ. Анчах кайран, тепĕр хут шухăшласан, ăна та аслашшĕпе юнашар, çав уртăш йывăç айнех пытарнă. Вил тăпри çине пысăк чул лартнă.

ЫЙТУСЕМ.

1. Ленькăпа аслашшĕ мĕн пирки вăрçса кайнă?
2. Аслашшĕ тутăр вăрлани Ленькăна мĕншĕн ытла хытă тарăхтарнă?
3. Ленька аслашшĕ камшăн ĕмĕтпе пурăннă? Ку—калаври мĕнле сăмахсенчен палăрать?
4. Ленька аслашшĕ кулаксемпе чухăнсем çинчен мĕн калать? Ун сăмахĕпе тавăрса калăр. Вĕсем çинчен Ленька мĕн калать? Мĕн пирки Ленька чухăнсемпе кулаксем çинчен çамрăклах аван пĕлет?
5. Пĕчĕк хĕрачапа калаçнă чухне Ленька хăйне мĕнле тытнă? Ленька хĕрача хуйхине пусарма пикеннине, ăна хĕрхеннине, ăна пулăшма шутланине кăтартакан вырăна вуласа тухăр.
6. Хĕрача Ленька пулăшас тенипе мĕншĕн килĕшмен? Хĕрача Ленькăран пăрăнса кайни Ленькăшăн мĕнле пек курăннă?
7. Ыйткаласа çўренĕ чухне Ленька мĕнле хурлăха, тĕрлĕ мăшкăла тўснĕ?

# Майăн пĕрремĕшĕ.

Рабочисем Майăн пĕрремĕш праздникне уявласа irттерме чĕнекен листовкăсене кашни каçах хўмесем çине çака-çака тухнă, вĕсем полици управленин алăкĕсем çине те пыра-пыра леккеленĕ, фабрикăра та вĕсене кашни кунах темĕн чухлĕ тупнă. Ирсерен фабрика слободи тăрах полици хўме çинчи кĕрен хутсене ятлаçа-ятлаçа сўсе çўренĕ, анчах кăнтăрла тĕлне листовкăсем каллех вĕçме тапратнă, çўрекен çынсен ури айне вĕçе-вĕçе пырса ўкнĕ. Хуларан сыщиксене янă, вĕсем урам кĕтессинче тăрса, фабрикăран каялла-малалла кĕрсе тухса çўрекен рабочисене шăтарас пек пăха-пăха ирттернĕ. Полици вăйсăррине кура пурте савăннă, вată рабочисем те, кулкаласа, пĕрпĕрне:—Мĕн тăваççĕ, э?—тенĕ.

Пур çĕрте те çынсем пĕр çĕрелле пухăна-пухăна тăнă. Пур çĕрте те кăмăла хăпартакан листовка çинчен хĕрўллĕн калаçнă. Пурăнăç вĕресе хăпарнă, ку çуркунне вăл пуриншĕн те интереслă пулнă, пуриншĕн те темскер çĕнĕ япала илсе килнĕ, пĕрисене —пăлхавçăсене ятласа вăрçмалли, çиленмелли сăлтав, теприсене —таçти аякри ĕмĕте, виççĕмĕшсене—вĕсем сахаллăн пулнă—

вёсем хӑйсем ӗнтӗ ҫак пурне те вӑратакан вӑй пулса тӑнине ӑнланса илнипе, вӑйлӑ саванӑҫ илсе килнӗ.

Павелпа Андрей ҫӗре-ҫӗрепех сывӑрман пекех пурӑннӑ, киле вӗсем ирхине фабрика труби ҫухӑртас умӗн анчах ӗшене-ӗшене, сассӑрланса, шурса кайса таврӑннӑ. Амӑшӗ вӗсем вӑрманта лачакасем ҫинче пухусем тунине пӗлнӗ, вӑл каҫ фабрика слободи тӑрӑх утлӑ полицисем ухтарса шыраса ҫӳренине те, сыщиксем хӑшпӗр рабочисене ҫавӑрса илсе тыта-тыта хупнине те, пухусене салата-салата янине те пӗлнӗ вӑл. Ывӑлӗпе Андрее те кашни каҫах тытса хупма пултарнине пӗлсе, вӑл, часрах ҫиттӗрччӗ пӗреххут ку, тесе шухӑшлакаланӑ, апла пулсан лайӑхрах пулмалла пек туйӑннӑ ӑна.

... Акӑ вӑл кун—Майӑн пӗрремӗшӗ килсе ҫитрӗ. Фабрика труби, яланхи пекех, чӗнсе, хушса мӗкӗрсе ячӗ.

Шурӑ-кӑвак пӗлӗт тӑрӑх, пӑс ытла та хытӑ ҫухӑрнинчен хӑранӑ кайӑксем пек, шурӑ-кӗрен пӗлӗт кӗтӗвӗсем васкаса ирте-ирте каяҫҫӗ.

---

Амӑшӗ урама тухса сывлӑшра праздникри пек саванӑҫлӑ сасӑ янӑранине, темскере кӗтсе шикленерех янӑранине илтсен, тата пур ҫӗрте те пӳртсем умӗнче, хапхасем умӗнче пухӑна-пухӑна тӑнӑ ҫынсем унӑн ывӑлӗпе Андрей ҫине питӗ тинкерсе пӑхса ирттерсе янине курсан,—унӑн куҫӗ тӗтреленчӗ, пурте хумханса, темиҫе тӗслӗ пулса, улшӑнса тӑнӑн курӑнчӗ.

Вӗсемпе ал тытаҫҫӗ, сывлӑх сунни те темӗнле, урӑхла, халиччен илтмен пек...

Кӗтесрен ҫаврӑннӑ ҫӗрте, пӗчӗк переулокра, пӗр ҫӗр ҫын пухӑнса тӑнӑ, вӑл халӑх ушкӑнӗнчен Весовщиков сасси янӑраса тӑрать:

— Пирӗн юна шур ҫырли шывне чӑмӑртаса юхтарса кӑларнӑ пекех ӗмсе тӑраҫҫӗ!

— Тӗрӗс!—тесе янӑраса кайрӗҫ темиҫе сасӑ харӑс.

— Тӑрӑшать ача,—терӗ Андрей.—Ну-ка эпӗ те кайса пулӑшам ӑна!

Вӑл сасартӑк хуҫкаланса илчӗ те, Павел тытса чарма ӗлкӗриччен, хӑйӗн вӑрӑм, авкаланчӑк кӗлеткипе, штопора пробка ӑшне кӗртсе янӑ пек, халӑх хушшине вӑтӑрӑнса кӗрсе кайрӗ. Тӑсса сӑмах пуҫарса ячӗ:

— Юлташсем! Ҫӗр ҫинче тӗрлӗ халӑхсем пурӑнаҫҫӗ, теҫҫӗ,—еврейсем, нимӗҫсем, акӑлчансем, тутарсем. Эпӗ ӑна ӗненместӗп. Икӗ халӑх, пӗр-пӗринпе килӗштерейӗмен йӑх—пуянсемпе чухӑнсем анчах пур! Ҫынсем тӗрлӗ тумланаҫҫӗ, тӗрлӗ калаҫҫӗ, анчах пӑхӑр-ха,—ҫав пуян французсем, нимӗҫсем, акӑлчансем ӗҫҫыннисене мӗн вырӑнне хураҫҫӗ? Пурте вӗсем ӗҫҫыннисемшӗн чуниллисем, пыра шӑмӑ лартмаччӗ вӗсене.

Халӑх хушшинче кулса ячӗҫ.

— Тепӗр енчен пырса пӑхсан,—француз ӗҫҫынни те, тутар, турок ӗҫҫынни те ҫав пирӗн вырӑс ӗҫҫынни пекех, йытӑ пурӑнӑҫӗпе пурӑннине куратпӑр.

Урам енчен нумайран нумай халӑх пыра-пыра тӑма пуҫларӗ, нӗрин хыҫҫӑн тепри, ҫынсем, шарламасӑр, мӑйӗсене тӑсса, чӗрне вӗҫҫӗн тӑрса, калакан еннелле туртӑнаҫҫӗ, переулокалла хӗсӗнсе кӗреҫҫӗ.

Андрей сассине ҫӳлерех ҫӗклесе каларӗ:

— Ют патшалӑхсенчи рабочисем ҫакна ӑнланнӑ ӗнтӗ, ҫавӑнпа, паянхи ҫутӑ кун—Майӑн пӗрремӗшӗнче...

— Полици!..—тесе кӑшкӑрса ячӗ тахӑшӗ.

Урамран переулокалла, ҫынсем ҫине тӳрех тӑватӑ утлӑ казак, саламачӗсемпе сулкаласа, вӗҫтерсе пыраҫҫӗ.

— Саланӑр!

Ҫынсем, тарӑхса, пӑрӑнас килмесӗрех лашасене ҫул уҫса параҫҫӗ. Хӑшпӗрисем хӳме ҫине хӑпара-хӑпара каяҫҫӗ, мӑшкӑлласа тӑрӑхлани илтӗнет:

— Сыснасене лашасем ҫине лартнӑ та, нӑриклетеҫҫӗ: эпир те ҫар пуҫлӑхӗсем, теҫҫӗ пуль!—тесе янӑрать тахӑшӗн уҫӑ сасси.

Андрей урам варринче пӗчченех тӑрса юлчӗ, ун ҫинелле пуҫӗсене суллакаласа икӗ лаша кӗрсе пыраҫҫӗ. Вӑл айккалла пӑрӑнчӗ, ҫав вӑхӑтрах ӑна амӑшӗ, аллинчен ҫавӑрса тытса, хӑй хыҫҫӑн туртса кайрӗ:

— Павелпа пӗрлех пулатӑп тесе сӑмах пачӗ, хӑй пӗчченнех таҫта кӗрсе каять,—терӗ вӑл.

— Виноват!—терӗ Андрей, Павел ҫине кулкаласа пӑхса.— Ав мӗн чухлӗ хунаса кайрӗ ҫӗр ҫинче ҫав полици!

Ак завод труби мӗкӗрсе ячӗ, хӑйӗн хура сассипе халӑх шавланине хупларӗ. Халӑх сиксе ӳкрӗ, ларакансем тӑчӗҫ, минутлӑха йӑлтах лӑпланчӗ, кӗтеҫҫӗ, нумайӗшӗн пичӗсем шуралса кайрӗҫ.

— Юлташсем!—тесе янӑраса кайрӗ Павелӑн хӑватлӑ уҫӑ сасси. Темӗнле типӗ, вӗри тӗтре ҫунтарса илчӗ амӑшӗн куҫне, чун хавасланнипе сасартӑк ҫирӗпленнӗ кӗлеткипе вӑл ывӑлӗ хыҫне тӑчӗ. Пурте Павел еннелле, магнит ҫумнелле тимӗр татӑкӗсем туртӑннӑ пек, ҫаврӑнса тӑчӗҫ. Амӑшӗ ун ҫине пӑхса тӑчӗ, унӑн ҫунтаракан, хараман мӑнаҫлӑ куҫӗсене анчах курчӗ...

— Юлташсем! Эпир паян хамӑр кам иккенне уҫҫӑнах каласа пама шут тытрӑмӑр, эпир паян хамӑрӑн ялава—тӗрӗслӗх, ирӗклӗх ялавне—ҫӗклетпӗр!

Сывлӑшра ялав аври, шурӑ та вӑрӑмскер, курӑнса кайрӗ, тайӑлчӗ, халӑха ҫурса ун хушшине ҫухалчӗ, тепӗр минутран ҫынсен ҫӳлелле пӑхса тӑракан пичӗсем ҫийӗн, хӗрлӗ кайӑк пек, ӗҫлекен халӑхӑн сарлака ялавӗ вӗҫсе хӑпарчӗ...

— Ӗҫлекен халӑх сывӑ пултӑр!—тесе кӑшкӑрчӗ Павел.

Темиҫе ҫӗр сасӑ ӑна хирӗҫ кӗрлесе илчӗ.

Амӑшӗ, тутисемпе ӑшшӑн кулкаласа, Мазин хыҫҫӑн пырать, ун пуҫӗ урлӑ хӑйӗн ывӑлӗпе ялав ҫине пӑхать. Унӑн тавра савӑнаҫлӑ питсем, тӗрлӗ тӗслӗ куҫсем ирте-ирте каяҫҫӗ—пуринчен те малта унӑн ывӑлӗпе Андрей пыраҫҫӗ. Вӑл вӗсен сассисене илтет—Андрейӑн ҫемҫе нӳрӗ сасси ун ывӑлӗн хулӑн сассипе пӗр пулса янӑранине илтет:

—Тарӑр, ҫӗкленӗр, ӗҫлекен халӑхсем!
Тӑрӑр ҫапӑҫма, выҫӑхнӑ этемсем...



Халăх та хĕрлĕ ялава хирĕç чупать, вăл темскер кăшкăрать, пыракансемпе хутшăнса, каялла-малалла куçать, вăл кăшкăрнисем юрă кĕввисен айĕнче çухалаççĕ. Çак юрра килте хуллентерех юрланă, халь урамра вăл питĕ яка тухать, темĕн пек вăйпа шăранать. Çав юрăра тимĕр хастарлăх янăрать, çав юрă çынсене малашнехи инçе çула чĕнет, вăл çул йывăрри çинчен тӳррипех калать.

Тахăшĕн хăранă савăнăçлă пичĕ амăшĕпе юнашар сиккелесе пырать, чĕтрекен сасă ĕсĕклесех кăшкăрать:

— Пуççăрсем! Ăçта каятăр эсир? Салтаксем унта!

... Сасартăк халăх хумĕн пуçĕ темскер çине пырса çапăннăн туйăнчĕ, çав хум, чарăнмасăрах, темĕн пулас умĕнхи пек, хуллен кĕрлесе кайса, каялла туртăнчĕ. Юрă та вăхăтлăха хуçăлчĕ, унтан каллех хăвăртрах, хытăрах янăрама пуçларĕ. Сасăсен хумĕ унтан тата тепĕр хут аялалла анса кайрĕ, каялла чакрĕ. Сасăсем те пĕрин хыççăн тепри çухалма пуçларĕç, уйрăмăн кăшкăрнисем анчах юрра унччени виçере тытасшăн, ăна малалла ярасшăн тăрăшнине палăртаççĕ.

> — Тăрăр, çĕкленĕр, ĕçлекен халăхсем,
> Тăшманпа çапăçма, выçăхнă этемсем...

Анчах çапла чĕннинче ĕнтĕ пĕрлешнĕ вăйăн шанчăкĕ пулман, ун вырăнне унта темскертен хăрани палăра пуçланă.

Нимскер курмасăрах, малта мĕн пулнине пĕлмесĕрех, амăшĕ халăхсене сире-сире малалла хăвăрт пырать, ăна хирĕç çынсем чакаççĕ: пĕрисем—пуçĕсене усса, куçхаршисене хытарса, теприсем—вăтанарах кулкаласа, виççĕмĕшсем—мăшкăлласа, шăхăрса. Çав питсем çине кичемĕн пăхать вăл, унăн куçĕсем пĕр шарламасăрах ыйтаççĕ, тархаслаççĕ...

— Юлташсем,—тесе янăраса кайрĕ Павел сасси.—Салтаксем те пирĕн пек çынсемех. Вĕсем пире хĕнес çук. Мĕншĕн хĕнес?.. Эпир пуриншĕн те кирлĕ тĕрĕслĕхе илсе пынăшăн-и? Вĕт çав тĕрĕслĕх вĕсемшĕн те кирлĕ. Халь вĕсем ăна ăнланаймаççĕ-ха, анчах вĕсем те пирĕнпе юнашар тăрас вăхăт çывах ĕнтĕ, вĕсем те вăрă-хурахла çаратусемпе вĕлерӳсен ялавĕ айĕнче мар, пирĕн ирĕклĕх ялавĕ айĕнче пырĕç. Вĕсем пирĕн тĕрĕслĕхе хăвăртрах пĕлччĕрех тесе, эпир малаллах каймалла. Малалла, юлташсем! Яланах малалла!

Павел сасси çирĕппĕн янăрать, сăмахĕсем уççăн, çивĕччĕн илтĕнеççĕ, анчах халăх хумĕ чаксах пырать, çынсем пĕрин хыççăн тепри сулахаялла, сылтăмалла килĕсене пăрăнаççĕ, хӳмесем çумне тайăлса тăраççĕ.

Урам вĕçĕнче, площадь çине тухмалли çула картласа, пĕр тĕслĕ сăрă этемсен çтени тăнине курать амăшĕ. Вĕсен кашни хулпуççи çинчех çивĕч вĕçлĕ штыксен аяккисем сиввĕн, çӳхен йăлтăртатса тăраççĕ. Ак ĕнтĕ çак çтенаран, пĕр сасăсăр, пĕр хускалмасăр тăраканскерĕнчен, рабочисем çине сивĕ çапса тăрать, çав сивĕ амăшĕн кăкăрне те çапса тăрать, унăн чĕрине кĕрсе сивĕтет.

Амăшĕ аллисемпе кăкăрне ярса тытрĕ, унтан каялла çаврăнса пăхрĕ те, унччен урам туллиех капланса, кĕрлесе тăракан халăх хумĕ, ялавпа уйăрăлса кайнисем çине пăхса, шикленсе, нимĕн тума пĕлмесĕр тăнине курчĕ. Вĕсем хыççăн пĕр иквиç десяток çын пырать, малалла кашни ярса пусмассеренех кам та пулин вĕсенчен аяккалла сиксе юлать, урам варринчи çул, хĕрсе кайса, ура тупанĕсене çунтарса илнĕнех туйăнать çакна курсан.

— Пусмăр влаçĕ пĕтĕ!—тесе янăрать Федя сасси...

— Пĕтĕм халăх сиксе тăрĕ!—тесе шанчăклăн, хаяррăн ун хыççăн юрлаççĕ вайлă сасăсем.

Анчах юрран янаравĕ хушшинчех хуллен каланă сăмахсем илтĕнеççĕ.

-- Команда парать ..

— На руку!—тесе янăраса кайрĕ малта.

Сывлăшра штыксем авкаланса хумханчĕç, ӳкрĕç, ялава хирĕç тăсăлчĕç.

— Ма-арш!

Амăшĕ куçне сиктермесĕр пăхса тăрать. Салтаксен сăрă хумĕ хускалчĕ, пĕтĕм урам урлăш сарăлса, хăйĕн умĕнче кĕмĕл пек çутăлакан йĕс штыксене йăлтăртаттарса, ерипен, сиввĕн малалла шурĕ. Амăшĕ, пысаккăн ярса пусса, ывăлĕ çывăхнерех тăчĕ те, Андрей та, Павелтан маларах тухса, Павела хăйĕн вăрăм пĕвĕпе картласа тăнине курчĕ.

— Юнашар пыр, юлташ!—терĕ хыттăн Павел.

Çывхарнаçемĕн çывхарчĕç хĕрлĕ ялав çыннисен речĕпе сăрă çынсен çăра тарса тухнă речĕ.

Амăшĕ хăй хыçĕнче чупса каякансен сассине илтрĕ. Пусăрăннă, шикленчĕклĕ сасăсем çапла кăшкăраççĕ:

— Саланăр, ачасем!..

— Власов, тар!..

— Каялла, Павлуха!

— Пăрах ялавна, Павел!—терĕ Весовщиков.—Пар кунталла, эпĕ пытарам ăна.

Вăл аллипе ялав йывăçĕнчен çавăрса тытрĕ, ялав каялла сулăнчĕ.

— Ан тив!—тесе кăшкăрса пăрахрĕ Павел.

... Ялав айĕнче пĕр çирĕм çынна яхăн тăраççĕ, ытла мар, анчах вĕсем питĕ çирĕп тăраççĕ, амăшĕ вĕсемшĕн шикленсе тата темскер калас килнĕн туйăннипе вĕсем еннелле туртăнать.

— Илĕр, поручик, çакна унтан!—тесе янăраса кайрĕ çӳллĕ старикĕн тикĕс сасси.

Вăл аллине тăсса ялав çине тĕллесе кăтартрĕ.

Павел патне лутра офицер чупса пычĕ, аллипе ялав йывăçĕнчен çавăрса тытса:

— Пăрах!—тесе çухăрса кăшкăрчĕ.

— Ил аллусене!—тере хыттăн Павел.

Хĕрлĕ ялав пĕр вăхăт сывлашра пĕрре сылтăмалла, тепре сулахаялла сулкаланса илчĕ те каллех тӳрленсе тăчĕ, офицер каялла ӳкрĕ, çĕр çине персе анчĕ. Амăшĕ çумĕн, чышкисене чăмăртаса, Николай питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ.

— Çавăрса тытăр вĕсене!—терĕ старик урисемпе тапса.

Ик-виç салтак малалла сиксе тухрĕç. Пĕри пăшал прикладĕпе хăмсарчĕ, ялав чĕтрерĕ, тайăлчĕ, салтаксен ăшĕнче çухалчĕ.

— Эх!—тесе шеллесе кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Амăшĕ те тискер кайăк çухăрнă пек кăшкăрса ячĕ. Ăна хирĕç салтаксем хушшинчен Павелăн уçă сасси илтĕнчĕ:

— Тепре курăччен, анне! Сывă пул, аннем...

— Чĕрĕ-ха! Аса илчĕ!—терĕ икĕ хутчен амăшĕн чĕринче.

— Сывă пул, мана пăхса ӳстерекен!

Чĕрне вĕççĕн тăрса та пулин, аллисемпе сулкаласа, амăшĕ вĕсене курма тăрăшать, салтаксен пуçĕ çийĕн Андрейĕн çаврака питне курчĕ,—ун пичĕ кулкалать, ăна пуç таять.

— Манăн тăванăмсем... Андрей... Павел...—тесе кăшкăрать вăл

— Сывă пулăр, юлташсем!—тесе кăшкăрчĕç вĕсем салтаксем хушшинчен.

ЫЙТУСЕМ.

1. Ку произведенирс мĕнле уяв çинчен каланă? Ăна иртттерме рабочисем мĕнле хатĕрленнĕ? Çав вăхăтра полици мĕн тунă?

2. Рабочисен пурăнăçĕ мĕнле пулнă? Уйрăм рабочисем каланă сăмахсенчен ăна ăнланса илме пулать-и?

3. Хăйсен сăмахĕсенче Павелпа Андрей мĕнле тĕрĕслĕхе кăтартса параççĕ? Произведенирен илсе вуласа кăтартăр.

4. Рабочи массине ертсе пыракан Павелăн ăс-хакăл уйрăмлăхне кăтартăр. Çакна произведенири уйрăм вырăнсене илсе кăтартăр.

5. Горький мĕнле класс интересĕсене хӳтĕлет?

6. Ĕççынисем Майăн пĕрремĕшне мĕн тивлетпе уявлаççĕ?

Хальхи Май уявĕ валли лозунгсем хатĕрлĕр.

## ХĂНĂХТАРУСЕМ

**1-мĕш ĕç.** а)... пăс ытла хытă çухăрнинчен хăранă кайăксем пек, шурă-кĕрен пĕлĕт кĕтĕвĕсем васкаса ирте-ирте каяççĕ;

б) пирĕн юна шур çырли шывне чăмăртаса юхтарса кăларнă пекех ĕмсе тăраççĕ.

Ку тĕслĕхсенче мĕне мĕнпе танлаштарнă, уйăрса илсе кăтартăр, çырса илĕр.

**2-мĕш ĕç.** Пурăнăç в ĕ р е с е х тăнă.

Паллă тунă сăмах—пĕр япаларан тепĕр япалана куçнă ăнлану. Куçнă ăнланусене текстран тата 5—6 илсе кăтартăр.

# Н. И. ПОЛОРУССОВ (ШЕЛЕПИ).

(1881 ç.)

Николай Иванович Полоруссов (Уç, Шелепи) 1881-мĕш çулта Тутар республикĕнчи Çĕнĕ Ӳсел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ялти шкултан вĕренсе тухсан, вăл хăйсен ялĕнче хресчен ĕçĕпе пурăннă. Литература произведенисене вăл 1905-мĕш çулта çырма пуçланă.



Полоруссов Октябрь революци хыççăн чылай произведенисем çырса кăларнă. Унăн сăввисем „Шелепи сăввисем" ятлă сборниксенче пичетленсе тухнă, „Сунтал" журналпа хаçатсенче те пичетленнĕ. Шелепин литĕратурăри ĕçне хака хурса, СССР правительстви ăна 1938-мĕш çулта „Знак почета" орденĕ парса наградăланă.

## Ленин шухăшĕ.

Санăн пуçунти вăйлă шухăшсем,
мĕнпур ĕççынни вăйне çĕклесе,
тискер капитал юнлă никĕсне
тĕпĕ-йĕрĕпе кисрентереççĕ;
пĕтĕм çĕр çинчи йĕркесĕрлĕхе
туппа пенĕ пек ишсе пыраççĕ,
мĕнпур ĕçхалăх ирĕклĕхĕшĕн
хурçă шăратса никĕс хураççĕ.
Санăн хăватлă, чаплă шухăшу
хĕвел пек çутă, çăлтăр пек çӳлте—
пĕтĕм тĕнчипе вĕçсе çӳреме
нимĕнле вăй та чарас çук;
пĕлĕт юхнă пек ирĕккĕн юхма
тем пек хăват та çулне пӳлес çук,
тем чухлĕ пысăк тинĕссем çинчен
урлă та пирлĕ тăвăл пек çӳрет.
Тимĕр картисем, вăрмансем урлă,
çил пек ыткăнса, çиçĕм пек кĕрет;
этем ăрăвĕн çулне кăтартса,
çĕре çутатса маяк пек çунать.

Пур ĕçхалăхне чĕнет пĕрлешме,
миллионшар çынна çитсе вăратать.
Пусмăр тĕнчипе тăрса кĕрешме
хурçă пек çирĕп вăя чăмăртать.

## Ленин.

Вут çулăмĕ пек
чĕлхӳ-çăвару
епле сивĕнсе
чĕнми пулчĕ-ши?

Тĕттĕм пуçлăхĕ—
хăрушă вилĕм
епле сан патна
хăйса пычĕ ши?

Тулли уйăх пек
çут сăн-сăпату
мĕншĕн хăвăртах
тĕксĕмленчĕ-ши?

Пурне те курса
тăракан куçу
епле хупăнса
тĕттĕмленчĕ-ши?

Пĕтĕм çĕр çинчи
ĕçхалăхĕшĕн
сан ят чăн-чăнах
чăн та çут çăлтăр.

Хĕвел çути пек
çутă ят пултăр,
яланах манми
çутăлса тăтăр.

ЫЙТУСЕМ.

1. Ленин чĕлхи-çăварне Шелепи мĕнпе танлаштарать?
2. Шелепи сăввинче Ленин ячĕ пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕшĕн мĕн пек хисепли çинчен калакан вырăна çырса илĕр.

## Панулми чечекĕ.

Юлташăмсем, тусăмсем,
çуркуннехи илемсем,
пур çĕр çинче ӳсекен
йывăç-курăк, чечексем,
ман çийĕме пăхăр-ха!
Пурçăн чаршав витнĕ пек
витрĕм эпĕ йывăçа,
чечек айне хăвартăм
саркайăка—сăвăçа!..

Пахчисене, садсене
ырă шăршă тултартăм,
нумайĕшне ĕмĕрте
ырлăх çине путартăм.
Ватти-вĕтти мĕнĕпех
пурте мана саваççĕ,
пуринчен те ытларах
манпа ачасем савăнаççĕ.

ЫЙТУСЕМ.

1. Панулми чечекĕ хăйне мĕнпе танлаштарать?
2. Саркайăка „чечек айне хăвартăм“ тени мĕне пĕлтерет?

## Кивĕ Ӳсел ака туйĕ.

Çуркуннехи ăш хĕвел
сиксе тухрĕ хĕрелсе,
ялтăртатса ялкăшса
çӳлелле май çĕкленсе.

Çутçанталăк çап-çутă
йăлтлатса çех çуталчĕ,
тĕттĕм таçта, çĕр хыçне,
тарса кĕрсе çухалчĕ.

Шăнкăрчисем шăхăрса
çунат çапса юрлаççĕ,
тăри саспе çут тĕнче
чăрăлтатса çех тăрать.
Кăтик-кăтик! чăххийĕ
çамарта тăвать, савăнать;
ун сассипе автанĕ
мăйне тăсса авăтать.
Урам тулли хĕрарăм
урлă-пирлĕ чупкалать,
путек сурăх савăнса
йăлтти-ялтти сиккелет.
Ачи-пăчи вĕсене
хирелле май хăвалать,
хăратасшăн пушшипе
шăртти-шартти çапкалать.
Хăпарнăçем хăпарать
хĕрӳ хĕвел çӳлелле,
кулса тăнă пек пăхать
кивĕ Ӳсел çинелле.

Ака халăх тытăнать
хир еннелле юхмашкăн,
такăр çерем çинелле
ял хыçнелле тухмашкăн.
Кив Ӳселсем ака туй
тин хускатса яраççĕ.
Миçе лаша кайнине
тĕрĕслесе шутлаççĕ,
варăм шерте тăррине
сурпансене çыхаççĕ.
Тăват-пилĕк çухрăма
ăсатаç лашасене,
тата тепĕр çулпала
чуптараç ачасене.
Тата хăйне пĕр çулпа
мăн çыннисем чупаççĕ,
хуса çитсе пĕр-пĕрне,
малтан мала тухаççĕ.

Халăх вĕрет кăткă пек,
кам иртнине пĕлесшĕн,
чупакансем чунтанах
лайăх тутăр илесшĕн.
Малтисене чăн лайăх
тутрисене параççĕ,
вĕсем ăна мăй тавра
çыхса çакса яраççĕ.

Ака çавă вăхăтра
лашасем киле пуçлаççĕ,
каллех хури чăн малта,—
Вастрюк Ильин вăл,—теççĕ!
Мулкач пекех вĕлт те вĕлт
ыткăнаççĕ ялалла,
вĕçсе килнĕ евĕрлĕ
сирпĕнеççĕ малалла.
Çунатлă пек, çулпала
лашасем килсе çитрĕçĕ,
малтисене мăйсенчен
сурпансене çыхрĕçĕ.
Савăннипе лашисем
пуçĕсене ухаççĕ,
халăхĕсем халланса
вĕсем çине пăхаççĕ.

Унтан халăх ункă пек
карталанса çаврăнчĕ,
чăн варрине ĕшне пек
уçă вырăн хăварчĕ.
Вăйлă çынсем чăн мала
туха-туха ларчĕçĕ,
куçран куçа пĕр-пĕрне
пăха-пăха илчĕçĕ.
Хăшĕ сурпан тутрисем
вăркăштарса çӳреççĕ,
хăшĕ халăх варрине
кĕрешмешкĕн кереççĕ.
Ак кĕрешӳ хускалать,
яра-яра тытаççĕ
пĕрне пĕри çурăмран.
Кĕрĕс-кĕрĕс пĕр-пĕрне
çĕкле-çĕкле çапаççĕ,
паттăрĕсен мăйсене
шурă сурпан çакаççĕ.

Кĕрешĕве пĕтерсен,
тытăнаççĕ сикмешкĕн,
çунатлă пек, ыткăнса
кĕрĕслетсе ӳкмешкĕн.
Кам чăн инçе сикнине
татах сурпан параççĕ.

# Çулла.

Ак çу пек çемçе
çу кунĕ çитрĕ,
вĕтĕм çĕршыва
ăçта пăхсан та
вурте сип-симĕс.
Йăш-йăш çумăрпа,
вăш-вăш лĕп çилпе
ешерсе ӳсет
тĕрлĕрен çимĕç.
Улма йывăçпе
çĕмĕрт йывăçсем
сĕтпе витнĕ пек
курăнса тăрать.
Тĕрлĕ чечекпе
çырла çимĕçсем
вутăн та хĕмĕн
çунса курăнать.
Хĕвел йăл-йăл-йăл
çунса çех тăрать,
куçпа тинкерсе
пăхма вăй çитмест.
Çутçанталăка
кăн-кăвак пĕлĕт
кăвак чаршав пек
хупласа тăрать.
Татти-сыпписĕр
кайăк сассипе
тĕнче юрласа
янраса тăрать.
Касси-кассипе
илемпе витрĕ.
Хирсем вăрмансем,
сăртсем, улăхсем,
хура пĕлĕтсем
хуран хăрăм пек
курăнса килет.
Аслати аватать,
çиçĕмĕ çиçет,
тĕнче кисренет,
çĕр епле тӳсет.
Çумăрĕ çăвать,
хĕвелĕ хĕртет,
çĕршыва симĕс
пуставпа витет.
Шаланки, хыта
савăннипеле,
сывлăш çиййĕнче
ташласа тăрать.
Пĕтĕм хир тулли
тĕрлĕ тырпулă
тинĕс хумĕ пек
хумханса ларать.
Хĕвел çав тĕрлĕ
хĕртнĕçем хĕртет,
мĕнпур тырпула
сĕткене кĕртет.
Çавăнпа ăна
пур чĕрчун, этем
ватти-вĕттипе
савăнса кĕтет.

---

*Бонч-Бруевич.*

# Хăрушă кун хыççăн.

Владимир Ильича вĕлерме тăнă хĕрарăм халăхпа пĕрле завод килхушшинчен урамалла тухса тарнă пулнă. Отрядсен йĕркесĕрлĕхĕсем çинчен Владимир Ильичпа калаçса тăнă хĕрарăм та халăх хушшинче хутăшса кайнă; кайран ак мĕн палăрнă: çав хĕрарăма виççĕмĕш пуля тивсе амантнă пулнă. Малтанах вăл аманнине тę сисеймен, ӳксен тин ăна больницăна илсе кайнă.

Халăх, чи малтанах хупăрланса чупса.пынă майĕпе, В. Ильича перекен çын ăçталла кайнине те тĕллеймен. Пенĕ вăхăтра килхушшинче пулнă ача-пăчасем анчах, перекен хыççăн ушкăнĕпе чупса:

— Акă вăл! Акă вăл!..—тесе кăшкăрса пынă.

Кăшт лăпланарах парсан, перекене пĕр рабочи çавăрса тытма ĕлкĕрнĕ. Халăх ăна унтах аркатса пăрахасшăн пулнă, анчах вăйпах туртса илсе, ăна Чекана[1] илсе кайнă. В. Ильича вĕлерме тăнă хĕрарăм, Фани Каплан ятлăскер, социалист-революционерсен (эсерсен) партин членĕ пулнă.

В. Ильича персе амантнă хыççăн малтанхи ик-виç кунĕ ытла та хăрушă кунсем пулчĕç. В. Ильичăн температура хăпарса кайрĕ. Унтан вара кăшт çăмăллана пуçларĕ. В. Ильичăн кăкăр шăммисене рентген аппарачĕпе[2] çутатса пăхмалла тунăччĕ. Çавăнпа ун хваттерне куçарса çӳремелле тунă рентген аппаратне илсе пымалла пулчĕ. Аппарат хатĕрĕсем (машинисем) питĕ те йывăр япаласемччĕ.

Манăн вара вăл аппарата йатса кĕртме пулăшма Кремльте тăракан хĕрлĕ салтаксенчен хăйсем хушшинчен 4 вăйпитти çын уйăрса пама ыйтмалла пулчĕ. Çапла йывăр хатĕрсене В. Ильич пурăнакан пĕчĕк тăвăр пӳлĕме хуллентерех, шавламасăртарах кĕртме тăрăшмалла пулчĕ. Çак юлташсем рентген аппарачĕн хатĕрĕсене йатса В. Ильич пӳлĕмне чĕрне вĕççĕн кĕрсе лартрĕç те, хăйсем юратнă çынĕ çине вăрттăн пăхса илсе, пĕр сассăр коридора тухрĕç, доктор хăй ĕçне пĕтеричченех коридорта шăппăн тăчĕç. Ĕç пĕтсен, вĕсемех вăл хатĕрсене каялла çĕклесе тухрĕç.

Çак кунсенчех, докторсем пирвайхи комисси туса пăхсан, эпĕ Мамонов доктортан В. Ильичăн сывлăхĕ çинчен пĕр пытармасăр, тĕрĕссипе каласа пама ыйтрăм.

— Темĕнле ытла та çирĕп сывлăхлисем анчах чĕрĕ юлма пултармалла çакăн пек вăйлă аманнă хыççан,—терĕ мана хăлхаран пăшăлтатса.

Эпĕ ун çине тĕлĕнсех пăхрăм.

— Вăл пурăнмалла, — терĕ вара мана Мамонов: — вилĕмрен хăтăлса юлчĕ халь. Мĕнле майпа, мĕншĕн апла пулнине хам та пĕлместĕп! Кунта пурте ытла та тĕлĕнмелле пулса пырать...

---

[1] Контрреволюципе кĕрешме тунă Чрезвычайная Комиссия.
[2] Рентген аппарачĕпе çыннăн ӳтне çутатса, ун ăшĕнче мĕн пуррине кураççĕ.

Сусӑрланнине кура, вилмеллех темелле, кун пеккисене эпӗ курман та, илтмен те,—терӗ.

Чӗре ҫурӑлса тухать. „Е иртсе кайман пулсан?"..—тесе шухӑшласа илетӗп хам ӑшӑмра ирӗксӗрех.

— Ҫук, вӑл пурӑнмаллах, — тесе сирсе яратпӑр эпир хамӑр йывӑр шухӑшсене.

Ӗҫ лайӑхланса пыра пуҫларӗ. Арканса кайнӑ сулахай аллине салтса ҫыхнӑ чухне калама ҫук хытӑ ыратнисене В. И. ытла та тӗлӗнмелле чӑтса ирттерчӗ. Пӗрре В. И. сасартӑк вырӑнӗ ҫинчен тӑнӑ та, хӑйӗн вӑйӗ хутшӑннине сиссе пулмалла, ҫынсем сисмен вӑхӑтра коридор урлӑ тула тухса кайнӑ. Унтан вӑл, вӑйӗ пӗтсе ҫитнипе, аран-аран таврӑннӑ; докторсем кун хыҫҫӑн тепӗр хут хӑраса ӳкрӗҫ, хӑйне хӑй питӗ пысӑк сиен турӗ пуль, тесе шутларӗҫ. Чӑнах та температура ҫӗнӗрен хӑпарма пуҫларӗ, анчах часах чарӑнчӗ. Кунта та В. И. мӗнле те пулин хӑйшӗн ҫынна сахалтарах чӑрмантарас тесе ҫунни курӑнать. Вара ун хыҫҫӑн, В. И. тата сиен ан куртӑр тесе, ӑна питӗ хытӑ пӑхма пуҫларӗҫ.

Юлашкинчен В. Ильича хӑйӗн юлташӗсемпе курӑнӑҫса калаҫма ирӗк памалли вӑхӑт ҫитрӗ.

Вӑл яланхи пекех хӑйне мӗн кирлисене пӗтӗмпех ыйтса пӗлесшӗн ҫунма пуҫларӗ.

Тепӗр ик-виҫ кунран В. И. тумланакан пулчӗ, ӑна вырӑн ҫинчен пукан ҫине куҫса ларма, хаҫатсем вулама, тата чи кирлӗ хутсемпе телеграммӑсене пӑхма та ирӗк пачӗҫ.

Тата пӑртак вӑхӑт иртсен, В. И. урӑх выртасшӑн пулмарӗ, вӑл ӗҫлеме тухасшӑн ҫунма пуҫларӗ: ӗҫсӗр кичем те, тата пушшех чирлесе каятӑп, Совнаркомра „сывлӑш та" сыватать,— теме пуҫларӗ... Акӑ ӗнтӗ В. И. председатель пулса ирттермелли Совнарком заседанийӗ пулмалли кун та ҫитрӗ. Вӑл чирленӗ вӑхӑтра Совнарком пухӑнса, хӑйӗн ӗҫӗсене тӑватчӗ, ун чухне Совнарком заседанийӗсене Я. М. Свердлов председатель пулса ирттеретчӗ.

Чир хыҫҫӑнах ирттермелли пирвайхи заседание ҫур сехетрен ытла чӑсмалла мар тесе кавар тунӑччӗ. Шӑп каланӑ вӑхӑтра В. И. заседани пулмалли пӳлӗме кӗчӗ те, яланхи пекех васкаса, анчах халь кӑшт ерипентерех утса, хӑйӗн вырӑнӗ патне иртрӗ. Халӑх комиссарӗсем пурте, вӗсен заместителӗсем тата Совнаркома кӗме пултарнисем ыттисем те пухӑнса ҫитнӗччӗ, пурте хӑйсен вырӑнӗсенчеччӗ. Темӗнле питӗ ҫемҫен шӑмшак тӑрӑх чӗтресе кайнӑн туйӑнчӗ пӳлӗмре, пурте пӗр сывлӑш кӑлармасӑр ларса, нумай пулмасть вилӗмпе юнашар пулнӑскерне вӑхса кӗтсе илчӗҫ.

В. И. хуллен, вӑйсӑр сасӑпа кун йӗркинчи ыйтусене вуласа пачӗ.

Малтанхи ыйтӑва—Халӑх Хуҫалӑх Совечӗн докладне—Совнарком савӑнсах тепрене хӑварчӗ. Иккӗмӗш ыйту тӑрӑх докладчикӗ килмен, ҫапла вара тӳрех виҫҫӗмӗш ыйтӑва сӳтсе-явма тытӑнтӑмӑр; ку ыйту вунӑ минутлӑха анчах ҫитрӗ, унтан вара тата темӗнле пӗчӗкрех ыйтусене пӑхкаларӑмӑр та, пирӗн кун

йĕркинчи ыйтусем пĕтсе те ларчĕç. Çапла вара В. И. вилĕмрен хăтăлса юлнă хыççăнхи пирвайхи историллĕ заседани 35 минут тăрăшшĕ пулчĕ. Заседани пĕтсен, Владимир Ильича йĕри-таврах юлташсем сырса илчĕç. Вăл пуринпе те тĕплĕн, ыррăн калаçсах, ерипен килне кайрĕ.

Малашне унăн сывлăхĕ кунран кунах лайăхланса пычĕ, вăл хăй нумайран нумай ĕç хушшине кĕрсе пычĕ. Тепĕр эрнерен Совнарком малтанхи пекех ĕçлеме пуçларĕ. Çыхнă аллине салтса янă хыççăн, В. И. Совнарком председателĕн сĕтелĕ умĕнче калла-малла утса çӳресе, сулахай аллине çурăм хыçне ярса, сылтăм хул калаккине тытма тăрăшса, хăйне тума хушнă гимнастикăна тăватчĕ.

# ДЖАМБУЛ ДЖАБАЕВ.

(1846 ç.)



Джамбул Джабаев казах халăхĕн аслă юрăçи, халăх поэчĕ, орденоносец. Вăл Казахстанра 1846-мĕш çулта, вырăнтан вырăна куçса çӳрекен çемьере çуралнă.

12 çулхи ача чухнех Джамбул, алла тăмра тытса, Казахстанăн вĕçĕ-хĕррисĕр анлă çеçен хирĕсем тăрăх тухса кайнă. Аулсем тăрăх куçа-куçа çӳресе, Джамбул çав хăрушă вăхăтри ĕçхалăхĕн тӳсме çук йывăр та асаплă пурăнăçĕ çинчен хăйĕн хурлăхлă юррисене юрланă. Çак чăнлăхшăн Джамбула халăх юрататъ, байсемпе мулласем—казах халăхне пăвакансем—ăна курайми пулаççĕ.

Аслă Социализмлă революци казах халăхне ирĕке кăларнă хыççăн, Джамбул ирĕклĕ тăван çĕршыв çинчен юрăсем юрлама тытăнать. Унăн юррисем пĕтĕм çĕршыв тăрăх янăраса саланаççĕ.

Джамбула пĕтĕм Совет çĕршывĕ пĕлет, ăна пĕтĕм совет халăхĕ юрататъ. Союзри пур халăхсен чĕлхипе те ун çинчен юратса калаçаççĕ, юрлаççĕ тата çыраççĕ.

1938-мĕш çулхи майăн 19-мĕшĕнче Совет правительстви Джамбул Джабаева, вăл творчествăлла ĕçре ĕçлеме пуçлани 75 çул тултарнине паллă туса, Ленин орденĕ парса наградăланă.

## Юрăçă сăмахĕ.

Пăхсам: май хĕвелĕ тухса ялкăшать—хирсем халь çурхи чечекре.
Эп хам та, караппăл пек, ватăлнă çын, садпа пĕр танах ешереп.
Йăлтăртатать сывлăм шывĕ çулçă çинче. Кăвак тӳпе тарăн, таса.
Çӳлте май сĕрен кĕперри йăлтăрать, куçа илĕртсе те савса.
Нумай ĕмĕр пынă хăруш тĕлĕкрен вăранчĕç нумай халăхсем.
Май уйăхĕнчи çырма пек сарăлса, юхаççĕ чăн ирĕк кунсем.
Чи аслă тăванлăх пурнать халăхра—унран вăйли çук çĕр çинче.
Çĕршыв çитĕнет, çур вылять, телей ялавне вĕçтерсе ун çинче.

Джамбул—ĕмĕре юрăпа çыракан, пурнап çĕр çула яхăнах.
Вăрах эп шырарăм чăнлăх çĕр çинче. Чăнлăх туйăнатчĕ çуках,
Анчах чăнлăх пулнă, вăл пур. Эп тупрăм хам çамрăклăха.
Хĕвел çутти—Сталин кăтартрĕ мана чи аслă таса чăнлăха.

Ман ачасем, ман ачан ачисем, кам çамрăк манран йăлтах,
итлĕр, Джамбул юрлама тытăнать, çинçе хĕлĕхе янратса.
Итлĕр мана тăрăшса, тимлесе, чĕрĕрсене уçса:
— Ку ăслă сăмахăм, ку—тĕрĕслĕх ман. Юрлатăп тупа туса:

— Юлашки сывлăша çăтиччен чăнлăха та çынна эс юрат.
Чи çамрăк Сталинла ĕмĕре пур юнупа эс юрат.
Похода çӳрекен хастар паттăрсене ырăпа асăнса эс юрат.
Вилĕмсĕр, ăслă, аслă халăха таса чунупа эс юрат.
Ĕмĕр курман туслăха—халăхсен туслăхне эс юрат.
Ăслăран та ăслă çынна, пусмăр-сăнчăра аркатнă çынна
ырăран та ырă çынна—Сталина чĕререн эс юрат.

# Ленинпа Сталин.

Джамбул вăл кăна манас çук виличчен,—
курса эп çӳрерĕм кăмăл туличчен,
курса эп çӳрерĕм çĕршывăм тавра
хăватлă та вутлă маттур утпала.
Вĕçсе, шуса иртрĕç тем тĕрлĕ çĕрсем,
вĕлт-вĕлт туса юлчĕç садсем, уй-хирсем.
Шăваççĕ хавас пĕлĕтсем çилпеле
Алтай еннелле те Çĕпĕр çинелле.
Васкавлă Арыçăн сар хумĕ çинче
хăравçăн та шиклĕн текерлĕк вĕçет.
Риспа хĕвĕнен вĕç-хĕррисĕр хире
хĕртет сар хĕвелĕ—кăварпа пĕрех.
Кĕрлет, хумханать ак чарусăр Арал,
çапать çырана вăл вал хыççăн вал.
Ак пирĕн хирсенĕн пики Актюбе,
тем чухлĕ тырпул ун, выльăх кĕтӳпех.
Унтан эп çĕклерĕм хавас камăла:
пуçламĕш хут куртăм çап-çут Атăла.
Таçтах ыткăнать вăл хăватлăн юхса,
хум çийĕн шур чайка вĕçет ярăнса.
Телейлĕ çĕршывăм, мĕн чухлĕ илем!
Епле юррăма эп ăна пехиллем?
Сисетĕп, туятăп ăшри хам хускава,—
çут ĕмĕтĕм çывах—столица—Мускава.
Ак тухрĕ вăл тăчĕ телей хумĕ пек
илемлĕ çап-çутă катмар тумĕпе.
Илтетĕп: шавлаççĕ ем-ешĕл садсем,
курап: йăлкăшаççĕ çап-çут кӳлĕсем,
кермен пек илемлĕ те чаплă çуртсем,
çĕр айĕн чупаççĕ метро-вагонсем...
Кунта ак çӳренĕ Ленин атте,
этемшĕн çĕкленĕ пурнăç хăватне...
Çеçен хирсенчи казахсен ячĕпе
эп пытăм мухтавлă Хĕрлĕ площаде.

Мăнаçлăн лараççĕ Кремль хўмисем,
çап-çут йăлкăшаççĕ ылттăн çăлтăрсем.
Çĕр чăмăр чĕрийĕ—гранит-мавзолей.
Пур халăх килеççĕ юхса вăл тĕле.
Килеççĕ: казахĕ, ойрочĕ, таджик.
Таса юратуллă чĕрийĕ кашнин.
Килеççĕ: афганецĕ, персĕ, араб;
пуриншĕн те—Ленин хурçă карап.
Эп хам та кĕретĕп вĕсемпе пĕрлех,
салхуллăн пăхатăп çулпуçĕ çине.
Куратăп: выртать вăл нихçан та вилми
тăван та аслă çулпуçĕ Ильич.
Савса пуç таяççĕ ăна ялавсем,
савса пуç таяççĕ ăна халăхсем.
Анчах та илтмест вăл, выртать шăпăртах,
чĕрийĕ тапмасть ун текех кăкăрта.
Илтмест вăл, епле эп казах чĕлхипе
ăшшăн саламлатăп тăван ывăл пек.
Тупа эп тăватăп—ленинец пулма,
Ленин пек хĕрўллĕн кĕрешме, пурăнма.
Пĕлтерĕп эп хамăн сăвă-юррăмпа
ачам-пăчама та йăха, ăрăва
этемлĕх хĕвелĕ—Ленин çинчен,
Ленин пек генилле Сталин çинчен.
Сикет ман чи пысăк телейлĕ чĕрем,—
эп Сталина куртăм тăван Кремльре.
Мĕнпур халăхсен çулпуçпе юнашар
тăрса эп калаçрăм хавас та хастар.
Ун çирĕп маттур аллине тăванла
тытса чăмăртарăм таса кăмăлран.
Çав алăпа Сталин аттемĕр пире
кăтартрĕ мăн çул—хĕвеллĕ ире.
Ертсе вăл пыратĕ ăста алăпа
çĕр çитмĕл пилĕк миллион халăха.
Ун ăсĕ Памир тăвĕнчен те çўлте,
ун кăмăлĕ кашни этем чĕринче.
Атăл шывĕнчен те хăватлăрах вăл,
мĕнпур ĕççыннин тăван ашшĕ вăл.
Хĕвел пек хĕрў те вĕри кăмăлпа
хĕртсе ăшăтать вăл кашни халăха.
Мĕн пек ўкĕтлетĕп эп акă хама:
сăмах çитеймест ман ăна мухтама.
Çеçен хирсене тавăрăнсан Мускавран,
Пур халăха пухăп эп тăван колхозран.
Пĕр харăс янратăпăр эпир вара
сăртсем хушшинчи юхан шыв пек юрра.
Вара çĕршывăмăр тăрăх инçе, пит инçе
Янрĕ вăл юрă Аслă Сталин çинчен.

———

# УЙĂП МИШШИ.

(1911 ç.)

Михаил Данилович Шумилов (Уйăп Мишши) Октябрь революци хыççăн аталаннă совет поэчĕ. Вăл Шупашкар районĕнчи Мăшгавăш ялĕнче 1911-мĕш çулта хресчен çемьинче çуралнă. 1926-мĕш çулта комсомол ретне кĕнĕ. 1933-мĕш çулта Горький хулинчи Педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă.

Уйăпăн çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă: „Автозавод", „Машинăсем кĕрленĕ çĕрте", „Çамрăк вăй".



## Май юрри.

Ав пытаннă тĕнче
чечексенĕн ăшне,
çут хĕвел—пуç çинче,
сывлăш аслă...
Эй, тухар,
уявлар
Майăн пĕрремĕшне,
юррине те юрлар
хурçă саслăн!
Çак куна—
ĕçпеле кĕрешĕвĕн кунне—
ирĕкри ĕççыннишĕн, хавасшăн
чечекпе илемлетнĕ
ачаш çуркунне,
пире çутă,
телейлĕ тăвасшăн.
Эй, хĕвелĕ!
çутат!
Паян эс—ху хăна.
Пирĕнпе
уявра-çке эс ху та.
Халăх... халăх утать...
Тинĕс пек хумханать...
Кашнин пичĕ
хаваслă та çутă.

Пирĕн ялав айĕнче
миллионшар ача.
Тата ертĕр,
ялав айне ертĕр!
Кашни çыхнă мăйне
хĕп-хĕрлĕ хăмача,
кашни çамрăк хăйне
„пионер!" тет.
Çирĕп ут!
Çирĕп ут!
Çирĕп ут, пионер!..
Янăратăр,
хастар юрă юрлăр!
Эх, утатпăр... вĕçсем
леш урам вĕçĕнче...
Юрă, юрă, вĕçсем
уй-хир урлă!
Ав пытаннă тĕнче
чечексенĕн айне,
çут хĕвел—пуç çинче,
сывлăш аслă...
Эй, утар,
уявлар
Майăн пĕрремĕшне,
юррине те юрлар
хурçă саслăн!

# Хир кĕвви.

Çут хĕвелĕ кулнă майăн
пит те ăшă, шăрăх.
Юхтарам-ха юррăма эп
хир-вăрмансем тăрăх.

Ăшă çил вĕрет вăш та вăш,
вутланать вăй-халăм!
Ак, куç умĕнче Мăштавăш—
эп çуралнă ялăм.

Ак таван уй-хирĕ ылттăн,
ылттăнăн юхатĕ...
Халь тухсан, пилĕк-ултттăн,
халь вырма та хатĕр.

Эх, çунать тем пĕçересшĕн
тӳпери вучахĕ.
Ăна пĕрчĕпе пересшĕн
ылттăн тыр пучахĕ.

Путĕр-путĕр путени,
авăт, авăт хыттăн.
Колхоз пурлăхĕ тени
ав юхать вăл, ылттăн...

Эй, кашла, уй-хир, кашла.
Санăн хуйхăрас-и?
Çил арманĕ, хăлаçлан.
Сан ахаль ларас-и?..

Пĕлĕтсем, эй, вĕçĕр, вĕçĕр
каçхи çиле майăн.
Колхоза çитеççĕ кĕçĕр
машинсем нумайăн.

Машинланнă ĕçчен халăх
ир-ирех варанĕ.
Умра уçăлĕ каçалăк,
ĕç юрри шăранĕ.

— Ай, ачсемĕр! Пăх ара,
шавласа хăпарчĕ...—
тесе, шăппăн хăлхаран
пăшăлтатĕ карчăк...

Карчăксемшĕн итлеме,
тĕлĕнмелĕх пур çав.
— Кинемей, теп, кинемей,
пăх, лаша та хурçă ав...

Ăшă çил вĕрет вăш та вăш,
вутланать вăй-халăм.
Ак куç умĕнче Мăштавăш—
ман çĕнелнĕ ялăм.

ЫЙТУСЕМ.

1. „Хурçă лаша" пулма пултарать-и? Кунта Уйăп Мишши „хурçă лаша" тесе мĕне калать?

2. Мĕн вăл „тӳпери вучах"?

3. „Ылттăн тыр пучахĕ тӳпери вучаха пĕрчĕпе пересшĕн" тени мĕне пĕлтерет?

# Хĕвеллĕ май.

Илемлĕ май! Хĕвеллĕ май!
Епле урам кĕрлет.
Епле аван-çке юрлама
çĕршывпала пĕрле.

Капăр тумланнă çĕрте
пур ялĕ, пур хули.
Пĕр вĕçсĕр халăхĕ иртет
мăн урамсем тулли.

Тинĕс пек халăх юххинче
пырать пирĕн отряд.
Çурхи хаваслăх питсенче
чечекленсе тăрать.

Çурхи хаваслăх çĕршывра,
телейлĕ çуркунне.
Аснатпăр юрă-сăвăра
çулпуçăмăр ятне.

Хастарлă пограничниксем
тăраççĕ чикĕре.
Вĕçеççĕ хурçă кайăксем
хĕвеллĕ тӳпере.

Илемлĕ май! Хĕвеллĕ май!
Тулли урам кĕрлет.
Епле аван-çке юрлама
çĕршывпала пĕрле.

# АЛЕКСАНДР АЛКА (БАЧКОВ).

(1913 ç.)

## Çуркунне.

Вăрманĕ, улăхĕ, уй-хирĕ
хывайрĕç хĕллехи тумне.
Тулта ăш çумăрлă çу ирĕ,
тулта ем-ешĕл çуркунне.

Июлĕн ирĕнчи сад çийĕн,
хитреленен çеçкесем пек,
паян хавасланать кашнийĕн
чĕри çурхи ĕмĕтсемпе.

Пĕлтĕр акса хăварнă тырă,
халь симĕс курăнан ыраш,
хăмăш пек ÿстĕр, пултăр ырă,
пĕлтĕрхинчен те тутăрах.

Халь акăнан пĕрчĕ сар тулă,
кăп-кăпăш çĕр çине шăтса,
кашлатăр, ÿстĕр, пултăр тулăх,
пĕлтĕрхинчен виç хут ăнса.

Эпир лартса ÿстернĕ садăн
маттур хĕр пичĕ пек улми
шап-шуррăн курăнтăр, туратăн
çавра çулçи те палăрми.

Çаран çинче ешĕртĕр утă
пĕлтĕрхинчен те çăрарах—
эпир усранă выльăх тутă
хĕл каçтăр ăшă картара.

Çурхи илем куçа савсассăн,
чуна çу шавĕ иленсен,
çак ĕмĕтпе паян хавассăн
тытатпăр кăмăллă ĕçсем.

## Юн.

Вĕçнĕ хаяррăн, нимрен хăрамасăр
ÿт шыракан пульăсем шăхăрса.
Аслă вăрман варринче хускалмасăр
выртнă яш çын, вĕри юн юхтарса.

Вăрçă таçта аякка сулăнсассăн,
кутăн чаксассăн ылханлă тăшман,
юн шăршине сиссе имĕш, хавассăн,
каччă çине вĕçсе аннă çăхан.

Выçă çăхан! Ун ури çине пуснă.
Вичкĕн сăмси те ăмсаннă сăхма!
Каччă чĕтренĕ, куçне ярах уçнă:
— Çук, парас çук эп сана юнăма!

Çăткăн! Эй ан кăранклат чĕрĕ юншăн,
вăл пурпĕрех сан пырна çăвас çук!..
Савнă аннем асапланнă-çке уншăн,
хăйĕн юнне ман ÿте панă чух.

Савнă аннем! Пукане пек ачашăк
тен вăхăт-вăхăт курман ыйхине:
ырă сунса, çĕр каçах тен ачашшăн,
шăппăн юрланă сăпка юррине!

„Çамрăк аннŭ юратать сана, чунăм,
пысăк пул, ывăлăм, паттăр çын пул“...
Аслă телей, çутă пурăнăç суннă,
суннă мана анне вăрăм кунçул.

Пурнăç, кунçул!.. Ан çыхлан пилсĕр кайăк!
Йăлтăр хĕвел кулса тухман тĕле,
сыввăн тăрса, эп хамах утса кайăп.
Кайăп та кĕрĕп тăшман çинелле!

Хĕсĕк куçна эс ан тавăр хăрушшăн!
Пурпĕр ĕçеймĕн ман чĕрĕ юна.
Аслă çĕршывшăн, мухтавлă ăрушăн,
ирĕк кунçулшăн çеç парăп ăна...

Каччă хускалнă, шарт сикнĕ çăханăн
Лăпсăр çуначĕ, хумханнă вăш-ваш.
Паттăр çĕкленнĕ, хĕвел ялтăранă,
Уçă çанталăк сывланă йăваш.

Паттăр вĕри суранне ярса тытнă.
Курăпăр,—тенĕ вăл,—хăшĕ хăшне!
Çак шухăшпа тăшмансем енне утнă,
утнă вăл пурнăç илме—вут ăшне!

# ИВАН ИВНИК.

(1914 ç.)

## Октябрь юрри.

Пултаруллӑ, чаплӑ эпир,
эпир—аслӑ вӑй-хӑват.
Вутлӑ-çулӑмлӑ Октябрь
чĕртрĕ пирĕн çĕршыва.

Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь,
çулӑм çавӑр тĕнчене.
Эсĕ—пирĕн пурнӑç чапĕ,
эсĕ—пирĕн çуркунне.

Çитĕнет Совет вӑй-халĕ,
чап сарать вӑл таврана.
Çĕр те çитмĕл тĕрлĕ халӑх
пĕр çемье пек пурӑнать.

Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь,
çулӑм çавӑр тĕнчене.
Эсĕ—пирĕн пурнӑç чапĕ,
эсĕ—пирĕн çуркунне.

Хуласем ӳсеççĕ аслӑн,
çĕнĕ ӳсĕм уй-хирте.
Ешĕрет сӳнми хаваслӑх
пирĕн çĕнĕ ĕмĕрте.

Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь,
çулӑм çавӑр тĕнчене.
Эсĕ—пирĕн пурнӑç чапĕ,
эсĕ—пирĕн çуркунне.

Пурӑнмашкӑн питĕ лайӑх,
ĕçлемешкĕн пит паха.
Çут Октябрь пире панӑ
çакӑ тивĕç-ырлӑха.

Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь,
çулӑм çавӑр тĕнчене.
Эсĕ—пирĕн пурнӑç чапĕ,
эсĕ—пирĕн çуркунне.

Ленин—Сталин вӑл—Октябрь,
Ленин—Сталин—çуркунне.
Вĕсене мухтатпӑр эпир
пĕтĕм халӑх юрринче.

Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь,
çулӑм çавӑр тĕнчене.
Эсĕ—çĕнĕ пурнӑç чапĕ,
эсĕ—аслӑ çуркунне.

**ЫЙТУСЕМ.**

1. Мĕнле çĕнтерӳ тунипе эпир Октябрь уявне уявлатпӑр?
2. Эпир ӳссе пынине мĕнле сӑмахсемпе кӑтартнӑ?

**СӐНАМАЛЛИ ĔÇ.**

1. Вутлӑ-çулӑмлӑ Октябрь чĕртрĕ пирĕн çĕршыва.
2. Ялкӑш, ялкӑш, çут Октябрь, çулӑм çавӑр тĕнчене.
3. Эсĕ (Октябрь)—пирĕн çуркунне.
4. Ешĕрет сӳнми хаваслӑх.
5. Ленин—Сталин вӑл—Октябрь, Ленин—Сталин—çуркунне.

Куçнӑ ӑнланусене кӑтартса парӑр. Мĕн пирки çавӑн пек куçнӑ ӑнланусемпе çырнӑ?

Хӑшпĕр куçнӑ ӑнланусене мĕнле ахаль сӑмахсемпе улӑштарса е ӑнлантарса калама пулать?

# Телей çулĕ.



Ĕлĕкех мар, авал мар
(суеçтерме аван мар)
аслă Атăл хĕрринче,
сĕм вăрмансем хушшинче,
ятсăр ялта, пĕр касра,
тайлăк-тайлăк килçуртра
мучипеле кинемей
пурăннă, тет, хăйне май.
Телей тени вĕсене
тыттарман, тет, шăпине.
Пĕр сăмахпа каласан,
юмахри пек юптарсан,
пурăннă, тет, юрлăпа,
ялан çитмен пурнăçпа:
выльăх-чĕрлĕх ĕрчемен,
хур-кăвакал хунаман,
тырă-пулă ăнăçман,
пÿлĕхçĕсем пиллемен—
ялан çитмен пурнăçра
пурăннă, тет, асапра.
Çитмĕл çула çитиччен,
вăйран халран ÿкиччен,
пурăннă, тет, мĕскĕнсем
ача-пчасăрах вĕсем.
Шухăшлар-ха хăварах:
питĕ йывăр, çăмăл мар
ватăлăхра вăл вара
ывăл-хĕрсĕр пурăнма.
Анчах çак та пулкалать:
кĕркуннехи кунсенче
хăш чух пĕлĕт хушшинчен
çут хĕвел те пăхкалать...
Кам калăнă ватăсен
килйыш хутшăнмĕ тесе?
Пĕр ирпеле ăнсăртран
карчăк ывăл çуратнă.
Карчăкпала старике
савăнтарас тенĕнех
çак килйышра, çемьере,
çулсерен мар, кунсерен
ывал ÿснĕ васкаса,
çирĕп сывлăхлă, таса.
Вăл ывăла халь эпир
Энтри тесе чĕнĕпĕр.
Сехетпе мар, минутпа,
юмахри пек сум шутпа
ÿсрĕ, çитĕнчĕ Энтри.
Мĕнлерех вăл, пĕлтĕр-и?
Çитĕнчĕ те вăл, курать:
телей çуккă халăхра,
асаппала хĕн-хур çеç
ашкăнаççĕ пур çĕрте.
Шухăшланă, тавçăрнă
(лăпкă кăна ир пулнă),
ватăсене ал парса,
ялне-йышне хăварса,
Энтри каять çулпала
хай телее шырама.
Пĕр кун утать, икĕ кун...
Телей тупни çук-ха ун.
Тата утать малалла,—
унăн телей тупмалла.



*Çул юппинче чул юпа—*
*пĕлтерӳллĕ çырупа.*

Утать, утать çул тăрăх,
кун кунларĕ, каç турĕ.
Пиллĕкĕмĕш ирхине
çитрĕ пĕр çул юппине.
Çул юппинче чул юпа—
пĕлтерӳллĕ çырупа.
Çакă çыру-пĕлтерӳ
акă мĕне пĕлтерет:

„Сылтăмалла кайсассăн,
упа тĕлне пулăн эс;
сулахая çул тытсан,
ăмăрткайăк курăн эс".
Çул юппинче чарăнса
тачĕ те шухăшласа,
Энтри утрĕ малалла
сулахайри çулпала.

Утать Энтри, шав утать,
кун кунлать те каç тăвать.
Çĕр выртать те пĕр ялта,
татах утать малалла.
Мĕн пулать те мĕн килет,
курмаллине курам, тет.
Кайсан-кайсан, вăл вара,
ачамсем, ак мĕн курать:
аслă вăрман çийĕнче
хĕвел пăхать пикенсе.
Çутă хĕвел çумĕнче
пултаруллă, хăватлă,
çирĕп, вăйлă çунатлă
ăмăрткайăк курăнчĕ.
— Капла ăçта çул йĕрлен?—
кайăк ыйтрĕ Энтрирен.
Энтри ăмăрткайăка
ăнлантарчĕ çаплалла:
— Телей çук-çке халăха,
çавă ячĕ шухăша.
Çав телее шырама
тухрăм эпĕ çак çула.
Пурăнмашкăн унсăрăн
çăмăл мар, хăвах куран.
Вăл телее тупмалла,
тесе тухрăм çак çула.—

Ăмăрткайăк Энтрие
ăс вĕрентрĕ ак мĕнле:
— Ырă çыннăм, йăнăшан,
итле эс ман сăмаха.
Телей ӳкмест çул çине,
çакна эсĕ пĕл, енен.
Ăна тытса илмелле,



*Ăмăрткайăк хушнă пек,*
*Ĕнтри вăйне пухрĕ те...*

тытса илме пĕлмелле.
Ырă çыннăм, эп сана
чукмар парап, ил ăна.
Вара эсĕ унпала
çул тыт киле каялла.
Кайсан-кайсан, сан тĕле
упа тухĕ çул çине.
Кунĕ пĕтсе килнĕрен,
мĕкĕрĕ вăл, çĕмĕрĕ.
Çăмăл пулмĕ кĕрешӳ.
Анчах вăйна ан шелле;
çавă сĕмсĕр упана
çапса ӳкер, курсанах.
Çур эс унăн хырăмне,
вара тупăн кирлине.

Энтри ăмăрткайăка
чĕререн тавтурĕ те,
хай чукмара çĕклесе
утрĕ телей çулĕпе.

Утать Энтри, шав утать,
кун кунлать те каç тăвать.
Пĕр кун утать, икĕ кун...
Телей тупни çук-ха ун.

Татах утать малалла,—
ун упана курмалла.
Кайсан-кайсан, çул çине
упа тухрĕ çĕмĕрсе.

Упа пычĕ ун çинех,
мĕкĕрчĕ çине-çинех...
Ăмăрткайăк хушнă пек,
Энтри вăйне пухрĕ те,
пысăк йывăр чукмарпа
вирлĕн çапрĕ упана.
Упа пуçĕ саланчĕ,
унăн ĕмри татăлчĕ.

Упа хырăмне çурса,
кăларчĕ вăл пĕр арча—
ылттăн арча, пысăк мар,
йăтма çапах çăмăл мар.
Уçрĕ. Унăн ăшĕнчен
сиксе тухрĕç—ак тĕнче!—
виçĕ сурăх, пĕр сысна,
пĕр кĕрĕкпе пĕр сăхман.

Икĕ ватă—ир те каç
ывăлĕшĕн кулянаç.

„Ĕмĕрлĕхех ывăла
çухатрăмăр пулмалла",—
тесе хăйсен ывăлне
асилеççĕ кулленех.
Ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем
ачи килсе кĕрессе?

Пĕррехине, ир çинче,
алăк сасси илтĕнчĕ.
Çакă ĕнтĕ вăл Энтри
килсе кĕчĕ. Пĕлтĕр-и?

Виçĕ сурăх, пĕр сысна
килсе кĕчĕ картана.
Амăш илчĕ сăхманне,
ашшĕ илчĕ кĕрĕкне.
Пăхать Энтри таврана,—
юсанать пек самана.
Аслă Атăл хĕрринче,
сĕм вăрмансем хушшинче
хурлăх-асап пĕтет пек,
йывăр пурнăç иртет пек.
Анчах чăн-чăн телеех
тупас килет Энтрийĕн.

Шухăшлана, тавçăрнă
(лăпкă кăна ир пулнă),
вăтăсене ал парса,
ялне-йышне хăварса,
Энтри каять çулпала
каллех телей шырама.
Пĕр кун утать, икĕ кун...
Телей тупас килет ун.
Татах утать малалла,—
таçта телей пулмаллах.

Утать Энтри, шав утать,
кун кунлать те каç тăвать.
Çакă телей çулĕпе
кайсан-кайсан, пĕр ирпе
каллех хĕвел çумĕнче
пултаруллă, хăватлă,
çирĕп, вăйлă çунатлă
ăмăрткайăк курăнчĕ.

Энтри ăмăрткайăка
сăмах хушрĕ çаплалла:
Сана йăлăхтарап-ха,—
чăн-чăн телей пулмалла,
çав телее тупмаллах,
тесе тухрăм çак çула.
Кирек-епле пулсан та,
тупасшăнах эп ăна.
Ăмăрткайăк Энтрие
ăс вĕрентрĕ ак мĕнле:
— Телей ўкмест çул çине,
кăна эс хăвах пĕлен.
Ăна тытса илмелле,
тытса илме пĕлмелле.
Ырă çыннăм, эп сана
чукмар парап, ил ăна.
Ил те, килнĕ çулпала
килне васка каялла.
Кайсан-кайсан, сан тĕле
кашкăр тухĕ çул çине.
Шăлне шаккĕ, ўлĕ вăл,
сана пăвма тăрĕ вăл.
Йывăр пулĕ кĕрешў,
анчах вăйна ан шелле;
эсĕ çавă кашкăра
çапса ўкер, ан хăра.
Çур эс унăн хырăмне,
вара тупăн кирлине.

Энтри ăмăрткайăка
чĕререн тавтурĕ те,
хай чукмара çĕклесе,
утрĕ телей çулĕпе.
Утать Энтри, шав утать,
кун кунлать те каç тăвать.
Кайсан-кайсан, çул çине
кашкăр тухрĕ ўлесе.
Ăмăрткайăк хушнă пек,
Энтри вăйне пухрĕ те
пысăк йывăр чукмарпа
вирлĕн çапрĕ кашкăра.
Кашкăр пуçĕ саланчĕ,
унăн ĕмри таталчĕ.

Кашкăр хырăмне çурса,
кăларчĕ вăл пĕр арча—
ылттăн арча, пысăк мар,
йăтма çапах çăмăл мар.
Уçрĕ. Унăн ăшĕнчен
сиксе тухрĕç—ак тĕнче!—
пĕр лаша та пĕр ĕне,—
савăнтарчĕç Энтрие.
Икĕ вăтă—ир те каç
ывăлĕшĕн кулянаç.



*Пысӑк йывӑр чукмарпа вирлӗн ҫапрӗ кашкӑра.*

„Ӗмӗрлӗхех ывӑла
ҫухатрӑмӑр пулмалла“,—
тесе хӑйсен ывӑлне
асилеҫҫӗ кулленех.
Ӑҫтан пӗлччӗр-ха вӗсем
ачи килсе кӗрессе?

Пӗррехине, ир ҫинче,
алӑк сасси илтӗнчӗ.
Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Энтри
килсе кӗчӗ. Пӗлтӗр-и?
Пӗр лашапа пӗр ӗне
илсе килчӗ вӑл килне.

Пахать Энтри таврана,—
улшӑнайрӗ самана.
Аслӑ Атӑл хӗрринче,
сӗм вӑрмансем хушшинче
хурлӑх-асап тӗп пулчӗ,
йывӑр пурнӑҫ путланчӗ.
Ҫитрӗ кӗтнӗ самана,
лайӑхланчӗ пурӑнма.
Анчах, темшӗн, пӗтӗмпех
пурте пулсах ҫитмен пек.

Курать Энтри, ӑнланать:
юрамасть-ха лӑпланма.

Ватӑсене ал парса,
ялне-йышне хӑварса,
татах тухать вӑл ҫула
чӑн-чӑн телей шырама.
Утать Ентри, шав утать,
кун кунлать те каҫ тӑвать.
Кайсан-кайсан, вӑл татах
курать ӑмӑрткайӑка.
Ӑмӑрткайӑк паттӑра
чукмар пиллет, ӑс парать:
унӑн ҫакӑ чукмарпа
тата тилӗ тытмалла.
Вара пӗтӗм телейпе
пырса кӗрӗ вӑл килне.
Ӑс парана тавтуса
Энтри утрӗ малалла.

Нумай вӑхӑт иртмерӗ,
чее тилӗ тӗл пулчӗ.
Энтри ҫакӑ тилле те,
ӑмӑрткайӑк хушнӑ пек,
чукмарӗпе тӗп турӗ.

Энтри ҫитрӗ те ялне,
хӑйне хӑй те ӗненмест:
ӑна тӑван ялӗнче
юмахри пек туйӑнчӗ.



*Унăн çакă чукмарпа*
*тата тилĕ тытмалла.*

Аслă урам тăршшипе
çĕнĕ çуртсем çĕкленнĕ,
керменсем пек курăнса,
лараç чуна йăпатса.
Каç пулсассăнах, ялта
электрицă çутатать.
Уйра-хирте йăран çук,
унта ĕçлет хурçă ут.

Пăхать Энтри ял çине—
тулли телей çиçĕнет!
Ма тесессĕн—колхозра
пурăнать вăл савăнса.
Амбарне уçать Энтри—
тырă-пулă куç тулли;
кĕрет Энтри витене—
самăр утсем кĕçенеç;
пăхать Энтри картана—
выльăх тулли картара.
Унтан кĕрет те пӳртне
ĕненмест те курнине:
вата амăшĕ, иккен,
вулать ăслă кĕнеке!
Юмах ятăм, юптартăм,
сире кăштах тыттартăм:
упа пулнă—патша вăл,
кашкăр пулнă—улпут вăл,
тилĕ пулнă—кулак вăл.
Халăх курас ырлăха,
халăх пухас пурлăха
çавсем кӳпсе пурăннă.
Ĕçчен халăх телейне,
ĕçчен халăх тивĕçне
хăйсен туса пурăннă.

Пултаруллă, хăватлă,
çирĕп, вăйлă çунатлă
ăмăрткайăк—Ленин вăл,
ăмăрткайăк—Сталин вăл.
Аслă Ленин ăсĕпе
чăваш тупрĕ телейне,
аслă Сталин ăсĕпе
чăваш тупрĕ тивĕçне.
Аслă Атăл хĕрринче,
чăваш халăх çĕрĕнче
чечекленчĕ пурăнăç,
— ĕнтĕ пăх та кур ăна!
Телей тупса панăшăн,
çав ик ăмăрткайăка
пĕтĕм халăх тавтăвать.

*Анатри Елкуш.*

## Сухапуçпе трактор.

Пĕрре, çулла ирхине,
сухапуçпе трактор
хирĕç пулчĕç пĕр-пĕрне.
— Пăрăн!—терĕ сухапуç,—
курмастăн-им эп камне?
Хирте эп хуçа вĕт!—
Трактор, кăна илтсен,
йăл кулчĕ те каларĕ:
— Ай, ытла та çиллĕ эс.
Анчах тăхта пăртакçă,
эсĕ хирте чăнах та
нумай лартăн пуçлăхра,
анчах ĕçсем паянтан
пуçланаççĕ урăхла.
Санăн хуçу, ав, хресчен
йăрансене пĕтерет,
колхозсене пĕрлешет.—
Çак сăмахсем хыçĕнчен
урсах кайрĕ сухапуç:
— Эпĕ сана! Пăрăн теп!
Тупрĕ кампа тавлашма!
Юрă çырнă сăвăç та
ĕлĕк мана мухтаса...—
—Э!.. юлташ!—терĕ трактор,—
юрру кивĕ, ху пекех.
Ан тăр, пăрăн çул çинчен!
Пуçлăх пулайман текех,
халĕ çĕнĕ самана.
Çăва тĕпне пул!—тесе,
трактор кайрĕ малалла.

**ЫЙТУ.**

**1. Тракторпа сухапуç калаçма пултараççĕ-и?**

*Лебедев-Кумач.*

## Çĕршыв çинчен хывнă юрă.

1. Мускавран çĕршыв вĕçне тухах та,
кăнтăртан сив тинĕссем таран,
ирĕкпе çунатланан хуçа пек,
çын çӳрет тăван çĕршывĕнче.
Пур çĕрте те пурнăçĕ хаваслăн
анлă Атăл юхăмĕн юхать.
Çамрăксемшĕн умри çулĕ аслă,
ваттисемшĕн яланах хисеп.

### *Хушса юрламалли:*

Сарлака ман юратнă çĕршывăм!
Вăрмансем, хирсем нумай унта.
Эп кун пек хаваслă ирĕк пурнăç
нихăçан ниçта та тĕл пулман. } 2 хут

2. Кашласа ларать хирте тырпулă,
шутласа тухма çук хулисем.
Пĕр-пĕрне *юлташ* тесе чĕннийĕ
пирĕншĕн нимрен те хаклăрах.
Пирĕн çук халь тивĕç илмен халăх,
хăть хура, хăть шурă—пурпĕрех.
Пĕр сăмах—*юлташ,* ăçта çитсен те,
тăванла кил-çурт парать пире.

3. Килĕшӳллĕ пирĕн кĕрекемĕр,
тивĕçпе хакланӑ кашнинех.
Ылттӑнпа çырса хуратпӑр эпĕр,
Сталин панӑ халӑх законне.
Вӑл законӑн чаплӑхĕ, мухтавĕ
тĕксĕмленмĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.
Кашни çыннӑн пирĕн пур халь тивĕç
вĕренме, канмашкӑн, ĕçлеме.

4. Çурхи çил вĕрет çĕршывӑм тӑрӑх,
хаваспа сиксе вĕрет кунçул.
Пирĕн пек савма-кулмашкӑн урӑх
тĕнчере никам та пелеймест.
Çĕршыва савни тесех саватпӑр,
сыхласа усратпӑр анне пек.
Тӑшмансем асас пулсассӑн, эпĕр
çĕнтермешкĕн хатĕр яланах!

*Иван Шабанов.*

# Мухтавлӑх тата паттӑрлӑх.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнче сивĕ хĕл ларма пуçланӑ вӑхӑт пулнӑ. Хĕвеланӑç енчен типĕ сивĕ çил юра шӑлса, вĕтлĕх чӑтлӑхĕсене пуçтарнӑ. Тусем çинчен юхакан шывсем шӑнса пынӑ.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче çутӑлас умĕн лейтенант Василий Максимович Евграфов боецсене дозора кӑларса янӑ. Чи лайӑх боеца—пĕтĕм застава юратакан Иван Каратеева—вӑл дозорта асли тунӑ. Каратеева пурте хаваслӑ шӳтшĕн, гимнастикӑна лайӑх тунӑшӑн тата вĕренӳ ĕçĕнче патака хĕçпе сатуррӑн касма пĕлнĕшĕн юратнӑ. Çак лутрарах кӑна çирĕп боец тӑшмансене питех те курайман, унӑн камӑлĕ питех те çирĕп пулнӑ.

Вӑл хайпе пĕрле дозора Медведева тата Летавина илсе кайнӑ, вĕсем хыççӑн застава хайĕн яланхи ĕçĕсене туса юлнӑ. Нарядран ирĕклĕ çынсем вӑл кун иртенпех ĕçре пулнӑ. Сивĕ кунсем çитнине кура, пысӑк çурта пурӑнма юрӑхлӑ тӑвасшӑн пулса, вĕсем васкаса çуртра ĕçленĕ. Тайга шӑплӑхĕнче пуртӑ сасси тата мӑлатуксемпе вĕттĕн шаккани таçта çитиех янӑраса тӑнӑ.

Кĕçĕн командир Киселев хӑй отделенийĕпе пĕрле мунча туса, ĕçне пĕтерсе пынӑ. Боец Шипов—сунарçӑ тата питĕ лайӑх стрелок, шурӑ халат çаннисене хулпуççи патнех тавӑрса, чуста çӑрнӑ.

Заставӑри пĕртен пĕр хĕрарӑм—Анна Варламовна, лейтенант Евграфов арӑмĕ, çĕлекен машинӑпа красноармеецсем валли шурӑ çухависем çĕленĕ. Василий Максимович хӑй, шинелне тахӑнса, стройри занятисене тухса кайма хатĕрленсе тӑнӑ. Сасартӑк часовой алӑка уçнӑ та, лейтенант умне пĕр гимнастерка вĕççĕн тата çара уран Летавин кĕрсе тӑнӑ.

— Лейтенант юлташ, японецсемпе манчжурецсем чикĕ урлă каçрĕç. Юланутсемпе те, çуран та. Аллă çын ытла пулаççĕ,— харăсах каласа янă Летавин.

— Хĕçпăшал илĕр! Утсем çине!—хушу панă лейтенант.

Вара застава пĕр харăсах хĕçпăшалланса тăнă. Хĕçĕсене хăйсем çумне çакса, винтовкисене илсе, пур енчен те çынсем чупнă. Хăвăрттăн лашасене йĕнерленĕ. Киселев хăйĕн утне чи малтан йĕнерлесе, чи малтан хăйĕн отделенине строя тăратнă. Шипов ниепле те тылра юласшăн пулман, вăл лейтенанта çăкăрне çапăçу хыççăн та пĕçерсе ĕлкĕрме пултарни çинчен каласа панă. Повар та хăйне Анна Варламовнăпа пĕрле заставăна хураллама хăварнăшăн ӳпкевлĕ пулнă. Анна Варламовна тревога хыççăнах, кĕске пăшал тытса, хăйĕн вырăнне тухса тăнă.

Пограничниксем шĕшкĕ тĕмĕсемпе вăрман винограчĕн сапакисем хушшипе пĕтĕрĕнсе выртакан ансăр çулпа чикĕ патнелле сиккипе чуптарнă. Тӳсĕмлĕ тата сисӳллĕ утсем, пĕчĕк шывсем, канавсем, шурсенчи тĕмсем урлă сике-сике каçса, чăнкă сăртсем çине кармаша-кармаша хăпарнă.

Лейтенант Евграфов вĕриленсе кайнă тур йăрпа чи малтан чуптарса пынă. Тулашран лăпкăскерĕн, унăн шалта çилли вĕресе тăнă. Вăл японецсемпе манчжурецсем пĕлтĕр октябрь уйăхĕнче тапăннине лайăх астунă, ун чухне вăл Волын сăрчĕ çинче цепьре пулнă. Унăн куçĕ умĕнче Камчатка сăрчĕ патĕнче пулнă çапăçу картинисем те курăнса иртнĕ. Евграфов ун чухне хăйĕн кавалери взвочĕпе пĕрле, лейтенант Влач хăйĕн боецĕсемпе пулнă вырăна шыраса, мала тухнă. Взвод японецсемпе манчжурецсене тĕлех пулнă, вара тăшман вĕсене çавăнтах çывăхран пăшалсемпе пеме пуçланă. Чи лайăх красноармееца Валентин Котельникова çавăн чухне вĕлернĕ пулнă.

Лейтенант Евграфов хĕрӳллĕ боец çеç мар пулнă, унăн командира тивĕçлĕ урă ăс, лăпкăлăх, хăйне хăй тыткалама пĕлни, сĕмсĕр тата чее тăшмана хирĕç тăма пĕлмешкĕн чеелĕх те пулнă. Японецсемпе манчжурецсем ăçта вырнаçнине вăл пĕлмен. Японецсемпе манчжурецсем, совет енне каçса, çирĕп позицисем йышăнма ĕлкĕрнине çеç лайăх пĕлнĕ вăл. Вара вăл çав самантрах решени йышăнать. „Тăшмана икĕ енчен хупăрлас та, пулеметсемпе винтовкăсенчен персе, чикĕ тепĕр енне хăваласа ярас. Тăшман пуçсăрлансах хирĕç тăма тытăнсан, ăна вырăнтах пĕтерсе хурас!“

Лейтенант лăпкă та хăйĕн вăйне пĕлекен тата яланах шанчăклă чи лайăх кĕçĕн командира Киселева хăй патне чĕнсе илет.

— Хăвăр отделенине илсе, сăрт çине кĕрĕр. Тăшманăн каялла чакнă чухне айлăма анмалли çулне пӳлĕр,—тет вăл.

Йывăр тактикăллă задачăна Киселев чаплăн пурнăçлать. Вăл Петрушенкăпа Трушин красноармеецсене дозора ярать, хăй вĕсем тавăрăнасса кĕтет.

Дозор часах чуллă сăртăн кăнтăр енчи хĕрринче тĕмсем хушшине пытаннă японецсемпе манчжурецсене асăрхаса илет.

Симĕсрех тĕслĕ пальтосем тата хăлхаллă лăпсăркка çĕлĕксем тăхăннă тăшмансем инçетрен кăшт çеç палăрнă. Анчах та пограничниксен çивчĕ куçĕсем лутра пӳлĕ çынсен кĕлеткисене уççăн курнă.

Киселев хăйĕн отделенине пăшал сассисĕр, шăппăн, шĕшкĕ тĕмĕсем витĕр ертсе пынă

Сивĕ çанталăкра пăшал сассисем типпĕн янăраса кайнă. Японецсемпе манчжурецсем пограничниксене станоклă тата çăмăл пулеметсенчен, гранатометсенчен тата винтовкăсенчен пеме пуçланă. Пульăсем вĕтлĕх тăрăх шăхăрма тытăннă.

Анакан хĕвел пайăрккисем пăхма паман. Тăшмансем ăçта пытаннине пограничниксене курма йывăр пулнă. Киселевпа унăн юлташĕсем тăшман пени еннелле пăхнă. Кашниех тăшмана тĕл персе тивертме тăрăшнă. Пенине тӳсеймесĕр йĕркерен тухса, японецсем айлăмалла чакнă. Анчах та японецсемпе манчжурецсем çаплах Совет Союзĕн территоринчех пулнă-ха. Вĕсене каялла хăваласа ямалла пулнă!

Çак вăхăтра Евграфов, боецсемпе пĕрле, Хурчăка сăрчĕ тăрăхри вăрман хĕррипе пынă. Вăл айлăмалла аннă та боецсене сăртăн хĕвеланăçри хĕррипе илсе кайнă. Кунта сăрт патĕнче ун патне секретран Каратеевпа Медведев чупса тухнă. Вĕсем чикĕ урлă каçнисем ăçта пулни çинчен тата вĕсем халĕ ăçта тăни çинчен каласа панă.

Каратеевпа Медведева хăйпе пĕрле илсе, лейтенант пограничниксене малалла ертсе кайнă.

— Çуран çапăçăва!—шăппăн кăна команда панă вăл.

Сăрт хыçĕнче, аяккарах, пăшал пени тата пулемет пени илтĕннĕ. Пограничниксем, лейтенант ертсе пынипе, сăрт хыçĕнчен тухнă. Киселев хăваланипе, японецсемпе манчжурецсем таса уй тăрăхах пынă. Лейтенант боецсене пеме хушнă. Тăшмансем, айлăмрах вырăна кĕрсе, хирĕç пеме тытăннă. Пульăсем аялтанах вĕçнĕ. Евграфов, боецсемпе пĕрле выртса, малалла, тăшмансем йăшăлтатнă çĕре, пăхнă.

Евграфов сасартăк çул тăрăх утсем тусан çĕклентерсе чупнине курнă. Йĕнер пускăçисенчен тата лаша хӳрисенчен тытса, хăйсен—японецсемпе манчжурецсен—начальникĕсене манса, ут пăхакансемпе ординарецсем çулпах тарнă.

Икĕ енчен те пенине тӳсеймесĕр, гранатомет тата пĕр пулемет пăрахса хăварса, японецсемпе манчжурецсем каялла чикĕ патнелле кайнă.

Иван Каратеев тăшман пуррипе çуккине пăхма айлăм еннелле чуптарнă. Вăл нимĕн хăрамасăр малалла пынă. Пăшал сассисем çаплах чарăнман. Пуля ун айĕнчи утне суранлатнă Каратеев ут çинчен аннă та, хырăмпа шуса, малалла кайнă. Вăл çерте выртакан лăпсăркка çĕлĕксем, хурçă шлемсем, çыхса тунă çĕлĕк айĕн тăхăнмаллисем, кĕрĕксем курнă. Винтовкăсем, патронсем выртнă, унта та кунта японецсен алăсене ăшăтмалли хатĕрĕсем сапаланса выртнă.

Çак вăхăтра унăн пуçне пуля пырса тивнĕ те, вăл ӳкнĕ. Унтан вăл йывăрланнă пуçне пĕр самантра çĕкленĕ те, йывăрланнă куçĕсемпе айлăмалла пăхса:

— Гранатăсем!—тесе кăшкăрса янă.

Ун патне боецсем чупса çитнĕ, анчах та вăл, юрпа витĕнеймен çӳлĕ типпĕ курăк хушшине пуçне чиксе, лăпланса та выртнă ĕнтĕ. Хĕрлĕ юн, çĕлен евĕрлĕ, таса юр çине юхса выртнă. Унăн юлташĕсем хайсен пурнăçĕсене шеллемесĕр, ăна, вут айĕнчен йăтса тухса, тĕмсем хыçне хӳтĕ çĕре вырттарнă.

Лейтенант Евграфов патне красноармеец Анисимов шуса пынă та:

— Лейтенант юлташ, манăн патронсем пĕтсе пыраççĕ,—тенĕ.

Унăн юнланнă аллине курса, лейтенант:

— Сире суранлатнă-им?—тесе ыйтнă.

— Вăл нимех те мар.

— Халех заставăна кайăр.

— Лейтенант юлташ, эпĕ каймастăп,—тенĕ Анисимов хирĕç.

— Эпĕ сире кайма хушатăп.

— Апла пулсан, Петрушенкăна та хушăр, унăн аллине те суранлатнă,—тесе пăшăрханса каланă Анисимов.

— Ăна та хушатăп.

Лейтенант çавăн пек хытă каланă хыççăн, Анисимовпа Петрушенкăн тыла каймаллах пулнă.

Пачах тĕттĕм пулсан, хĕллехи каçра сăртсем курăнми пулсан тин çапăçу чарăннă.

---

*Мих. Грузинцев.*

# Летчик Самба.

Монголин вĕçĕ-хĕрри курăнман аслă çеçен хирĕ çиелтен пăртакçă кăна юрпа витĕннĕ. Километр çура çӳлĕшрен çеçен хир паталаннă пек, ăна витекен юр сарăрах пек курăнать; хаяр çилсем юра вĕрсе пуçтарса, Гоби пуш хирĕсен ылттăн тĕслĕ тусаңĕпе хутăштарса яраççĕ.

Тупсăмне пĕлмелле мар тĕлĕрсе выртакан уй-хир çийĕпе, тӳпере, сивĕ сывлăшăн хрустальле хулăмăшĕсене çурса, „Юнкерс" вĕçет. Пĕчченшерĕн ларакан юртăсем тата çĕр питне чĕнтĕр пек тĕрленĕ çулсем çӳлтен питĕ хӳхĕм курăнаççĕ. Ашĕнчен кăвак бархатпа витнĕ самолет кабининче тĕлĕнтерекен йĕркесĕрлĕх: темскерле кĕрĕксем, аккумуляторсем, чехол ăшĕнче винтовка. Çак пĕтĕм пăтранчăклăхра пассажирсем: çар министерствине васкавлă пакет илсе каякан цирик (Монголи Халăх Республикин салтакĕ), провинцирен тăван килне тавăрăнакан çамрăк монголка, тепĕр шукăль тумланнă монгол—фелдьегер.

Эпир ĕнтĕ виçĕ сехет сывлăшра. Улан-Батора çитме тата сехет çура... Кĕтмен çĕртен пире пилот ларакан рубкăпа çыхăнтаракан кабинăн малти алăкĕ уçăлать те, хурарах алă пирĕн паталла шоколадлă конфетсем тăсать. Ку вăл Самба юлташ, пирĕн летчик. Пĕр аллипе вăл штурвал тытнă, сулахай куçĕпе приборсем çине пăхать, а тепĕр аллипе пире, ăнсăртран тĕл пулса паллашнă çынсене, хăналантарать. Унăн чалăш, чей çырли пек, çуталса тăракан монгол куçĕ пирĕн çине пăхса кăмăллăн кулать.

* * *

Пĕр-пĕринчен мĕн тери аякра, расна тăраççĕ вĕсем, летчикăн тата унăн машинин ăраскалĕсем.

Çап-çутă ялкăшса тăракан шукăль „Юнкерс“ Германире ÿснĕ. Унта ăна тарăшса якатнă, унăн кабинине шалтан бархатпа çапса тухнă, урайне линолеум сарнă,—ятлă та киревсĕр пассажирсем валли хатĕрленĕ ăна. 1921 çулта халь штурвалне чалăш куçлă савăнăçлă йĕкĕт Самба тытса пыракан „Юнкерс“ пĕр татти-сыпписĕр Манчжурия станципе Мукден хушшинче вĕçнĕ. Машинăна пуян тумланнă кăвак, сивĕ куçлăскер, тытса пынă. Унпа юнашар таса комбинезон тăхăннă бортмеханик, юлташĕнчен пĕрре те кая мар чипер тумланнăскер сарăлса ларнă. Анчах, пăртак çулсем иртсен, çак хитре машина, хăйĕн яланхи маршрутне сасартăк улăштарса, темскершĕн час-часах Монголия Халăх Республикин чикки тăрăх Буир-Нор кÿлĕпе Тамсык-Булак таврашĕнче курăнкалама пуçланă.

Юлашкинчен час-часах, çине-çинех пыма пуçланине кура, шалтах тарăхса çитнĕ цириксем, чăтăм пĕтнипе, хăйсем патне пырса йăлăхтаракан самолета пĕр ырă кун пеме пуçланă... Летчик пĕрремĕш пуля тĕлне пулсах аманнă. Капăр тумланнă бортмеханик, лару-тăру мĕнлине тĕрĕс чухласа илсе. питех курнăçланса тăман—самолета аялалла илсе кайнă. Çĕре анна машинăна ухтарсан, боецсем унта çар вырăнĕн планне, Монголия Халăх Республикин чикĕри çарĕсем епле вырнаçнине кăтартакан тата çавăн йышши ытти темĕн чухлĕ шпионла фотоÿкерчĕксем тупнă. Самолета конфискациленĕ, çыннисене Монголия госпиталĕнче сыватса, калла таварса янă. Анчах сывлăшпа мар, çĕрпе...

Вот епле намăсланмалла пулнă çак аристократла машинăн, акă мĕншĕн унăн штурвалĕ патĕнче халь Монголия летчикĕ Самба юлташ ларать.

Хальхи Самба, никам хурламалла мар яка хырăннăскер, духипе сапăннăскер, петлицăсем çинчен полковник паллисем куранакан çĕнĕ шинеле çыпăçуллă хытарса тăхăннăскер,—1927 çулта, тĕп хуларан чи инçетре, 700 километрта ларакан Кимерий районĕнчи рядовой арат[1] пулнă. Ир пуçласа каçчен вĕçтерсе çÿренĕ Самба, лутрашка лаша çине утланса; унăн аллинче вăрăм шучăран çыхнă аркан хуçланса пынă, тĕрлесе эрешлетнĕ „гутул“[2] кунчи ăшĕнче чĕлĕм—„гансу“ выртнă, ăна вăл вăхăтран вăхăта чĕркуççисем çине кукленсе ларса ĕмнĕ. Самба пĕвĕ çинче якалса пĕтнĕ хĕрлĕ халат пулнă, пуçне хураларах панă çемçе хулăм питшăллипе çыхнă. Шăрăх кăнтăрта Самба, хăйĕн кĕтĕвне çал патне пухса, вăкăрсене, тĕвесене тата лашасене валашкаран шăварнă. Шывне валашкана хăйне майлă „витрепе“—çинçе патакран çыхнă йăпăлкка та тĕклĕ качака тирĕпе—тултарнă.

---

[1] Арат—выльăхсем пăхса ÿстерекен ĕççынни.

[2] Гутул—монголсен атти.

Вот ҫакӑнтан, кӗтӳсемпе ҫеҫен уй-хирсенчен, Самба пуҫланӑ та монгол лаши патӗнчен кӗмӗл тӗслӗ „Юнкерс“ патне ҫитиччен ӳсме.

1927 ҫулта ҫамрӑк арат Самба пӗрремӗш хут самолет курнӑ—совет самолетне... Тепӗр икӗ уйӑхран вӑл таван юртӑпа, вӑкӑрсемпе, ҫӑлсемпе, килти „бурхансемпе“ (турӑсемпе) сывпуллашса, Улан-Батора кайнӑ. Тата тепӗр уйӑхран вӑл Монголин пӗрремӗш авиочаҫӗнчи моторист пулса тӑнӑ. Виҫӗ ҫул хушши ҫӳренӗ Самба нефтьпе тата бензинпа вараланса, моторсене пӑхса чакаланнӑ, коленчатӑй валсен, поршень ҫӗррисен, втулкӑсен, храповиксен, магнетӑсен, карбюраторсен ӑсталӑхне вӗреннӗ. 1930 ҫулта унӑн ӗмӗчӗ пурӑнаҫа кӗнӗ: вӑл ҫар летчикӗ пулса тӑнӑ, хӑйӗн аллине вӗренмелли машина мар,—бомбӑсемпе, пулеметсемпе хӗҫпӑшалланнӑ, тӑван ҫӗрсене хӗвелтухӑҫӗнчи, тискер кайӑк еверлӗ, хаяр та харсӑр кӳршӗрен вутпа тата хурҫӑпа сыхлама хатӗр тӑракан чӑн-чӑн вӑрҫӑ разведкин машинине илнӗ.

* * *

Монголин N-мӗш авиочаҫӗн гараж пур. Йӗркипе юнашар ларса тухнӑ „ЗИС“, „АМО“, „ГАЗ“, „Пикап“ маркӑллӑ темӗн чухлӗ автомобиль хушшинче, санитари машинисем, тракторсем, тягачсем хушшинче пӗр темскерле ула сӑрланӑ тимӗр кузовлӑ грузовик, шурӑ курак пекех, уйӑрӑлса тӑрать. Ку вӑл—„японец“. Вӑл—1936 ҫулхи мартӑн 31-мӗшӗнче пулнӑ ҫапӑҫура туртса илнӗ машина. Ун чухне Монголия боецӗсем хӑйсен ӗмӗрхи тӑшманӗпе пӗрремӗш хут хире-хирӗҫ пулса, чӑннипе ҫапӑҫса, ӑна пӗрремӗш хут чӑннипе йӑлт ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, ҫавӑн хыҫҫӑн Монголия Халӑх Республикин территорине ҫулӑхас кӑмӑл тӑшманӑн нумайлӑха тухса ӳкнӗ.

Япония машинине ҫак чаплӑ ҫапӑҫура Самба туртса илнӗ.

Ҫапӑҫу заданийӗпе вӗҫсе тухсан, Самба ҫӳлтен япон-маньчжурсен пулеметсемпе хӗҫпӑшалланнӑ автомашинӑсен ушкӑнне курнӑ. Машинӑсем ҫапӑҫу вырӑнӗ патнелле пынӑ. Ун чухне летчик шкулта вӗрентнӗ пикировани текен илӗртӳллӗ, анчах вилӗмлӗ искусство ҫинчен аса илнӗ. Мотора сӳнтерсе, пин метр ҫӳлӗшӗнчен хурчӑка пек хӑвӑрт анса кайнӑ вӑл хӑранипе тӑне саланса кайнӑ тӑшман ҫине. Хӑй палӑртнӑ машинӑна вӑл пульӑсемпе пӗр самантра йӑлт шӑтарса тухнӑ, пеме пӑрахмасӑр вӑл 50 метр ҫӳлӗшӗ таран аннӑ; машинӑна ертсе пыраканне вӑл пачах вӗлернӗ, унпа юнашар ларнӑ Япония полковникне амантнӑ,—вӑл полковникпа машина иккӗшӗ те монголсен аллине тыткӑна лекнӗ. Самурайне кайран улӑштарса илнӗ, машина авиочаҫрах юлнӑ. Шӑтӑксене питернӗ; халь монгол шофер аллинче грузовик питӗ хӳхӗм ӗҫлет...

* * *

...Вӗҫӗ-хӗрри курӑнман аслӑ монгол ҫеҫен хирӗ ҫийӗпе вӗҫет кӗмӗл тӗслӗ „Юнкерс“. Самолета летчик Самба вӗҫтерет. Ӑна вӑл Улан-Батора илсе пырать.

# АРКАДИИ ЕÇХЕЛ.

(1914 ç.)



Аркадий Александрович Александров (Еçхĕл)—чăвашсен юлашки вăхăтра çитĕннĕ çамрăк поэт. Вăл 1914-мĕш çулта Çĕрпӳ районĕнчи Янсакасси ятлă ялта, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. 1928-мĕш çултан пуçласа 1930-мĕш çула çитиччен вăл Чистопольри (Тутарсен АССР) ялхуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. 1930-мĕш çулта ăна, вăл активлă комсомолец пулнипе, яла колхозсем организацилес ĕçе пулăшма мобилизациленĕ. Çакăн хыççăн вăл колхоз председателĕ пулса та, комсомол ĕçĕнче те ĕçленĕ. 1928-мĕш çултанпа комсомолта тăрать.

Аркадий Еçхĕлĕн сăввисем пичетре 1930-мĕш çулта туха пуçлана. Вăл „Сунтал“ журнал çине нумай сăвăсем çырса тăнă. Унăн сăввисем виçĕ сборник пулса пичетленсе тухнă. Сборниксен ячĕсем: „Малтанхи утăмсем“, „Ырă кун“, „Çĕнтерӳçĕсем“.

Еçхĕл нимрен ытла колхоз пурăнăçĕ çинчен, пирĕн çĕршыв социализм строительствинче туса пыракан çитĕнӳсем çинчен, хальхи ырă та савăк пурăнăç çинчен çырать.

## Хĕрлĕ çăлтăр.

Уяв хĕвелĕ йăлтăр-йăлтăр
тулли шыв тăрăх çиçĕнет.
Пионерсем ав хĕрлĕ çăлтăр
çĕклерĕç уй хапхи çине.

Юман хапха пысăк мухтавлă,
ăна халь çăлтăрпа чыслар.
Колчак ун витĕр пуççăр тарнă,
ун витĕр килнĕ Хĕрлĕ Çар.

Ун витĕр кĕнĕ хĕрлĕ çăлтăр
тата чĕр çулăмлă ялав.

Вĕсем çеç пачĕç имлĕ çутă
хĕвелсĕр пăчăхнă яла.

Халь ака ачасем маттуррăн
сиксе выляççĕ вĕçмелле.
Çăлтăр тĕреклĕ хапха урлă
куç хывнă пилĕк еннелле.

ЫЙТУ.

„Чĕр çулăмлă ялав" тенине урăхла мĕнле калама юрать?

ХĂНĂХТАРУ.

„Хĕрлĕ çăлтăр тата чĕр çулăмлă ялав çеç хĕвелсĕр пăчăхнă яла имлĕ çутă пачĕç" тенине хăвăр сăмахпа, хăвăр ăнланнă пек каласа парăр.

# Виççĕн.

*(Испанири вăрçă çинчен çырнă сăвă).*

Çĕре хăтармашкăн
фашист аллинчен
фронта тухнă ашшĕ
тăван ялĕнчен.

Фронта тухнă ашшĕ
ик ывăлĕпе,
çил вăркăннă чалăшшăн
вĕсен çулĕпе.

Вĕсем пынă виççĕн
пĕрле, юнашар...
Йĕри-тавра выççăн
хĕмленнĕ пушар.

Хаяр çиçнĕ çиçĕм
хура пĕлĕтре.
Вĕсем пынă виççĕн
чи малти ретре.

Виççĕш çĕкленĕ
вĕсем пĕр пăшал.
— Вилĕм пултăр,—тенĕ
вĕсем,—фашиста!

— Ан куртăр çĕршывăмăр
тек мăшкăл, нуша!—
Вĕсем утнă виççĕн
пĕрле, юнашар.

Вутри Овиедо
чирки тăрринчен
фашист пулемечĕ
хăснă пӳ̆лĕнсе.

Хăснă вăл хыттăн
тăхлан сирпĕтсе.
Хĕмленнĕ вут хыпнăн
хура пĕлĕтсем.

Таврара кĕрленĕ
вилĕм ташши...
Шеллемен ниме те
пăр куçлă фашист.

Çиçнĕ тутăх çиçĕм
хура пĕлĕтре.
Вĕсем пынă виççĕн
чи малти ретре.

Вĕсем пынă тӳррĕн,
пĕрле, юнашар...
Анчах ашшĕ ӳкнĕ—
ӳкнĕ пăшал.

Куççем инçе пăхнă,
сӳннĕ хуллен...
Сывпул, теме вăхăт
пулман паттăрсен.

Асли илчĕ ӳкнĕ
сулмак пăшала.
Вĕсем кайрĕç иккĕн
татах малалла.

# Пирĕн Конституци.

Ăна кĕтнĕ çĕршыв, кĕтнĕ çутă тĕнче,
ĕмĕт çуннă пирте шĕл-кăваран.
Баррикадăсенче, чул купи хӳттинче
ăна чĕннĕ Париж коммунарĕ.

Ĕмĕтленнĕ ăна инçетри ĕмĕрсем,
ăна кĕтнĕ, шыранă этемлĕх.
Капитал никĕсне тĕпĕнчен кисретсе,
ун çулне уçса панă Маркс, Энгельс.

Тĕттĕм каç пек Россия тĕпне вут чĕртсе
чĕннĕ шав ун патне Аслă Ленин.
Пусмăрти халăхран тухнă большевиксем
Ленин хыççăн хăюллăн çĕкленнĕ.

Пусмăрти халăхсем утнă пĕр çулйĕрпе,—
пусмăр тытăмĕсем арканччăр, тĕп пулччăр!..
Вăл, кăвак инçетри чи таса çăлтăр пек,
çунса тăнă—пулас Конституци.

Сулхăн Томск тĕрмин хĕсĕк чӳречинчен
ăна курнă таса куçлă Киров.
Вут чĕреллĕ Серго хура суд умĕнче
уншăн тăнă чăн хурçă пек çирĕп.

Пĕр хура кĕркунне—çулăмпа йăлкăшса
уншăн хыпăнчĕ вутлă Октябрь.
Çĕршыв тухрĕ ун чух ĕмĕрхи пусмăртан,
пăшалсем алла илтĕмĕр эпир.

Эпир кĕтĕмĕр çĕнĕ чăн-чăн ĕмĕре,
кун çулсем пирĕн пурнăçпа тулчĕç!
Çак вутра, çулăмра, вăрçăри тĕтĕмре
аталанчĕ пирĕн Конституци.

Ленин пăхрĕ ăна, тăванла аллипе
ачашларĕ, ӳсмешкĕнваскатрĕ.
Вăл тăван алăра халăх ывăлĕ пек
ӳссе пычĕ—хаваслă та паттăр.

Эпир курнă, эпир савнă ăна,
пирĕн ĕç малалла пынă уççăн.
Анчах çак вăхăтрах çутă саманана
чĕтретсе хупăнать Ленин куçĕ.

Эпир тăтăмăр тупăк умне пуç тайса,
иксĕлмерĕ ĕçхалăх вай-халĕ!

Кĕрешӳ çулйĕрне малалла çутатса,
пирĕн парти пуçне тăчĕ Сталин.

Çук, ӳкмерĕ çав кун пирĕн хĕрлĕ ялав,
ăна Сталин çĕклерĕ хăюллăн!
Эпир кайрăмăр çирĕп çулпа малалла,
тăван йышлăн—çĕр çитмĕл миллионăн.

* * *

Этем кĕтнĕ ăна авалтан, ĕмĕртен,
ĕмĕр кĕтнĕ те ĕмĕр ăмсаннă.
Шăранан хурçăра, вĕрекен тимĕрте
эпир курнă ăна, эпир шаннă.

Эпир поездсене мĕн вăй çитнĕ таран
ун патне çитме тулхăртнă: Çитĕр!..
Эпир курнă ăна тухăçри çăлтăрăн
хĕмĕ витĕр, ирхи сывлăм витĕр.

Эпир уншăн çунса пĕр минут лăпланман,
Сталин пăхнă ăна, тытнă çирĕп.
Ун таса тивлетне вăр-хурах тăшманран
Дзержинский сыхласа тăнă, Киров.

Ăна кĕтнĕ çĕршыв, кĕтнĕ çутă тĕнче,
çĕршыв уншăн ĕçленĕ хăватлăн.
Уншăн аслă Серго аслă заводсенче
çĕнĕрен çĕн машина шăратнă.

Тракторсем уй-хирте кăпкалатнă çĕре,—
уй-хирсем çăра пурлăхпа тулччăр!..
Ӳссе çитĕнчĕ вăл çак хĕрӳллĕ ĕçре—
пирĕн ĕмĕт, пирĕн Конституци.

Ăна çулпуçĕ Сталин хăйĕн хурçă
аллисемпе тăшман çитми çӳле
çĕклерĕ те, социализм çурчĕ
хĕвелпе тулчĕ—вĕçĕмсĕр телей!

Пĕтĕм çĕршыв çурхи çĕр пек тапранчĕ,
çĕкленчĕ юрă вăйлăн кĕрлесе!
Туллин вăранчĕ халăхсен таланчĕ,
телейпе тулчĕç пирĕн кăкăрсем!

Мухтав сана, хăватлă аслă Сталин!
Этемлĕхĕн çут шанчăкĕ санра!
Çĕклен, çĕклен ман юрăсен вăй-халĕ,
пĕтĕм малаллăх илтмелле янра!

*С. М. Буденный.*

# Çапăçу эпизочĕсем.

Троцкий Утлă çара питĕ курайман. Утлă çар çине вăл ялanах: „Мĕскер ку çăпаталлă мужиксем хăйсен пичĕсене кулач ретне чикеççĕ?"—тесе каласшăн пулнă пек пăхнă.

Парти, Ленин, Сталин стратегиллĕ утлă çар турĕç. Манăн пирвайхи эскадрон, Сальск çеçен хирĕсенче пухнăскер, хĕрлĕ юланутсем хутшăннипе юр чăмăркки пек ӳссе пырса, малтан полк, бригада, унтан дивизи, корпус, юлашкинчен, арми пулса тăчĕ. Утлă корпуса Сталинпа Ворошилов—10-мĕш армин революциллĕ çар совечĕ турĕç.

10-мĕш арми Царицын (халь Сталинград) патĕнче çапăçнă чухне, пирĕн утлă корпус, Покровский, Улагай тата Шатилов генералсем командăласа пыракан шурă утлă çарăн виçĕ корпусне хирĕç çапăçса, 10-мĕш армине хӳтĕлесе тăчĕ.

Иловля тата Медведица шывĕсем çывăхĕнчи участокра шуррисем хăйсен корпусĕсене пире хирĕç пĕрерĕн-пĕрерĕн ярса пычĕç. Шуррисен салтакĕсене тыткăна илсен, эпир: Шуррисен корпусĕсем пирĕн çине мĕншĕн пĕрле мар, пĕрерĕн лекеççĕ?—тесе тĕпчеттĕмĕр.

— Эпир хамăра пурĕпĕрех çĕмĕрсе тăкассине пĕлнĕ, çавăнпа та сире хирĕç шăпа ярса тухаттăмăр,—тесе ответлетчĕç тыткăна лекнисем.

...Эпĕ шуррисене мĕнле çĕмĕрсе пынине, мĕн пирки ман пĕр корпус шуррисен виçĕ корпусне çĕнтерме пултарни çинчен манран нумайĕшĕ ыйтатчĕç.

Манăн çĕнтерӳсем эпĕ тактикăна ĕç хушшинчех улăштарса пынинчен килнĕ.

Тĕслĕхрен, акă тăшмана ахаль чухне тул çутăласпа кĕтеççĕ. Эпĕ час-часах разведкăсене каçхине, хăш чухне трубачсемпе пĕрле кăларса яраттăм, халех наступлени пулмалла пек тăваттăм. Эпĕ тăшмана çĕрĕпех налетсем туса канăç памастăм. Тул çутăласпа лăпланатăп. Шуррисем таврăнаççĕ те кăнтăр кунĕнче çывăрма выртаççĕ. Çав самантра эпĕ тапранса тухатăп та, шуррисен разведкине тата хураллакан хуралне çĕмĕрсе, тăшман вырнаçнă çĕре пырса кĕрсе, ăна тапăнатăп. Генералсем ӳпкелешсе те илетчĕç: ав Буденный епле тактика тытма пуçларĕ,—пурте тул çутăласпа тапăнаççĕ, ку е кăнтăрлахи апат тĕлĕнче, е çĕр варринче тапăнать,—тетчĕç. Эпĕ эскадронпа командăланă чухнех пĕрре Золотарев полковника тыткăна илнине астăватăп. Вăл хăйĕн çарне фронта тăратнă, хăй Золотаревка ятлă хуторта пулнă. Эпĕ унтан пĕр сакăрвунă километртаччĕ. Манăн, Золотарева тыткăна илсе, хам патăма илсе пырас килчĕ. Эпĕ, фронтăн флангĕсем çумĕпе иртсе, Золотаревкăна çĕрле пĕр виçĕ сехет тĕлĕнче пырса кĕретĕп.—Ăçта кунта командир?—тесе ыйтатăп.—Пуп çуртĕнче çывăрать,—терĕç. Килкартине пырса кĕретĕп. Нимĕнле хурал та çук. Шаккатăп. Пĕр хĕрарăм сасси, сана мĕн кирлĕ, тесе ыйтать манран.

Эпĕ:

— Васкаса уçăр, полковник патне донесенипе килетĕп,— тетĕп.

Алăк уçăлчĕ. Эпĕ пӳрте кĕретĕп, Золотарев çывăрать.

Вăл пĕр кĕпе вĕççĕн кăна тăчĕ, лампа çутать. Эпĕ ăна калатăп:

— Ну, тумлан. Тыткăна лекрĕн,—тетĕп. Золотарев ĕненмест.

— Апла пулма пултараймасть,—тет вăл.

— Тумлан, калаçса ан тăр. Эпĕ—Буденный.

— Мĕнле пулчĕ-ха апла? Эпĕ шутланипе эсир кунтан пĕр сакăрвунă километртра тăратăр. Эпĕ мĕн кирлине пĕтĕмпех хисепе илтĕм, эсир кунта мĕнле лекме пултарнă? Ку тĕрĕс мар. Нимĕнле тактика тăрăх та тухмасть ку ĕç,—тет.

— Эсĕ мĕн вара, эпĕ сан патна тепĕр хут правилăсем тăрăх кĕрессине кĕтетĕн-им?—тетĕп.

Золотарев ниепле та лăпланаймасть.

— Манăн фронт тăрать вĕт-ха, эсир манран икĕ переходра тăратăр вĕт. Ку капла тĕрĕс мар,—тесе ĕнентерет мана Золотарев, ку тĕлĕк мар-ши, тесе ыйтнă пек пулса.

...Виçĕ утлă корпуса çĕмĕрсе тăкнă хыççăн мана çапла задача пачĕç: çĕмĕрнĕ корпуссене хăвалама пăрахса, каялла çавăрăнса, Алексеев генералăн группине хирĕç тухмалла. Алексеев генерал группинче вунă полк пулнă, вĕсем пирĕн пехотăна тăлпалана.

Çав вăхăтра, эпĕ çакна каярахпа пĕлтĕм, Алексеев генерал, фронта хăй пырса, мана шуррисене хăвалассинчен мĕнле пăрса, ярасси çинчен хăйĕн генералĕсемпе сӳтсе-явнă[1].

Вĕсем, чи лайăх утлисене пин салтак уйăрса, мана хирĕç ямалла, тесе йышăннă. Çав пин салтака çĕмĕресрен хăраса, вĕсене çапăçава кĕме каламан, наступлени тунă пек кăтартса, çав хушăра шуррисен хĕсĕнсе çитнĕ виçĕ корпусне Царицына тартма май парас, тенĕ.

Анчах эпĕ Царицын çинелле кайман. Эпĕ каялла çавăрăнса пыраттăм. Мана хирĕç янă раз'езда тытса пĕтернĕ, пĕр салтакĕ кăна, Медведица шывĕ урлă каçса тарса йĕпенсе пĕтнĕскер, генералсен канашлăвне пырса кĕрсе, Буденныйăн утлă çарĕ çывхарса килни çинчен каласа панă. Алексеев генерал малтан хавасланса ӳкнĕ: „Ну, тав турра, пирĕн задача пурнăçа кĕчĕ!"— тенĕ. Анчах кайран вĕсем хăраса ӳкнĕ: Буденный, пĕтĕм корпуссене пĕтерсе, пирĕн çине тапăннине пĕлтермест-ши ку япала?—тенĕ.

Генералсем, эпĕ ăçтан тапăнассине пĕлмесĕр, мана кĕтсе юлчĕç.

...Шăп çав кунсенче Мамонтов генерал хăйĕн пирвайхи рейдне пуçланă, вăл пирĕн тыла ӳкнĕ те Козлов, Тамбов, Грязи хулисене çĕмĕрсе пынă. Эпĕ çар командованинчен Мамонтова шыраса тупса ăна çĕмĕрме приказ илтĕм.

Кăна мĕнле тăвас? Мамонтов таçта 400 километртра çӳрет, ăçта çӳренине никам та пĕлмест. Анчах панă приказа пурнăçа кĕртмеллех.

---

[1] Шуррисем патне тыткăна пирĕн батальон командирĕ лекнĕ пулнă, унта вăл хăйне телеграфист тенĕ. Телеграфист пулса, вăл Алексеев патĕнче канашлура ларнă. Каярахпа вăл, пирĕн пата тавăрăнса, мĕн илтнине каласа пачĕ.

Эпӗ Мамонтова шырама тапранса тухрӑм. Унпа эпӗ ӗлӗкрех те тӗл пулкаланӑ. Эпӗ Сальск ҫеҫен хирӗсенче эскадрон командирӗ пулнӑ чухнех Мамонтова хирӗҫ ҫапӑҫнӑ; унтан Царицын патӗнче ҫапӑҫнӑ, кашнинчех эпӗ ӑна ҫӗмӗрнӗ: Ольховка ҫывӑхӗнче те ҫӗмӗрнӗ, Дубовка ҫывӑхӗнче те ҫӗмӗрнӗ

Мамонтов ҫине кайнӑ хушӑра ҫула май эпир Миронов корпусӗпе тӗл пултӑмӑр. Миронов Хӗрлӗ Ҫара улталанӑ пирки, правительство ӑна закон тулашӗнче тӑрать тесе шутланӑ. Чапышинск хуторӗнче, Анненск станици ҫывӑхӗнче, эпир ҫак корпуса хӗҫпӑшалсӑрлантартӑмӑр.

Малалла каятӑп...

Анчах ӑҫта шырас Мамонтова?

9-мӗш ҫармин фрончӗ ҫумӗпе, тылра, Воронеж кӗпӗрниичи Калач районӗнче пыратпӑр. Воробьево ялӗ ҫывӑхӗнче пирӗннисен таракан обозӗсене тӗл пулатпӑр. Тусан капланса вӗҫет, кустӑрмасем вӗлтлетсе ҫаврӑнни курӑнать, пӑрахса хӑварнӑ урапасем ҫул ҫинче выртаҫҫӗ, юланутлӑ салтаксем татса янӑ ут пӑявӗсемпе вӗҫтерсе пыраҫҫӗ. Ку 59-мӗш дивизинчи пирӗн бригада, ҫапӑҫура ая пулса, тарма тытӑннӑ иккен.

Эпӗ, ҫара сарса, Савельевӑн тӑватӑ утлӑ полкран тӑракан дивизине хирӗҫ атакӑна каятӑп. Утлӑ ҫара ҫӗмӗрсен, эпир шурӑ пехота ҫине пырса тӑрантӑмӑр. Кунта икӗ полк тӑнӑ, вӗсенчен пӗри, император полкӗ ятлӑскер, офицерсенчен тунӑскер пулнӑ, вӗсем пӗри юлмиччен ҫапӑҫрӗҫ. Суранланнисем пӗрне пӗри пулӑшу парса персе тӑчӗҫ. Эпир пехотӑна тӗппипех пӗтертӗмӗр, пӗр виҫӗ пин лава яхӑн обоза ҫаврӑса илтӗмӗр, 1700 ҫын вилни пулчӗ, пӗр темиҫе теҫетке ҫын кӑна тарса ӗлкӗрчӗ.

Мамонтова шыратпӑр...

Мамонтов ҫав хушӑра, хӑйӗн фрончӗпе пӗрлешсе, канса илсе вӑй пухнӑ та иккӗмӗш рейда тапраннӑ. Ку ӗҫ 1919-мӗш ҫулхи сентябрӗн 22-мӗшӗнче пулнӑ. Мамонтов Таловая станцине тухнӑ. Эпӗ те ҫав районах пырса тухрӑм. Пӑхатӑп, тӑшман самолечӗ пирӗн колоннӑсем ҫинче ҫаврӑнса ҫӳрет. Эпӗ, вӑл Мамонтова шыраса ҫӳрет, тесе шутласа илтӗм те ялавсене антарса хума хушрӑм. Ялавсене антартӑмӑр, ҫӗлӗксемпе суллама пуҫларӑмӑр. Самолет ларчӗ. Красноармеецсем, ун патне чупса пырса: Эпир мамонтовецсем пулатпӑр, тесе пӗлтерчӗҫ. Летчик хавасланса тухрӗ.

— Ну, тав турра, сире тупрӑм,—терӗ.

Летчика ҫавӑнтах ҫаврӑса илсе, ун аллинче пӗр ҫыхӑ документсем тата приказ тупрӗҫ. Ку Сидорин генерал панӑ приказ пулнӑ мӗн. Ҫав приказ тӑрӑх Коновалов корпусӗ — фронтран, Шкуро—Воронежран, Мамонтов—тылран, пурте пӗрле тапӑнса, пирӗн 8-мӗш армине ҫӗмӗрмелле пулнӑ.

Шкуро летчикне Мамонтова Калач—Бутурлиновка—Таловая хушшинчи виҫкӗтеслӗхре шырама хушса янӑ. Ҫав виҫкӗтеслӗхе эпӗ пырса тухнӑ. Мамонтов ҫӗрле Таловая витӗр тухса кайнӑ, анчах Буденныйӑн корпусӗ ҫывӑхарнине пӗлсе, станцӑна ҫунтарса янӑ та хӑй пытаннӑ. Вӑл манпа Царицын патӗнче тӗл

пулнисене астуса, урӑх тӗл пуласшӑн пулман, ҫавӑнпа та ҫапӑ-ҫуран пӑрӑнса ҫӳренӗ.

Мамонтов, Шкуро Воронежа ҫитнине пӗлмесӗр, Воронеж ҫинелле кайнӑ. Эпӗ Мамонтов хыҫҫӑн кайрӑм. Эпӗ Мамонтов ҫӗрле иртсе кайнӑ вырӑнсене кӑнтӑр кунӗнче иртсе пыратӑп.

Воронеж ҫывӑхнелле Шкуро Мамонтовпа утлӑ ҫарне тӗл пулнӑ. Ҫав утлӑ ҫара хӗрлисем вырӑнне хурса, вӑл унпа ҫапӑҫма тытӑннӑ. Эпӗ ҫав ҫапӑҫу вӑхӑтне ҫитсе ӗлкӗрейменшӗн питӗ шеллетӗп. Эпӗ вӗсене иккешне те лайӑхах тӳпеленӗ пулӑттӑм. Мамонтов Шкуронне пилӗк пулемет тытса илме ӗлкерсен тин вӗсем шуррисемпе шуррисем хире-хирӗҫ ҫапӑҫни иккенне сиссе илнӗ.

Деникин ҫав хушӑра Курскпа Орел хулисене тытса илме ӗлкӗрнӗ. Фронтӑн тӗп участки ҫинче питӗ те паллӑ Орел-Кромск операцийӗ пуҫланнӑ. Унта вуникӗ кун хушши ҫапӑҫусем пынӑ, ҫапӑҫура пӗр хушӑ шуррисем, тепӗр хушӑ хӗрлисем ҫӗнтерсе пычӗҫ. Ҫав хушӑра эпӗ Воронеж ҫывӑхӗнче тытӑнса тӑтӑм. Эпе хам вӑйсене шута илсе чарӑнса тӑтӑм: манӑн икӗ дивизи, шуррисен—ултта, манӑн утлӑ ҫарта 6 пин юланут, вӗсен—12 пин. Паллах, Воронеж ҫине наступлени тума юрамасть. Хӑйсем наступлени туччӑр, тетӗп. Ҫитменнине тата ҫумӑрсем ҫума пуҫларӗҫ, ҫулсем пӑсӑлса кайрӗҫ. Эпӗ ултӑ талӑк хушши пӗр вырӑнта тӑтӑм.

Боецсем тата канӑҫ памаҫҫӗ.

— Хӑҫанччен эпир тӑрӑпӑр кунта?—теҫҫӗ.

Вӗсене обстановкӑна ӑнлантарса паратӑп. Пире хирӗҫ Мамонтов кӑна мар, Шкуро та тӑрать, пирӗн кашни боец пуҫне вӗсен иккӗ.

Ман боецсен кӑмӑлӗсем хавас:

— Пурӗпӗрех тураса тӑкатпӑр. Мамонтовпа пӗрле Шкурона та пӗтерсе хурӑпӑр!

Ҫав вӑхӑтра ҫакӑн пек инцидент пулса иртрӗ. Ман пата касхиве 12-мӗш дивизин командирӗпе комиссарӗ хӑраса чупса кӗчӗҫ:

— Дивизие Мамонтов ҫавӑрса илчӗ, эпир иксӗмӗр кӑна тӑрса юлтӑмӑр, аран тарса ӳкрӗмӗр...

Эпӗ вӗсем ҫине пӑхса илтӗм те калатӑп:

— Пӗлетӗр-и, юлташсем, эпӗ сире персе пӑрахатӑп. Кама кирлӗ эсир, кунпекскерсем? Эсир революцие кирлӗ мар. Манӑн корпус тӑшман аллине ҫавӑн пек лекнӗ пулсан, эпӗ корпуспа пӗрлех вилнӗ пулӑттӑм, анчах ниҫта та тарса каймӑттӑм.

Дивизи пӗтнӗ пулӗ тесе хуйхӑратӑп, ҫав хушӑра пӑхатӑп та... сасартӑк, хайхи ҫав дивизи, аманманскерех, юрӑсем юрласа килет. Вӗсем командирсемсӗрех Мамонтовран хӑтӑлнӑ иккен. Дивизи пӗртте вачар мар. Вӗсене эпӗ ҫӗнӗ командир—Рева юлташа патӑм та Воронежа тытса илмешкӗн ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра ҫапӑҫӑва чи малтан ятӑм.

Ҫав вӑхӑтрах Мамонтов Сидорин генерал патне докладпа тухса кайнӑ, Воронежра Шкуро пӗччене тӑрса юлнӑ. Вӑл кунта Воронежри контрреволюционерсенчен буржуйсен полкне туса, ӑна казак полкӗ ятне панӑ. Вӗсем, казак пулса тӑнӑскерсем, Мускава тапӑнма пӑхнӑ.

Эпӗ Воронеж ҫывӑхӗнче тӑратӑп. Хам разведкӑна фронт тӑрӑхах сарса ятӑм—пӗр ҫӗр километра яхӑн та пулӗ; шуррисем вара, ман утлӑ ҫар та ҫавӑн пекех тӑсӑлса кайнӑ пулӗ, тесе шутланӑ. Ҫав кунсенче эпӗ Шкуропа ҫыхӑнса унпа „ҫыру" ҫӳретме пуҫларӑм. Унӑн ҫыннисене тыткӑна илетӗп те калатӑп:

— Акӑ, ачасем, ҫак ҫырӑва Шкуро генерала хӑйне тыттарӑр. Анчах асӑрхӑр, урӑх пире хирӗҫ ан ҫапӑҫӑр, иккӗмӗш хут ман алла лексен—персе пӑрахатӑп.

Ҫырӑвӗнче хам ҫыратӑп: „Октябрӗн 24-мӗшӗнче, ирхине 6 сехетре, Воронежа пыратӑп. Генерал Шкуро, сире мӗнпур контрреволюциллӗ вӑйсене площадьре, ҫавра ретсем патӗнче, эсир рабочисене ҫакнӑ ҫӗрте, тӑратса тухма приказ паратӑп. Парадпа командӑлама сире хӑвӑра приказ паратӑп".

Шкуро патне ҫырӑва эпир, запорожецсем туркӑсен султанӗ патне ҫырнӑ пекех, хаваслансах ҫыраттӑмӑр.

Эпӗ Касторная ятлӑ узел ҫине тапӑнтӑм. Шкуро Буденныйӑн утлӑ ҫарне пайӑн-пайӑн ҫӗмӗрме приказ парать. Ҫакна тумашкӑн вӑл октябрӗн 18-мӗшӗнче ҫӗрле виҫӗ колоннӑна виҫӗ еннелле сапаласа ярать: ҫурҫӗр енне, фронт варрине тата тавраран ҫавӑрса илме кӑнтӑр енне. Ҫав хушӑра манӑн пӗтӗм корпус вӗсене пӗр чӑмӑр пулса кӗтсе тӑнӑ. Пирвайхи колонни пирӗнпе центрта тӗл пулчӗ. Ҫапӑҫу пуҫланчӗ.

Ирхине, тӑватӑ сехет. Йӗркесӗр пылчӑк. Ҫӑра тӗтре. Хӗрӳллӗ ҫапӑҫу хыҫҫӑн—эпир шуррисене каялла ҫавӑрса, хӑвалама тытӑнтӑмӑр, сылтӑмалла та сулахаялла та касатпӑр. Эпир вӗсене Воронеж патнех хӑваласа ҫитертӗмӗр. Воронеж тӗлӗнче буржуйсен „казак" полкӗн пӗр батальонӗ пире хирӗҫ тухма тытӑннӑччӗ, эпир ӑна та касса вакларӑмӑр, 36 оруди тата бронепоезд туртса илтӗмӗр.

Октябрӗн 24-мӗшӗ умӗн каҫхине эпир „казак" полкне ҫӗмӗрсе, Воронеж хулине тытса илтӗмӗр. Шкуро хӑраса тарса пырать. Вӑл хӑйӗн поездне те пӑрахса хӑварнӑ, ҫав поездра генералсем валли хатӗрленӗ тутлӑ апата—ӑшаланӑ чӗлхесене тупрӑмӑр эпир.

Кӑнтӑр фрончӗн командующийӗ мана Курск ҫинелле тапӑнма задани пачӗ. Анчах Мамонтовпа Шкурона эпир тӗппипех пӗтерейменччӗ-ха. Вӗсен утлӑ ҫарӗ Касторная станцинче пухӑнса тӑратчӗ. Унта Пастовский генералӑн группи, 5 бронепоезд тата утлӑ полксем 22 пулнӑ.

Эпӗ Касторная узел ҫине тапӑнтӑм. Виҫӗ-тӑватӑ кун хушшинче шурӑ пехота пӗтӗмӗшпех тыткӑна лекет, виҫӗ бронепоезд алла ҫавӑрса илетӗп, пӗрне персе ҫӗмӗретӗп, тепри тарать. Мамонтовпа Шкуро утлӑ ҫарӗ ҫак операцире питӗ ҫемҫешкен ҫапӑҫса пычӗ. Каярахпа эпӗ пӗлтӗм, вӗсене Мамонтов ҫапла приказ панӑ мӗн: Буденныйӑн утлӑ ҫарне тӗл пулсан, унпа ҫапӑҫӑва тытӑнмалла мар, хӗрлӗ пехотӑпа кӑна ҫапӑҫма тӑрӑшмалла.

Касторная узел парӑнсан, шуррисен ӗҫӗ пӗтӗмпех каялла чака пуҫларӗ. Эпир Кивӗ Оскола, Ҫӗнӗ Оскола, Аслӑ Михайловкӑна пӗрин хыҫҫӑн теприне илсе пытӑмӑр. Кунта, Аслӑ Михайловкӑна, пирӗн пата Сталин юлташ—кӑнтӑр фрончӗн

командующийĕ тата Пĕрремĕш утлă çарăн Реввоенсоветĕн членĕсем Ворошиловпа Щаденко пычĕç.

...Воронежа хамăр алла иличченех уйрăм утлă çар тăвасси çинчен ыйту тухса тăчĕ. Ман пата Сталин юлташ патĕнчен, кăнтăрти фронт штабĕнчен, Щаденко юлташ пычĕ, ăна манран хăй тĕллĕн çапăçма пултаракан тата пур енчен те паха утлă çар тума пулмасть-ши, тесе ыйтса пĕлме янă.

Эпĕ хам та çапла тума тахçанах шутланă. Эпĕ уйрăм единица пулса тăракан шултăра утлă масса тумашкăн ыйтса пăхнăччĕ, çав массăн хăйĕн тылĕ пултăр, çав масса арми правипе усă курса, тӳрех фронта пăхăнмалла пултăр, тенĕччĕ. Чăнах та, эпĕ малтан 10-мĕш армин районĕнче, унтан 9-мĕш, кайран 8-мĕш армисен районĕнче çапăçса пытăм. Оперативлă заданисене пурте параççĕ, анчах снабжени камран пулмалли паллă мар. Япала тавраш илсе тăма мана 9-мĕш арми çумне çирĕплетнĕччĕ, шалу илме—10-мĕш арми çумне, пемелли тавраш илме—8-мĕш арми çумне, тĕрĕссипе каласан, ниçта та нимĕн те илмен.

Государствăран эпĕ пĕр лаша та, пĕр винтовка та, пĕр пулемет та илмен. Мĕнпур снабжени тăшманран туртса илнипе пулса пыратчĕ.

Çапла та пулкаланă. Ман пата дивизи командирĕ пыратчĕ те калатчĕ:

— Корпус командир юлташ, патронсем çук.

— Ав, çав станцине куратăн-и? Унта шуррисен тулли патрон склачĕ. Халех унта атакăна кай, патронсем санăн пулаççĕ,— теттĕм.

— Станцине атакăлама приказ панă,—тесе çавăрăнса каятчĕ.

Çапла снабженипе пурăннă эпир.

Эпĕ армин Реввоесоветне Ворошиловпа Щаденко юлташсене лартма ыйтрăм. Пирĕн утлă корпус ун чухнех питĕ шултăра вăй пулса тăнă. Деникина тĕппипех çĕмĕрсе тăкас сталинла стратегин планĕнче пирĕн утлă корпус çине, арми пулса тăнăскер çине, тĕп задачăсем хунăччĕ.

Çапла организациленĕ Пĕрремĕш утлă арми мĕнле çапăçса пыни çинчен эпĕ тепĕр чухне каласа парăп.

*И. Тюленев.*

# Дундич.

(Граждан вăрçин халăх геройĕ).

„Пĕчĕк ача чĕриллĕ арăслан“,—çапла ят панă Ворошилов юлташ Хĕрлĕ Çарăн юмахри пек паттăр боецне Иван Антонович Дундич юлташа. Вăл чăннипех те арăслан пулнă—хăюллă, хăравçăсăр, çирĕп боец. Украинăра, Царицын патĕнче, Ростов çывăхĕнче, Житомир патĕнчи паттăр çапăçура 4-мĕш тата 6-мĕш утлă çар дивизинчи боецсем пурте хăйсемпе юнашар Дундича курнă.

Юланутпа çӳреме ăста, пăшалпа питĕ тĕл пеме пĕлнĕ Дундич фронт умĕнче вĕçтерсе пынă е тăшман тылне кĕрсе кайса, унта хăратса пĕтернĕ. Вăл, 24 хутчен аманнă пулсан та, пĕрре те Хĕрлĕ Çар ретĕнчен пăрахса кайман.

Дундич юлташăн вăрçăри паттăр ĕçĕсен сыпăкĕсем аса килеççĕ, унăн пĕр ĕçĕ тепринчен пахарах, пĕр ĕçĕ тепринчен мухтавлăрах. Октябрьти социализмла революци хыççăнах Дундич Хĕрлĕ гвардин ретне кĕнĕ, хăйĕн пурăнăçĕн юлашки кунĕсемччен вăл совет халăхĕн шанчăкла ывăлĕ, Ленин—Сталин аслă партийĕн тивĕçлĕ ывăлĕ пулнă.

4-мĕш утлă çар дивизийĕ Авилово станцийĕ патĕнче çапăçнă чухне тăшманăн вăй ытларах пулнă. Шатиловпа Покровский генералсен икĕ корпусĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çине шутсăр хытă тапăннă. Çак атакăна хирĕç тăна вăхăтра, каç пулнă тĕле, дивизин командованийĕ 4-мĕш дивизине пулăшма хăйĕн юлашки резервине—Дундич ертсе пынă 21-мĕш полка янă. Çапăçакансен вăйĕсем танлашнă. Шуррисен утлă çарĕн черетлĕ атаки арканса кайнă.

Вăхăтлăха сывлăш çавăрма май пулнипе усă курса, шуррисене хăйсен хыççăн астарса илсе каяс шутпа, дивизин командованийĕ хăйĕн чаçĕсене каялла илсе кайма тытăннă. Шуррисем хĕрлисем хыççăн хыпалансах пынă, вĕсем эпир çĕнтертĕмĕр, тесе мухтанма та хатĕр пулнă. Анчах вĕсем пысăк йăнăш тунă. Дундич ертсе пыракан полк аяккалла пăраннă та, тăшманăн тылне кĕрсе кайнă, унăн артиллерине, иккĕмĕш разрядри обозне çавăрса илнĕ; çапăçура хĕрлисем çиеле тухнă.

Шуррисем хушшинче пăтрану тухса кайнă. Вĕсем вăрçă пулнă вырăна вуншар тупă тата нумай пулеметсем пăрахса хăварнă. Шурă казаксем темиçе çĕр çын Хĕрлĕ утлă çар аллине тыткăна лекнĕ.

Вăрçă ĕçĕнчи чеелĕхĕн, çине тăнин, паттăрлăхăн тепĕр тĕслĕхне Дундич 1919 çулта Воронеж патĕнче кăтартнă. Ун чухне Хĕрлĕ утлă çар Деникина çапса аркатма тунă сталинла плана ĕçе кĕртнĕ. Боецсем, тăшманпа çапăçса, ăна çĕмĕрсе тăкасшăн çуннă.

Воронеж хули çине тапăниччен малтан тăшмана тĕплĕн разведка тумалла, унăн оборонине сăнаса пĕлмелле пулнă. Акă

сентябрĕн 23-мĕшĕнче Дундич ертсе пыракан утла хурал, Ворона юхан шыв урлă каçса, Кийвань районĕнче тăшман тылне кĕрсе кайнă.

Çĕрле пулнă. Хĕрлĕ çар разведкисем шуррисен фрончĕ тăрăх хурал тăракан хуралçă заставăсемпе утлă çар патрулĕсене асăрханă. Ыйту тухса тăнă: тăшман хуралçисенчен мĕнле иртсе каймалла?

„Погонсене çыпăçтармалла",—тесе приказ панă Дундич. Тепĕр 10 минутран утлă хурал Задонское шоссе тăрăх малалла кайнă.

Кĕтмен çĕртен тĕттĕмре: „Тăрăр, кам каять!",—тенĕ сасă илтĕннĕ. Çак кĕске вăхăтра канавран сиксе тухнă икĕ Кубань казакĕ хăйсен винтовкисене утлă хурал çине тĕлленĕ. Дундич нимĕн те хумханман, çĕтсе кайман. Вăл малалла тухнă, шурă офицер пек пулса кăшкăрнă:

— Эсир камсем, суккăр пултăр-и? Хăвăрăн кайнине курмастăр-и? Эпĕ сире, подлецсене...

Шурă салтаксем васкаса ўкнĕ, хĕрлисен хуралне фронт урлă каçарса янă. Дундича çакă çеç кирлĕ пулнă. Разведчиксем шуррисем вырнаçнă вырăна хăвăрт çитнĕ, окопсем ăçтине, пралук карса тухнисем ăçтине, хула патне ăçтан ирĕкрех пыма май пуррине сăнама тытăннă.

Юлашкинчен, пулас операци валли кирлĕ сведенисене пуçтарнă. Çак сведенисене утлă çар корпусĕн штабне вăхăтра çитерме каллех шуррисен фрончĕ урлă каçса каймалла пулнă. Пĕр минут кая юлниех пĕтĕм ĕçе пăсма пултарнă. Шуррисем хăйсен тылĕнче хĕрлисен утлă хуралĕ пуррине пĕлнĕ, Дундича шыраса тупма кавалеристсен ушкăнне янă.

Генерал Шкуро хăй тылне пырса ўкме хăюлăх çитернĕ хĕрлĕ боецсене халĕх тытса килессе кĕтсе тăнă. Анчах çакан пек савăнăçлă хыпар вырăнне вăл: хĕрлисен хуралне шырама янă поручике касса вĕлернĕ, хĕрлисем тарнă,—тенĕ хыпара илнĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче Шкуро генерал Воронежран тухса тарнипе çеç çăлăнса юлнă. Çав кунах каçхине хулари клуба митинга пухăннă Воронежри рабочисем хĕрлĕ командир Дундич юлташа саламланă. Рабочисем унăн паттăрлăхĕпе мухтаннă, ăна коммунизм ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен примерлă çын тенĕ, вăл çĕнĕ паттăрла ĕçсем тăвасса кĕтнĕ. Дундич рабочисем кĕтнине те. вĕсем ĕмĕтленнине те пурăнăçа кĕртнĕ.

1920 çулта Дундич 6-мĕш утлă çар дивизинче пулнă. Çак дивизие Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă командирĕсенчен пĕри С. К. Тимошенко юлташ ертсе пынă. Çак дивизи Киеври операцинчен пуçласа Львов патне çитиччченех шурă поляк çарĕсене темиçе хутчен те çапса çĕмĕрнĕ, вĕсене пирĕн Украинăран каялла çавăрăнса пăхмасăр тухса тармалла тунă. Шурă поляксемпе çапăçнă вăрçăра Дундич уйрăмах палăрса тăнă.

Июнĕн 4-мĕшĕнче Тимошенко дивизийĕ поляксен виççĕмĕш çурран тата пĕрремĕш утлă çар дивизисене сирсе пăрахса, Ровно хулине çавăрса илнĕ. Рыдз-Смиглы генерал çак районра çапăçма хăтланнă, анчах ĕç ăнман.

Ровно хулине ҫаварса илнӗ хыҫҫӑн Дундич хӑйӗн полкипе поляксен тылне йышӑннӑ, тӑшмансене хӗвеланӑҫ еннелле чакма чарнӑ. Ҫакнашкал йывӑр лару-тӑрӑва кӗрсе ӳкнӗ шурӑ поляксем Александрия районӗнче 4 ҫуран ҫар дивизине, утлӑ ҫарӑн 8 полкне пуҫтарнӑ. Еӗсем Дундич юлташӑн паттӑр полкӗ ҫине кашни каҫ тапӑннӑ.

Хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем пулнӑ. Поляксен пӗр ротине, пӗр эскадронне ҫеҫ мар ҫӗмӗрсе тӑкнӑ Дундич полкӗ. Поляксен вӑйӗ вунӑ хут ытла пулнӑ пулин те, Дундич полке вӗсене ҫӗмӗрсе тухнӑ, кам ун ҫулне картлама хӑтланнӑ, вӑл вӗсене пурне те хаяррӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Пирӗн боецсем паттӑр кӗрешнӗ пирки шурӑ поляксем Случь шывӑн леш енне каҫса тарнӑ.

Ровно патӗнчи мухтавлӑ ҫапӑҫура Дундича, полк пуҫӗнче тӑнӑскерне, шурӑ поляксен пӑшал пульли тивнӗ. Вӑл революцин чӑн-чӑн паттӑрӗсен мухтавлӑ вилӗмӗпе вилне.

Иван Дундич—совет халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗ, Ленин—Сталин партийӗн тивӗҫлӗ воспитанникӗ. Вӑл Ворошилов ертсе пынипе ӗҫленӗ, вӑл унран коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешме вӗреннӗ. Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ Дундич юлташӑн паттӑр ӗҫӗсене нихӑҫан та манас ҫук. Унӑн пурӑнӑҫӗ Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн боецӗсемпе командирӗсемшӗн питӗ паха пример пулса тӑрать.

---



# ТРУБИНА
## Марфа Дмитриевна.

(1888 ç.)

## Арçури.

*(Калав).*

I.

Амбар умĕнчи вырăн çине выртса, Кавĕрле çывăрса кайма пуçланăччĕ, анчах калитке шăлтăрт туса уçăлни ăна кансĕрлерĕ. Калитке сасси хăлхана кĕрсенех, Кавĕрле куçне уçса ячĕ. Калиткерен хура мĕлкĕ пек такам кĕчĕ, тӳрех Кавĕрле патнелле пырать.

— Кавĕрле!—чĕнчĕ кĕнĕ çын хуллен.

Сассинчен Кавĕрле хăйсемпе юнашар Микулана палларĕ. Кавĕрле, пуçне хăпартласа, минтер çине чавсаланчĕ.

— Эсĕ çывăрмастăн-çке,—терĕ Микула Кавĕрлен ури вĕçне пырса ларса.

— Çывăрсах каяйман-ха,—терĕ Кавĕрле, анасласа илсе.

— Итле-ха, ача, эсĕ маншăн пĕр ĕç тума пултараймăн-ши?— терĕ Микула. Кавĕрлене çурăмран çемçен тытса, пĕрре кăмăллăн çапса илчĕ.

— Мĕнле ĕç?

— Кĕлтесем çухалкалама тытăннăранпа хир хуралне комсомолецсем черетпе тăма пуçланине пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ?

— Пĕлетĕп, вара?

— Ман вырăна пĕр каçлăха хир хуралне каймастăн-ши, тетĕп.

— Ху ăçта каятăн, ху мĕншĕн тăмастăн?

— Мана пусă хуралне тăма черет тивнĕ, каç эпĕ килте пулаймастăп пуль. Йăлăма каю çулма каятăп: те килейретпĕр çав каç, те килейместпĕр. Çумăр пулсан, тен килеймĕпĕр те, çавăнпа эпĕ сана, хам çитеймесен, ман вырăна хурала каймăн-ши, тетĕп.

— Каятăп-çке,—терĕ Кавĕрле хавассăнах.

— Юрĕ, эпĕ сана куншăн пĕр çулталăклăха „Пионер сасси" çырăнса парăп, хам шаллăма Хĕлипе хурала пĕрле илсе кай. Пĕччен те хăрас çук эсĕ. Маттур пионер вĕт эсĕ. Сана Октябрь уявĕнче комсомола илетпĕр, тесе самах тапратнăччĕ-ха пĕркун пирĕн комитетра.

— Çитĕ сире, мĕн çĕр варринче калаçса тăратăр?—илтĕнчĕ Кавĕрле ашшĕн сасси. Унччен те пулмарĕ, лупас айĕнче карăнса тăракан шăналăк ăшĕнчен Кавĕрле ашшĕ тухре, анасласа Кавĕрлене Микула патне пычĕ.

— Кавĕрлене сăмах каламалли пурччĕ... Хам вырăна хир хуралне ярас тетĕп те, çавăнпа çĕрлех килтĕм,—терĕ Микула.

— Илтетĕп те-ха эпĕ, — терĕ Кавĕрле ашшĕ, —'пĕчĕкрех-ха вăл, Кавĕрле, айвантарах. Хуралтан Хĕлиппе иккĕшĕ те çĕр варринчех тарса килĕç вĕсем.

— Çу-ук! Хăрамастăп эпĕ!—терĕ Кавĕрле.—Пĕчченех каятăп.

— Хăрамалли те çук унта: ялтан инçе мар.

— Юрĕ эппин. Ытах, хăрасан, хам та тухса пăхкалăп",— килĕшрĕ Кавĕрле ашшĕ.

— Ырă каç пултăр,—терĕ те Микула, калитке патнелле утса кайрĕ.

— Чипер кай,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, хăй вырăнĕ патнелле хуллен утса.

— Эсĕ мĕн, Тяпук пичче, кунта ларатăн?—илтĕнчĕ Микула сасси калитке хупăнсанах.

— Ахалех, чĕлĕм туртса ларатăп-ха. Хăяр пахчине кайса пăхрăм та, иртсе килнĕ чух кунта чĕлĕм чĕртме лартăм,—илтĕнчĕ урамран Тяпук сасси.

Çын утса кайни илтĕнчĕ. Кăшт тăрсан, Микуласен хапхи шăнкăлт турĕ. Такамсем калаçса илчĕç. Колхоз карташĕ енчен тиха кĕçенни илтĕнчĕ.

Кавĕрле тепĕр виçĕ-тăватă кунтан хир хуралне каясси çинчен шухăшласа кăшт выртрĕ те, çăлтăрла кăвак пĕлĕте пăхса, çывăрса кайрĕ.

## II.

Икĕ-виçĕ кун ĕнтĕ пĕр уççи-хупписĕр çумăр çăвать. Колхозниксем хире ĕçе тухаймаççĕ. Кавĕрлен ашшĕ те, амăшĕ те килтех ĕçлеççĕ. Амăшĕ колхоз миххисене саплать. Ашшĕ чӳрече умнерех пуканпа ларнă та кĕптĕркке аттине саплать. Кавĕрле сĕтел пуçĕнче хаçат вуласа ларать.

Кавĕрле ашшĕ, çумăр чарăнмасть-и тесе, чӳречерен пăхапăха илет. Çумăр чарăнманнине кура- кăмăлсăрланать.

— Вăт путсĕр çанталăк, пăсăлса кайрĕ те юсана та пĕлмест, хирти ĕçе чăрмантарать. Тулă кĕлтине турттарса пĕтерсе капан тумалла, çумăр пĕрмай лăпсăртатать.

Кавĕрле ашшĕ аттине шакканăçемĕн мăкăртатать. Вăл—бригадăра капан тăваканни. Уяр пулнă пулсан, колхозниксем вырса пăрахнă тулла турттарсан, Кавĕрле ашшĕ хирте капансем туса та лартатчĕ, тулă та типĕлле капана кĕретчĕ. Халĕ суратри

кӗлтене те шыв каяс пур, те вӑрӑсем турттарса каяс пур. Ав Лешкас колхозӑнне пӗр ҫӗртех сакӑр урапа тулӑ турттарса кайнӑ, теҫҫӗ. Вӑррисене шыранӑ—тупайман.

Паянхи каҫ, сакӑр сехетрен пуҫласа вуник сехетчен, Кавӗрлепе тепӗр 14 ҫулхи пионерӑн Хӗлипӗн хире кӗлте хураллама каймалла.

— Санӑн, ывӑлӑм, халӗ кӑнтӑрла ҫывӑрмаллаччӗ. Ҫӗрле, асту, хуралта ҫывӑрса ан кай,—терӗ Кавӗрле ашшӗ, ывӑлӗ ҫине пӑхса.

— Ҫу-ук! Эпӗ хуралта ыйӑхламастӑп.

— Эсир, вышка ҫинчен анса, час-часах Кӗтеснер ҫырми пуҫнелле кайса ҫаврӑнса килӗр. Ҫав Кӗтеснер ҫырми тӑрӑх кӗлтесене турттарса кайма пултараҫҫӗ,—тет татах ашшӗ.

— Эпир хуралта вышка ҫинчех ларса ирттерместпӗр ӗнтӗ, темиҫе хутчен те кирлӗ вырӑнсене кайса пӑхса ҫӳретпӗр,—тесе, Кавӗрле хаҫатне сӗтел ҫине хучӗ те, ура ҫине тӑрса, чӳречерен пӑхрӗ.

Кавӗрле—вунпилӗк ҫулхи ача, ҫӳллӗ, тӗреклӗ ӳт-пӳлӗ. Унӑн пӳне пӑхсан, вунҫичӗ ҫулта темелле, анчах ҫаврака пит-куҫӗ ҫамрӑк, ачалла пӑхать. Кавӗрле халӗ кӗҫӗн вӑтам шкулта 7-мӗш класра вӗренет. Вӑл кӑвак блуза тӑхӑннӑ, ун ҫинчен чӗн пиҫихxи ҫыхнӑ, блуза тӗслӗ кӑвак йӗмне атӑ кунчи ӑшне кӗртсе янӑ.

Кавӗрле чӳречерен пӑхса тӑчӗ те, хура ҫӳҫне аллипе шӑлса илсе, хӑй вырӑнне ларчӗ.

— Чарӑнмасть пуль ку ҫумӑр паян та, каллех хура пӗлӗтсем хупӑрласа илчӗҫ,—терӗ вӑл.

— Кӗҫӗр ҫумӑр ҫусан та хурала каятӑн-и?—терӗ амӑшӗ, михӗсене чӳрече патнерех илсе пырса, шӑтӑксем тата ҫук-ши, тесе пӑхкаласа.

— Каятӑп,—терӗ Кавӗрле хӑюллӑн.

— Каясса кай та, ан шӑн,—терӗ амӑшӗ.

— Каймалла ҫав,—терӗ ашшӗ, ывӑлӗпе арӑмӗ ҫине пӑхса илсе.

„Аван манӑн атте-анне",—тесе шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнче Кавӗрле. Унӑн ашшӗне кӑҫал ҫуркунне парти членӗн кандидатне йышӑннине аса илсен, вӑл ашшӗшӗн хӗпӗртесе илчӗ.

Ҫапла калаҫкаласа ларнӑ хушӑра Тяпук пичче пырса кӗчӗ. Тяпук лаптак питлӗ, лапчӑк сӑмсаллӑ, пиҫӗкрех куҫлӑ, хӗрӗх ҫулхи ҫын. Хура сухалӗ унӑн, качака сухалӗ пек, малалла кӑнтарса тӑрать. Тяпук, чӗлӗмне хыпса, лапсака пуҫне тӑмалантарса янӑ. Пӗркенсе килнӗ шӑтӑк сахманне йӑрхахран ҫакса ячӗ. Ҫара урипе хур пек лапкан пусса, алӑк патӗнчен Кавӗрле ашшӗ ҫывӑхнерех иртсе, сак ҫине пырса ларчӗ.

— Ну, юхтарать ҫумӑр, ну юхтара-а-ать. Ҫанталӑкӑн ҫумӑра пӑкӑласа тӑракан пӑкки тухса ӳкнӗ пуль. Пӑккине тупса, ҫумӑр юхакан шатӑка пӑкӑласа лартасчӗ,—терӗ Тяпук.

— Ан та кала, ку ҫумӑра, чистах йӑлӑхтарса ҫитерчӗ. Кӗлте кӳрсе пӑрахаймарӑмӑр,—терӗ Кавӗрле ашшӗ, сапласа пӗтернӗ хӑрах аттине ҫавӑркаласа пӑхса.

— Эй-эй-эй, ҫумӑрӗ те ҫав мӑшкӑлланӑ пек хӑтланать. Колхоза сӑтӑр тунӑнах туйӑнать,—терӗ Тяпук, кулкаласа, тутисене такама тӑрӑхланӑ пек туса илсе.

Тяпук Кавӗрлесемпе хире-хирӗҫех, пӗр кӳршӗре пурӑнать. Кавӗрле ӑна килӗштермест. Пӗррехинче Тяпук Кавӗрлене хаҫат сарса ҫӳренӗ чух вӑрҫсах кӑларса янӑ.

— Эсӗ ан ятлаҫ, эпӗ ирӗксӗр ҫырӑнтармастӑп,—терӗ Кавӗрле, Тяпук йӗркесӗр кӑшкӑрса пӑрахнинчен тӗлӗнсе.

— Калаҫса тӑратӑн тата! Ак тапса сиктерӗп те, калаҫӑн вара!—терӗ Тяпук, пушшех чӑрсӑрланса.

Комсомолецсемпе пионерсем ваттисене колхоз ҫинчен ӑнлантарнӑ чухне Тяпук ҫапла каларӗ, тет:

— Кӗрӗрех, колхозу пулин, хӑвӑрах. Колхоза кӗрсе выҫӑ анкаса ларма эпӗ ухмах мар. Колхозра ӗҫлесе тӑранас ҫук. Мана колхоз кирлӗ мар. Манпа колхоз ҫинчен калаҫса ҫӑвар пылакне те ан ярӑр.

Ку ӗҫ виҫ-тӑват ҫул каялла пулнӑ. Халӗ те Тяпук колхоза кӗресшӗн мар, колхоз ҫинчен тӑрӑхласа калаҫать.

— Колхоз туллийӗ, ахаль те шултӑраскер, ҫумӑрпа шӳсе тата шултӑраланать пуль, хе-хе-хе... Ҫанталӑк... тӗнче... хе-хе-хе, ним тума та ҫук...—шӑлне йӗрет Тяпук.

— Суратсене шанчӑклӑ ҫынсем тунӑ. Шыв кайман, терӗҫ паян ирхине правленинче,—терӗ Кавӗрле ашшӗ, Тяпука пӳлсе. Тяпук, сӳннӗ чӗлӗмне ҫӑварӗнчен кӑларса, тепӗр хут табакне тултарса чӗртме тытӑнать. Чӗлӗмпе аппаланнӑ май сӑмаха урӑх япала ҫинчен тапратса ярать.

— Вот, иртнӗ юнкун каҫ эпӗ питӗ хӑрарӑм. Ҫуралнӑранпа та эпӗ ун пек хӑраман. Ну, пулать вӗт япала! Ҫанҫурӑм сӑрлатса кайрӗ, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑчӗ. Чутах чун тухса каятчӗ,—терӗ Тяпук, пӳртри ҫынсем ҫине пӑхса.

— Мӗнтен хӑранӑ вара эсӗ апла?—тесе ыйтрӗ Кавӗрле амӑшӗ.

— Эпӗ вӑл каҫ Хир-кассине хӑяр катки кайса леҫрӗм. Каткан икӗ кӑшӑлӗ те татӑлса кайнӑччӗ те, кӑшӑл кайса ҫаптарам Катка Михалине, терӗм. Каткана парса хӑварса, киле килме ҫӗрле тухрӑм. Хурал чанӗ вунпӗр ҫапрӗ. Ҫӗр тӗттӗм, куҫран тӗртсен те курӑнмасть. Кӑшт ҫумӑр пӗрӗхкелет. Утса пыратӑп ҫулпала, Кӗтеснер ҫырми тӗлнелле ҫитетӗп. Сасартӑк, такам ши-ши-и! шӑхӑрчӗ. Эпӗ ҫаплах утатӑп. Тата хытӑрах шӑхӑрчӗ, хӑлха патӗнче шӑхӑрнӑнах туйӑнать Эпӗ хытӑрах утма тытӑнтӑм. Унччен те пулмарӗ, ҫавраҫил пӗтӗрӗнсе килчӗ. Мана ураран ӳкерес пек ҫил туллать. Эпӗ, утайми пулса, ҫул хӗррине лапчӑнса лартӑм та, пите хупласа ларатӑп. Сасартӑк мана алӑран кант! тытрӗ. Эпӗ пите уҫрӑм: ах, турӑ! ман ҫумра вут куҫлӑ, мӑйракаллӑ, качака сухаллӑ, ӗне чӗрни пек чӗрнисене шакӑлтаттарса ташласа тӑра парать. Ташларӗ, ташларӗ те, лапсака ҫӑмласкер, хӗрлӗ вут-кӑварлӑ чӗлхине ҫӗре ҫитиччен тӑсса кӑларса, ахӑрса ячӗ. Эпӗ вилес пек хӑрарӑм.

— Ҫиетӗп сана, халь ҫисе яратӑп,—тесе, мана чӗрнисемпе пуҫран кукалеме тапратрӗ. Чун тухас патнех ҫитрӗ, аран чӗре анине тытма ӗлкӗртӗм. Тата пӑртак тӑнӑ пулсанах вилсе каяттӑм пулӗ те, анчах Лешкасра автан авӑтса ячӗ. Автан сасси илтӗнсенех, хайхи темскер пачах куҫран ҫухалчӗ. Пӑхатӑп: чӑнкӑ ҫыран хӗррине пынӑ та, тӗпсӗр ҫырмана йӑванса каяс

пек тăратăп. Урана пĕрре ярса пуссанах, пĕтетчĕ пуç. Арçури мана аташтарса Кĕтеснер çырминчи чикĕ юппине илсе пынă. Çав тĕпсĕр çырмана сиктерсе, арçури мана вĕлересшĕн пулнă та, анчах, автан авăтса ячĕ. Вилĕм çитмен-ха манăн, телей пур çапах. Аран-аран тăна кĕтĕм. Турра асăнса, сăхсăхса, аранах киле каймалли сукмак çине тух каларăм та вара чиперех киле çитрĕм.

— Суятăн пуль, Кĕтеснер çырми таврашĕнче арçури пур тенине илтмен-çке эпĕ,—терĕ Кавĕрле ашшĕ.

— Суйса мар ара, хам куçпа хам куртăм,—терĕ Тяпук ĕнентерсе. Каллех чĕлĕмне паклаттарса, хăй йĕри-тавра чĕлĕм тĕтĕмĕ сарса, Тяпук çаплах пакăлтатать.

— Арçури çук, теççĕ. Эпĕ хам та, çакна куриччен, çук теттĕм. Хăраса чутах вилмерĕм. Кĕтеснер çырми таврашĕнче арçури курăнкаланине яланах калакалаççĕ. Ĕлĕк-авал Çĕрпӳ тимĕрçи кайса вилнĕ, тет, çав çырмана, вăл халь те хăратать. Пуринчен ытла юнкун каç, çумăр пулсан, пит алхасса çӳрет, теççĕ.

— Паян юнкун каç мар-и çак?—терĕ Кавĕрле амăшĕ. Кавĕрле шарламасăр итлесе ларать.

— Хăш чух çырмари чулсене мăлатукпа персе çӳрет, тет,—палкать Тяпук.

— Юмах юптаратăн эсĕ, Тяпук,—терĕ Кавĕрле ашшĕ.

— Кĕçĕр хуралтан арçури тытса кил,—терĕ амăшĕ,—курар арçурине, мĕнле тĕслĕ-ши вăл.

— Кăмака çинче ларакан сӳтĕлнĕ карчăксен юмаххипех хăрас мар-ха,—терĕ Кавĕрле.

— Эпĕ хам нихăçан та курман çав арçури таврашне, курман япалана çуках тетĕп. Кĕтеснер çырми хĕррине, колхоза кĕриччен, çĕрле пĕр пĕчченех лаша çитерме каяттăм, нихăçан та нимĕн те курман,—терĕ Кавĕрле ашшĕ, юсаса пĕтернĕ тепĕр аттине сакайне лартса. Вара Тяпук çине пăхрĕ те:

— Кала чăннипе, мĕн пустуй сăмахласа ларатăн, арçури куртăм тесе?—терĕ.

— Пустуй пулсан, пустуй пултăр. Эпĕ, арçурине эсĕ курнă, тесе каламастăп вĕт, хам курнă та, хам калатăп,—терĕ Тяпук çилленсе.

Кăшт калаçкаласа ларсан, Тяпук, сăхманне пĕркенсе, тухса кайрĕ.

Кавĕрле каллех хаçат вулама тытăнчĕ. Ашшĕ чӳречерен пăхса илчĕ.

— Э-э-э, çуталса килет! Иртет ĕнтĕ çумăр,—терĕ вăл кăмăллăн.

Чăн та, кăшт тăрсан, çумăр чарăнчĕ. Хĕвелăнăçĕ енчен хура пĕлĕтсем сирĕле пуçларĕç. Пĕлĕт хĕрри çуттăн курăнчĕ, уяртать. Ав хĕвел те, пĕлĕт таткисене сирсе, Кавĕрлесен карташĕнчи чӳречинчен пăхать.

Çанталăк уяртни Кавĕрле ашшĕн ĕçлес килнине хăпартрĕ. Ыран ирех капан тума тытăнас шухăшпа, вăл, сапласа пĕтернĕ аттисене тăхăнса, колхоз правленине тухса утрĕ. Кавĕрле амăшĕ каçхи апат пĕçерме тытăнчĕ. Кавĕрле урама тухрĕ. Унта, çерем çинче, çумăр хыççăн ачасем пуханнă та лапталла выляççĕ.

III.

Хӗвел анса ларичченех чылай малтан Кавӗрле, каҫхи апат ҫисе, хурала кайрӗ. Амӑшӗ алкум вӗҫне тухса: ан хӑра, ывӑлӑм, астусарах ҫӳре,—тесе, алкум вӗҫӗнче юлчӗ.

Колхоз вышкийӗ тӗреклӗ, аван. Тӑррине хӑма витнӗ те хӗвелтен те ҫумӑртан та хӳтлӗх пур. Пӗр урлӑ кашта ҫине чан ҫакнӑ. Чанпа юнашар фонарь ҫакӑнса тӑрать.

Кавӗрле вышка ҫине хӑпарса, йӗри-тавра пӑхкаласа тӑма юрататъ. Вышка ҫинчен питӗ инҫе курӑнать. Ав Атӑл хӗрри халӗ кӑваккӑн, уҫҫӑн курӑнать. Аналалла каякан пароход шапшурӑ, ача тетти пек пӗчӗккӗ курӑнать. Хӗвеланӑҫӗ хӗп-хӗрлӗ. Хӗвел вакӑ пӗлӗтсем хыҫне анса ларать, вӗсене вут хыпнӑ пек хӗрлӗ ҫутӑпа хӗретет.

Ҫанталӑк тӳлек. Таҫтарах курак сасси илтӗнет. Вышка ҫинчен пӗтӗм колхоз хирӗ, ҫаранӗ, пахчасем, ферми, колхозӑн йышлӑ капанӗсем ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек курӑнаҫҫӗ. Ферма хӗррипе юхан шыв, авкаланса, хӗвеланӑҫ ҫуттинче хӗрелсе юхса выртать.

Ҫаран ҫинче, шыв хӗрринче, хур-кӑвакал ушкӑнӗсем курӑнаҫҫӗ. Пӗр хурне тем пулнӑ, хытӑ какӑлтатса ҫухӑрать. Хур сасси, уҫҫӑн янӑраса, аякка илтӗнет. Ҫуртри пуссинче колхозӑн сурачӗсем пит ҫӑра курӑнаҫҫӗ. Ав тулӑ сурачӗсем... Миҫе вӗсем?! Кунтан суса тухма ҫук, анчах Кавӗрле пӗлет: сакӑрҫӗр аллӑ икӗ сурат.

Ав, Кӗтеснер ҫырмийӗ те кунтах. Тулӑ пусси лӑп Кӗтеснер ҫырмине перӗнет. Тискер Кӗтеснер ҫырми: пысӑк, темиҫе юплӗ, хӗрлӗ ҫыранлӑ ҫырма курӑнса, сарӑлса выртать. Хӗрлӗ ҫырӗ унӑн юнлӑ аш пек, такам ҫӗр кӑкрине пысӑк, улӑпла ҫӗҫӗпе касса суранлантарнӑ пек туйӑнать. Ҫырма варрипе кукӑрланса ҫул каять, пӗчӗк ҫул, аран-аран палӑрать. Ку ҫулпа чул кӑларма ҫӳрекелеҫҫӗ. Ҫав ҫула пӑхса, Кавӗрле ашшӗ сӑмахне—„Кӗтеснер ҫырми тӑрӑх кӗлтесене турттарса кайма пултараҫҫӗ" тенине аса илчӗ. Тяпук пичче арҫури ҫинчен каласа кӑтартнине аса илчӗ.

Хӗвел хуллен анса ларчӗ. Хӗрлӗ хӗмлӗ хӗвеланӑҫӗ майӗпе шупкалчӗ, сӳнчӗ. Тавралӑх сисӗнкӗсӗр тӗттӗмленет. Сапаланчӑк, унта-кунта таткаланса юлнӑ пӗлӗт татӑкӗсем мал еннелле шӑваҫҫӗ, хӑйсен ушкӑнне хӑваласа ҫитесшӗн васкаса чупнӑ пек туйӑнать. Хура пӗлӗт таткисем хушшинчен янкӑр кӑвак пӗлӗт уҫӑлса юлать те, ҫутӑ ҫӑлтӑрсем курӑнма тытӑнаҫҫӗ.

Кавӗрле вышка ҫинче унталла-кунталла пӑхкаларӗ, фонарь вышка ҫинче ҫутӑ ҫунать, анчах ҫутти аякка ӳкеймест, пӗр ункӑ ҫутӑ анчах курӑнать. Халь пушшех тӗттӗм курӑнать. Кичем пӗччен юлсан. Фонарь ҫуттинче ҫӗрлехи лӗпӗшсем вӗҫкелесе ҫӳреҫҫӗ. Ниҫта ним сасӑ-чӗвӗ илтӗнмест.

Кавӗрле вышка ҫинче кӑшт ларчӗ те йӗри-тавра пӑхкаласа илчӗ. Вара, юман чукмарне хулпуҫҫи ҫине хурса, хуллен вышка ҫинчен анчӗ. Кӑшт итлесе тӑчӗ те утрӗ. Никам та ҫук. Пӗр пӗччен. Ялта хурал чанӗ вуннӑ ҫапрӗ. Пусӑра шӑпӑрт.

Ҫав вӑхӑтра Кӗтеснер ҫырминчен пӗр ҫын хура мӗлкен тухрӗ те, пит хуллен ҫеҫ, куккук пек авӑтса илчӗ. Ӑна хирӗҫ часах

тепĕр сасă çавнашкалах илтĕнчĕ. Пусă енчен çырмаран тухнă çын патне тепĕр çын пычĕ.

— Килтĕр-и эсир? Миçен?—терĕ пусăран пыни.

— Ултă лавпа килтĕмĕр,—терĕ çырмаран тухнă мĕлкĕ.

— Çурçĕрччен икшер хутлама ĕлкĕрес кулать. Хурала килмелле ачана, Кĕтеснер çырми таврашĕнче арçури пур, тесе каласа кăтартрăм. Ачи вара хăлхасене тăратсах итлесе ларчĕ. Паян ĕç тухать. Эсир тийĕр, эпĕ вышка патнерех кайса сыхлам. Ача киле пуçласанах, эпĕ арçури пек пулса хăрататăп ăна. Кĕрĕке таваратăп, мулахай хăлхисене усăнтарса ярса тăхăнатăп та, шăхăрса арçури ташшине яра паратăп. Нумай кирлĕ мар ачапăчана; килне каймасан та, вышка çинчех ларса ирттерĕ. Ну, илсе килĕр лавсене, тийĕр. Эсир ĕçлĕр, эпĕ ташлам,—терĕ те пусăран килнĕ çын, шăппăн кулса илчĕ.

Çапла калаçса татăлса, икĕ çын уйăрăлчĕç. Пĕри кайрĕ çырма тĕпĕпе, тепри, сыхланса, суратсем хыçĕпе вышка еннелле сулăнчĕ.

Çав вăхăтра Кавĕрле вышка патĕнчен Кĕтеснер çырми патнелле пĕр пĕччен утать. Çанталăк паçăрхинчен ытларах уяртнă, сивĕрех пек. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем халĕ йышлăрах, шултăрарах курăнаççĕ, халь суратсем те лайăххăнах курăнаççĕ.

Сасартăк, тулă сурачĕсем хыçĕпе темĕн мĕкĕлтетсе Кавĕрлене хирĕç пыни курăнчĕ.

„Мĕн-ши ку?—тесе, Кавĕрле шартах сикрĕ.

Çав самантрах хăйне хăй: „йытă пуль вăл“,—тесе йăпатрĕ. „Павăл пиччесен пысăк, лапсака çăмлă хура йытă пур, çавă пуль“, —тесе, Кавĕрле ăна шăхăрса чĕнчĕ. Ним сас-чĕвĕ те пулмарĕ.

Хура мĕлкĕ таçта суратсем хыçнелле пулчĕ. Кавĕрле чарăнса пăхса тăчĕ. Аллинчи йывăр чукмарĕпе пеме хатĕрленсе, чукмарне икĕ аллипе хытă тытрĕ.

Ши-и-ши! ши-у-ик!—хытă шăхăрни инçе те мар илтĕнчĕ.

— Кам вăл?—терĕ Кавĕрле, хыттăн çĕрлехи шăплăхра сассине янтратса. Унччен те пулмарĕ, пысăк хура мĕлкĕ, сурат хыçĕнчен Кавĕрле патне сиксе тухса, мĕкĕлтетсе пырать... Урисемпе тапăрт-тапăрт тутарса сиккелесе илет. Пуçĕ çинче майрака пекки лăс-лăс тăвать. Кавĕрле патнелле сиксе пырать. Кавĕрле, пит хăранипе, пĕтĕм вăйĕпе мĕлкĕне чукмарпа яра пачĕ.

— Ай-ай-ай!—тесе хаяррăн йăнăшса ячĕ çын сасси. Çавăнтах мĕлкĕ кайса ўкрĕ. Кавĕрле вĕриленсе кайса, шăла çыртса, мĕлкĕне тата темиçе хут чукмарпа персе илчĕ. Хашкать, чăрсăрланса кайнă.

— Ай, урана хуçрăн! Ай, ан хĕне, тархасшăн, эпĕ ахаль вĕт, —терĕ Тяпук пичче хăй сассипех.

— Мĕншĕн килтĕн эсĕ кунта?—терĕ Кавĕрле çиленсе, хыттăн, сывлăшне çавăрса яраймасăр хашкаса.

— Ахаль, эпĕ сана хăратса пăхас, терĕм. Ай-ай-ай, эсĕ ман урана амантрăн! Ой, утма çук,—терĕ йăнăшса Тяпук. Ури çине тăма хăтланчĕ, тăраймарĕ, йăванса ўкрĕ.

— Ой, пĕтрĕм, пĕтрĕм! Уссăр çинченех чăрсăрланса кўсекпе петĕн эсĕ мана. Ой, ыратать,—йăнăшать Тяпук.

Çав вăхăтра Кĕтеснер çырми енчен тепĕр мĕлкĕ килнине

курчӗ Кавӗрле. Сӑнаса лӑпчӑнса пӑхрӗ те вӑл, ҫулсӑр ҫӗр-тенех лавсем пуссалла кӗнине курах кайрӗ. „Кӗлте вӑрлама киleҫҫӗ",—тавҫӑрса илчӗ вӑл. Тяпука ним шарламасӑр, суратсем хыҫӗпе йӑпшӑнса Кавӗрле лавсем ҫывӑхнелле пырать. Пӑхать:—лавсем чарӑнчӗҫ. Ултӑ лав. Ҫыннисене паллама ҫук. Ҫынсем хӑвӑрт тулӑ сурачӗсене тиеме тытӑнчӗҫ. Кавӗрле те васкаса вышка патнелле чупрӗ. Чупса ҫитрӗ те, вышка ҫине хӑпарса, чан ҫапса ячӗ.

Тан! тан! тан!—вӗҫӗмсӗр, пушар чанӗ пек вышка ҫинче чан сасси илтӗнет. Ялта та сасӑсем илтӗнчӗҫ, йытӑсем вӗрме пуҫларӗҫ. Кӑшт тӑрсан, колхозран виҫӗ юланутлӑ ҫын тата милиционер чуптарса ҫитрӗҫ.

— Мӗн пулнӑ?

— Вӑрӑсем-и?

— Ӑҫта?—тесе кӑшкӑрашса ыйтаҫҫӗ.

— Вӑрӑсем... Ултӑ лав, Кӗтеснер енче!—терӗ Кавӗрле, вышка ҫинчен ҫӗрелле пӑхса.

Юланутсем Кӗтеснер ҫырми еннелле ҫил пек вӗҫтерчӗҫ.

Часах ялтан ҫуран ҫынсем те чупса киле пуҫларӗҫ. Ҫураннисенчен чӑн малтан Кавӗрле ашшӗ хашкаса чупса ҫитрӗ. Мӗн пулнине пӗлсен, вӑл юланутсем хыҫҫӑн чупрӗ. Ҫынсем пухӑннӑҫемӗн пухӑнаҫҫӗ. Пурте Кӗтеснер ҫырми еннелле чупаҫҫӗ. Ҫари-ҫари! Шай-шай! Такам пӑшал персе ячӗ. Кӑшт тӑрсан, ҫынсем кӑшкӑрашни аякра илтӗнме пуҫларӗ.

— Кунта! Кунта!—илтӗнчӗ ферма хуралҫин сасси.

— Тытӑр! Тытӑр! Пӳлсе илӗр!—тет такам, хытӑ кӑшкӑрса. Такам такама хаяррӑн кӑшкӑрса пӑрахрӗ. Ҫари-ҫари! турӗҫ. Вара сасӑсем тата аяккарах кайрӗҫ, хуллентерех илтӗнме пуҫларӗҫ, каярах ним илтӗнми те пулчӗ.

Ҫурҫӗр иртсен, вӑрӑсене тытса тавӑрӑнчӗҫ. Икӗ ҫынна ҫеҫ тытма ӗлкӗрнӗ, ыттисем тарнӑ. Вышка патне колхозниксем нумай пухӑннӑ. Тяпука та унта илсе пырса вырттарнӑ.

— Ну, Тяпук, паллатӑн-и юлташусене?—терӗ милиционер.

— Ҫук, палламастӑп,—терӗ Тяпук тарӑхса.

— Пире Тяпук вӗт... Икӗ хутчен пычӗ пирӗн яла, кӗлте вӑрлама йыхӑрса,—терӗ тытса килнӗ ҫынсенчен пӗри. Хӑйӗн сӑхманӗ хулпуҫҫи ҫинче ҫурӑлнӑ, шурӑ кӗпи курӑнать, куҫӗ-пуҫӗ саланса кайнӑ; хӑравҫӑланса пӑхкалать. Фонарь ҫуттинче пичӗ кӗл пек шурӑ курӑнать. Унӑн ҫамки урлӑ юнлӑ йӗр курӑнать, ҫара пуҫӑн, калаҫнӑ чух сасси чӗтрет. Тяпука тата икӗ ют ҫынна милиционерпа колхозниксем ялсоветне илсе кайрӗҫ.

Кавӗрлепе ашшӗ те килелле утрӗҫ. Иккӗшӗ те вӗсем хуллен утса пыраҫҫӗ. Пулса иртнӗ ӗҫ, вӗсен чӗрисене хавшаклантарса, пӗтӗм шӑмшакка ывӑнтарнӑ. Пуҫ ҫинчи ӗҫе туса пӑрахнӑ, чӗрере те халӗ канлӗ, шӑмшак та канса ыйӑха туртӑнать. Ывӑлӗ, паттӑр пионер пулса, тӑшман муталанине парӑнмасӑр, хӑй умӗнчи ӗҫе тӗрӗс тунӑшӑн Кавӗрле ашшӗ чӗререн савӑнать.

— Маттур, хӑраман эсӗ, ҫапла кирлӗ,—терӗ ашшӗ, ывӑлне ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илсе. Киле тавӑрӑнсан, Кавӗрле ашшӗ ывӑлӗпе арӑмӗ умӗнче мухтанса илчӗ.

— Пулас большевикӑн нимӗнрен те хӑрама юрамасть,—терӗ ашшӗ.

Кавӗрлене паян пулса иртнӗ ӗҫ тӗлӗкри пек туйӑнать.

Тепӗр икӗ кунтан пионерсем хӑйсен отрядӗнче тухакан стена хаҫачӗ ҫинче:

**„МУХТАВ КАВЁРЛЕНЕ!"**

ятлӑ статья кӑларнӑ. Статьяра—кӗлте вӑррисене тытни ҫинчен, вӗсене суда пани ҫинчен тӗплӗн ҫутатса панӑ. Кавӗрлене вӑрӑсене курса тыттарнӑшӑн ырланӑ. Статья ҫак сӑмахсемпе пӗтнӗ:

„...Кавӗрлене хӑй ӗҫне тӗплӗ, вӗҫне ҫитиччченех тӗрӗс тунӑшӑн, класс тӑшманӗ муталанӑ пулин те, колхоз пурлӑхне ҫаратакансене курса тыттарнӑшӑн, колхоз правленийӗ кӑҫалхи тырӑ-пулӑ тухӑҫӗнчен маттур Кавӗрлене велосипед илсе пама йышӑнчӗ".

---

## ТУПМАЛЛИ.


Стр.

**Юмахсем.** Ҫил ачи . . . . . . . 3
Пуппа мужик . . . . . . . 7
Чапаев вилӗмӗ . . . . . . . 8
**К. В. Иванов.** Силпи ялӗнче . . 12
Сарӑ хӗр . . . . . . . . . . 13
**И. А. Крылов.** Хресченпе тарҫи . 14
Квартет . . . . . . . . . . 15
Улакуракпа Тилӗ . . . . . . 16
**А. С. Пушкин.** Пуппа унӑн тарҫи
Балда . . . . . . . . . . . 18
Кӗркунне . . . . . . . . . 21
Хӗлле. Хӗллехи ҫул . . . . . 22
Тӗрме ҫынни . . . . . . . . 23
**И. А. Гончаров.** Обломов тӗлӗкӗ . 24
**С. В. Элкер.** Куланайшӑн . . . . 34
**. Н. Андреев.** Петька дачӑра . . 39
**. П. Чехов.** Ванька . . . . . . 44
**иктор Гюго.** Гаврош . . . . . 49
**Максим Горький.** Архип асаттепе
Ленька . . . . . . . . . . 58
Майӑн пӗрремӗшӗ . . 68
**Н. И. Полоруссов (Шелепи).** Ленин
шухӑшӗ . . . . . . . . . . 75
Ленин. Панулми чечекӗ. Кивӗ
Ӳсел ака туйӗ . . . . . . . 76
Ҫулла . . . . . . . . . . . 78

Стр.

**Бонч-Бруевич.** Хӑрушӑ кун
хыҫҫӑн . . . . . . . . . . 79
**Джамбул Джабаев.** Юрӑҫӑ
сӑмахӗ . . . . . . . . . . 82
Ленинпа Сталин . . . . . 83
**Уйӑп Мишши.** Май юрри . . . 85
Хир кӗвви. Хӗвеллӗ май . . 86
**Александр Алка (Бачков).** Ҫуркунне. Юн . . . . . . . . 87
**Иван Ивник.** Октябрь юрри . . 89
Телей ҫулӗ . . . . . . . . . 90
**Анатри Елкуш.** Сухапуҫпе
трактор . . . . . . . . . 96
**Лебедев-Кумач.** Ҫӗршыв ҫинчен
хывнӑ юрӑ . . . . . . . . —
**Иван Шабанов.** Мухтавлӑх тата
паттӑрлӑх . . . . . . . . 97
**Мих. Грузинцев.** Летчик Самба . 100
**Аркадий Ёҫхӗл** Хӗрлӗ ҫӑлтӑр . . 103
Виҫҫӗн . . . . . . . . . . 104
Пирӗн Конституци . . . . . 105
**С. М. Буденный.** Ҫапӑҫу
эпизочӗсем . . . . . . . . 107
**И. Тюленев.** Дундич . . . . . 113
**М. Д. Трубина.** Арҫури . . . . 116


---


Редактор **А. А. Митрофанова.** Техн. редактор **Н. С. Степанов.**

Уполн. Главлита Чувашской АССР № 1787. Индекс У—1. Тираж 30000 экз.
Об'ем 7,75 печ. л. Колич. зн. в печ. л. 51584. Формат бум. $60 \times 92^{1}/_{16}$

Сдано в набор 9 августа 1939 года. Подписано к печати 3 октября 1939 г.

Типография № 2 Наркомместпрома ЧАССР, г. Алатырь. Заказ № 2194.

Хакĕ 1 т. 65 пус
Цена 1 р. 65 коп.

КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ
ПО ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

*Для 4-го класса*
*начальной школы*

ЧАСТЬ IV

Составлена А. С. ОТАЧКИНЫМ

ГОСИЗДАТ ЧАССР ◆ 1939 ◆ ЧЕБОКСАРЫ